С 42
27750-чув

М. И. СКВОРЦОВ

ВЫРĂСЛА-ЧĂВАШЛА КУҪАРУ ТЕОРИЙĔПЕ ПРАКТИКИ

Вĕренӳ пособийĕ

ШУПАШКАР—1984

Национальная библиотека ЧР
4-027750

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К 81.0
С 412

И. Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалах университечĕ
РСФСР Аслă тата ятарлă вăтам пĕлӳ министерстви

М. И. СКВОРЦОВ

ВЫРĂСЛА-ЧĂВАШЛА КУҪАРУ ТЕОРИЙĔПЕ ПРАКТИКИ

Вĕренӳ пособийĕ

Шупашкар—1984

Печатается по решению Редакционно-издательского совета Чувашского государственного университета им. И. Н. Ульянова

Пособие подготовлено в соответствии с программой и на основе опыта преподавания курса «Теория и практика перевода с русского языка на чувашский» на отделении чувашского языка и литературы университета. В нем излагаются основные теоретические сведения по переводоведению и краткая история перевода в Чувашии, описываются методы и приемы перевода.

Цель пособия — дать понятие о научно-лингвистических основах перевода, привить студентам навыки грамотного перевода общественно-политических, учебных и несложных художественных текстов, что необходимо как в учительской, так и журналистской работе.

Тематический план 1984 г., поз. 1465.

Отв. редактор: докт. филол. наук, профессор *Н. П. ПЕТРОВ.*

ВЕРНО
16 МАР 2017
27750-чув
Чувашская республиканская библиотека им. М. Горького

© Чувашский государственный университет, 1984 г.

УМСĂМАХ

Çĕр çинче пурăнакан çынсем мĕн авалтан хăйсен чĕлхисемпе калаçаççĕ. Истори законĕсене пула кашни йăх-ăрăвăн, каярахпа кашни халăхăн хăйне уйрăм чĕлхе пулса кайнă, харпăр йышĕн çыхăну-хутшăну нушисене тивĕçтерсе, вăл малалла аталаннă, пуянланса пынă.

Тĕрлĕ чĕлхесемпе калаçакан çынсен пĕр-пĕринпе хутшăнмасăр пурăнма ниепле те май килмен. Çавăнпа та ют халăх çыннисене ăнланас ыйту ĕлĕкренех питĕ çивĕч тăнă. Пурнăç ыйтнине тивĕçтерме тăван чĕлхесĕр пуçне кӳршĕсен, ют халăхсен чĕлхисене пĕлекен çынсем кирлĕ пулнă. Çапла вара сĕм-авалах куçаруçă, тăлмач профессийĕ çуралнă.

Вăхăт иртнĕçемĕн куçару ĕçĕ-хĕлĕ сарăлсах пынă. Халăхсем, çĕршывсем пĕр-пĕринпе политика, экономика тата культура çыхăнăвĕсем тытасси кулленхи йăлана кĕнĕ. Çырулăх, литература тата тĕрлĕ наукăсем аталанни тĕнчери хутшăнусене пушшех те вăйлатнă. Тĕрлĕ наука ăнлавĕсен, çĕнĕ япаласен ячĕсене пĕр чĕлхерен тепĕр чĕлхене куçарнипе культура пĕлӳлĕхĕ çĕршывран çĕршыва анлăн сарăлнă, пĕтĕм этемлĕх прогресс çулĕпе хăвăртрах аталанса пынă.

Куçару ĕçĕ пирĕн вăхăтра, наукăпа техника революцийĕн саманинче уйрăмах вăй илчĕ. Çакă вăл тĕнчери çĕршывсем хушшинчи çыхăнусем нихçанхинчен хăвăрт та анлăн аталаннипе, информаци сармалли техника хатĕрĕсен майĕсем нумай ӳснипе, çынсен пĕлӳлĕх шайĕ хăпарнипе çыхăннă.

Чĕлхе ĕмĕрсем хушши хăйне çуратнă-пултарнă халăха хутшăнмалли хатĕр пулнă. Хальхи условисенче чылай чĕлхесен çĕнĕ функци аталанать — вĕсемпе темиçе халăх пĕр-пĕринпе хутшăнма усă курать. Çапла, вырăс, акăлчан, француз, испан, китай чĕлхисем халĕ пĕтĕм тĕнчери чĕлхесем шутланаççĕ, вĕсемпе Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕнче тата тĕнчери ытти пĕрлешӳсемпе пухусенче анлăн усă кураççĕ. Нумай нациллĕ çĕршывсенче вакрах халăхсем хăйсем хушшинче хутшăнма йышлă халăхăн вăйлăрах аталаннă чĕлхине суйласа илеççĕ. Пирĕн çĕршывра нацисем хушшинчи хутшăну хатĕрĕн функцине вырăс чĕлхи ăнăçлăн пурнăçлать.

Ют чĕлхесене вĕренсе пĕлесси, вĕсемпе куллен усă курасси сарăлнă маи юлашки вăхăтра икчĕлхелĕх тата нумайчĕлхелĕх пулăмĕсем вăйлă аталанчĕç. Акă, чăвашсем те нумайăшĕ вырăсла калаçма пĕлеççĕ. Анчах куçару ĕçĕн пĕлтерĕшĕ нимĕн чухлĕ те чакмасть, пачах урăхла, ӳсет çеç. Пĕр енчен, халлĕхе икĕ е темиçе чĕлхепе çăмăллăн çыракан-калаçакан çынсен йышĕ пысăках мар-ха. Иккĕмĕшĕнчен, ют чĕлхесене пурне те вĕренсе пĕлме май çук: ученăйсем шутланă тăрăх, тĕнчере пурĕ виçĕ пине яхăн чĕлхе шутланать. Виççĕмĕшĕнчен, ют чĕлхене вĕренесси шăпах куçарупа çыхăннă. Ахальтен мар ĕнтĕ пирĕн вăхăтра куçару ăстисем вĕрентсе хатĕрлесси вăйлă сарăлса пырать. Нумай çĕршывсенче тăлмачсем хатĕрлекен шкулсемпе институтсем йĕркеленĕ. Куçаруçăсен халĕ хăйсен тĕнчери организацийĕ, ятарлă журналĕсем пур. Куçару ĕçĕн тĕрлĕ ыйтăвĕсемпе çырнă кĕнекесем вуншарăн та çĕршерĕн тухса тăраççĕ. Хальхи вăхăтра куçару ĕçĕн пĕтĕмĕшле калăпăшне шута илсе çитерме май та çук: кĕнекесем куçарса кăларнисĕр пуçне тăлмачсем государствăсем хушшинчи çыхăнусене йĕркелеме пулăшаççĕ, кунсăр пуçне пур çĕршывсенче те миллионшар çын куçару мелĕпе кулленхи хутшăнура усă курать. Пĕрлешнĕ нацисен çутĕçпе культура организацийĕ — ЮНЕСКО тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх, пĕтĕм тĕнчипе илсен, куçарусен хисепĕ çуллен 15—20 процент хушăнса пырать. 1970 çултан пуçласа тĕнчере çуллен 40 пин ытла произведени куçарса кăлараççĕ, кашни кун 100 ытла куçарнă кĕнеке кун курать.

Ют çĕршыв чĕлхисенчен литература произведенийĕсем, наука ĕçĕсем тата ытти текстсем куçарас енĕпе Совет Союзĕ тахçантанпах тĕнчере пĕрремĕш вырăн йышăнса тăрать. Пуринчен ытларах, тăтăшрах куçаракан авторсенчен чи палли — В. И. Ленин. Унăн произведенийĕсене куçарасси тĕнчери вăйлă аталаннă çĕршывсенче кăна мар, тин çеç ирĕке тухнă çĕршывсенче те çултан-çул сарăлса пырать. Илемлĕ литературăна илес пулсан, кунта тĕнчипе паллă классик писательсем В. Шекспир, Ч. Диккенс, Жюль Верн, О. Бальзак, Э. Хемингуэй, А. П. Чехов, Л. Н. Толстой тата ыттисем малта тăраççĕ.

Çырулăх туяннă халăхсенчен нумайăшĕ малтанхи тапхăрта хăйсен литература чĕлхине, унăн тĕрлĕрен стиль мелĕсемпе жанрĕсене куçару пулăшнипе хăвăрт аталантарса пырать. Сăмахран, чăваш литература чĕлхине аталанма вырăс писателĕсен произведенийĕсене, вырăсла çырнă вĕренӳ тата ăслăлăх кĕнекисене, публицистика текстĕсене, законсемпе официаллă документсене чăвашла куçарни нумай пулăшнă. Хăй вăхăтĕнче вырăс литература чĕлхи аталанăвĕнче Европăри чĕлхесенчен куçарни тарăн йĕр хăварнă.

Икчелхелех аталаннаçемĕн, наци шкулĕсенче верентĕ чĕлхи вырăнне ытларах вырăс чĕлхипе усă курнă май куçару пĕтĕмĕшле вĕрентӳпе çутĕçĕн тĕп элеменчĕсенчен пĕри пулса пырать. Тăван чĕлхепе калаçса ӳснĕ ача пирвайхи хут вырăс кĕнеки алла тытать-и, учитель урокра йывăр сăмаха е пуплеве чăвашла ăнлантарса парать-и, çамрăк интернационалистсем Венгрири тусĕсем патне çыру çыраççĕ-и, студент вырăсла е нимĕçле çырнă наука ĕçне тĕпчет-и — пур чухне те ют чĕлхе пĕлĕвĕ, куçару хăнăхăвĕ кирлĕ.

Пирĕн çĕршывра куçару ĕçĕн обществăлла-политикăлла пĕлтерĕшĕ уйрăмах пысăк. Коммунизм строительствин партин партнă задачисене пурнăçлама пĕтĕм халăх культурипе политикăлла ăнланулăхне çӳлĕ шая çĕклемелле, çакна валли вара, В. И. Ленин каларĕш, этемлĕх ку таранччен хайланă пĕтĕм ăстăн пуянлăхне пуçа хывмалла. Ку вăл, паллах, куçарусăр пулмасть.

Çапла ĕнтĕ, куçару ĕçĕн пĕлтерĕшĕ пысăк, унăн калăпашĕ ӳссех пырать. Çавна май куçару практикине тĕпчесси, куçаруçăсем кулленхи ĕçре пухнă пуян опыта пĕтĕмлетесси, унăн наука никĕсĕсене хывасси çивĕч задача пулса тăчĕ. Юлашки 2—3 вунăçуллăхра, пирĕн куç умĕнчех темелле, чĕлхе пĕлĕвĕн картинче çĕнĕ наука дисциплини чăмăртанать, аталанса вăй илет. Куçару наукине вырăсла переводоведение, лингвистика перевода, теория перевода е транслятология теççĕ. Чăвашла ăна **куçару пĕлĕвĕ** (танл.: языкознание, языковедение — чĕлхе пĕлĕвĕ) е **куçару теорийĕ** тесен юрăхлă пулмалла.

Çĕнĕ дисциплинăн тытăмĕ самаях кăткăс. Чи малтан вăл куçару ĕçĕнче кирек мĕнле чĕлхерен урăх чĕлхесене куçарнă чухне палăракан пĕтĕмĕшле закономерноçсене тишкерет. Анчах куçару валли илнĕ кашни икĕ чĕлхе (калăпăр, вырăс тата чăваш чĕлхи) уйрăмлăхĕсене кура, татса памалли задачăсем тата куçарăвăн конкретлă меслечĕсем кашнинчех хăйне евĕрлĕ пулаççĕ. Куçару уйрăмлăхĕ произведени жанрĕнчен те нумай килет. Пирĕн курсăн тĕллевне асра тытса, ăна «Вырăсла-чăвашла куçару теорийĕпе практики» тесе ят парсан вырнаçуллă пулать. Пĕр енчен, кунта куçару пĕлĕвĕн пĕтĕмĕшле ыйтăвĕсене кĕскен пăхса тухма кирли курăнать. Тепĕр енчен, практика задачисем — вырăсларан чăвашла тата чăвашларан вырăсла куçарнă чухне тĕл пулакан йывăрлăхсем тĕп вырăнта пулмалли палăрать.

Икĕ чĕлхен сасă составĕнчи, грамматика тытăмĕнчи пĕрешкеллĕхсемпе ăрасналăхĕсене тĕплĕн тишкересси вăл ятарлă предметăн — «Вырăс тата чăваш чĕлхисен танлаштаруллă грамматикин» задачи. Çĕнĕ вĕренӳ планĕ тăрăх пирĕн уйрăмри студентсем ку предмета вĕренме тивĕç. Çавăнпа та кунта эпир куçару мелĕсемпе тӳррĕнех çыхăннă лексика-

па фразеологи уйрăмлăхĕсене çеç пăхса тухатпăр. Куçару пĕлĕвĕ çавăн пекех тăван чĕлхепе литература уйрăмĕнчи вĕренӳ планĕн ытти предмечĕсемпе тата филологи аспекчĕсемпе тачă çыхăнса тăрать. Ку шута чĕлхе пĕлĕвĕн дисциплинисенчен «Чăваш литература чĕлхин историйĕ», «Чăваш чĕлхин стилистики», «Чăваш лексикографийĕ», «Тĕрĕк чĕлхисен танлаштарулли грамматики», «Тăван чĕлхене шкулта вĕрентмелли методика», «Пуплев культурин никĕсĕсем» кĕреççĕ. Илемлĕ литература куçарăвĕн ыйтăвĕсем литература пĕлĕвĕн нумай дисциплинисемпе тӳррĕнех çыхăнса тăраççĕ.

Чăваш чĕлхе пĕлĕвĕнче куçару теорийĕн тата методикин ыйтăвĕсене пĕтĕмĕшпе тĕплĕн çутатса паракан ĕçсем çук-ха. Анчах литература критикĕсен, чĕлхе тĕпчевçисен кĕнекисемпе статйисенче куçару ĕçĕн ыйтăвĕсене хускатни сахал мар. Ытларах чухне калаçу унта куçарнă текстсенчи уйрăм йăнăшсем, чĕлхе кăлтăкĕсем çинчен пырать, анчах принципла ыйтусене пăхса тухни те тĕл пулать.

Темиçе çул каялла, Чăваш университечен тăван чĕлхепе литература уйрăмĕнче «Куçару теорийĕпе практики» предмета вĕрентме пуçласан, унăн тытăмĕпе содержанине палăртма, программине хатĕрлеме пире Мускавра тухнă кĕнекесемпе усă курни, вырăсларан чăвашла куçарнă тĕрлĕ жанрлă текстсене тишкерни нумай пулăшрĕ. Методика ыйтăвĕсене, тăлмач ĕçĕн меслечĕсене пăхса тухнă чухне автор хăй нумай çул хушши хаçат-журнал, публицистика текстĕсене куçарса пухнă опытпа усă курнă. Паллах, кĕнекере малалла ĕçлемелли, тĕпчемелли, лайăхлатмалли сахал мар.

Кĕнеке тĕллевĕ — студентсене вĕренӳре çеç мар, çавăн пекех наука тĕпчевĕнче те пулăшасси. Чăваш филологийĕнче куçару теорине аталантарас тесен, халиччен куçарнă нумай текстсене оригиналпа танлаштарса тишкермелле, ăста тăлмачсен опытне вĕренмелле, пĕтĕмлетмелле, вырăс тата чăваш чĕлхин танлаштарулли типологийĕпе стилистикине тĕпчемелле. Хамăрăн куçару историне тĕпчесси — хăйне уйрăм пысăк ыйту. Кĕнеке вĕçĕнчи темăсен списокĕ студентсене харпăр хăй тĕпчевĕ валли тема суйласа илме пулăшĕ.

Пособи тытăмĕ çирĕплетнĕ программăпа килĕшсе тăрать. Кĕнеке калăпăшĕ программăри пур ыйтусене те тĕплĕн çутатма май памасть. Çавăнпа та куçару теорийĕпе историйĕн ыйтăвĕсене кĕскен çеç пăхса тухнă. Теори ыйтăвĕсемпе интересленекенсем хăйсене кирлĕ материала библиографи списокĕнче кăтартнă кĕнекесенче тупма пултараççĕ.

Çĕнĕ дисциплинăн, паллах, хăйĕн ăнлавĕсем, вĕсене палăртакан сăмахсем — терминсем пур. Пособие хатĕрленĕ май тивĕçлĕ терминсем шыраса тупма е çĕнĕрен тума, вĕсене пĕтĕмĕшле куçару теорийĕн тата чăваш чĕлхе пĕлĕвĕн

терминологийёпе килёштерсе йёркелеме тиврё. Терминсен списокне кёнеке çумне хушса панă. Пособин хушăм пайёнче çавăн пекех докладсемпе рефератсен тематики тата методика ăнлантарăвёсем, пирвайхи чăваш куçарăвёсен тёслёхёсем пур. Ёлёкхи куçарусен графикине сыхласа хăвармă тăрăшпă, хăшпёр паллăсене çеç улăштарпă е катертнё.

I СЫПĂК

КУÇАРУПА УНĂН ТЕОРИЙЕН КЕСКЕ ИСТОРИЙЁ

1. Куçару Хёвеланăç Европăра тата Российăра аталанни

Куллен-кун куçару ёçне туса пынă май кашни тăлмач (тепёр чухне ун çинчен шухăшламасăрах) мёнле те пулин меслетсемпе усă курса, паллă принципсене пăхăнса ёçлет. Пурăпа киле тăлмачсем хăйсем, каярахпа чёлхеçёсем ку меслетсемпе принципсене ятарласа тишкереççё, пётёмлетсе ăнлантараççё, куçарусенчи çитменлёхсене, йăнăшсене кăтартаççё, вёсен сăлтавёсене шыраса тупма тăрăшаççё. Çакă вăл куçару критикин, унтан куçару теорийён пуçламăшё пулать те ентё.

Куçару меслечёсемпе принципёсем тёрлё саманара, тёрлё авторсен пёр пек пулман. Чылай чухне, пёр вăхăтра ёçленё пулин те, тăлмачсен ку ыйтупа пёр чёлхе тупăнман. Куçару ёçёнче икё туртăм е принцип ёлёкреппех палăрнă, вёсем пёр-пёрне тёпренех хирёçлеççё. Пёрремёш принцип — оригиналăн текстне сăмахсерен, тӳртен куçарасси, куçарура ют текстăн чёлхе тытăмне упрама тăрăшасси. Кун пек чухне, чăнах та, форма пёрешкеллёхё пулать, анчах шухăш, пёлтерёш енё чылай улшăнать, иксёлет, тата куçару чёлхин нормисем пăсăлаççё, текст илемлёхёпе витёмлёхё сёвёрёлет. Иккёмёш принцип — оригиналăн шухăш тёввине тата кăмăлтуйăм, модаллёх сёмёсене мала хурса, чёлхе формине ирёклён улăштарасси, ăна куçару чёлхин нормисемпе законёсене пăхăнтарасси. Пёрремёшне **тӳртен** е **сăмахсерен куçару** (вырăсла: буквальный перевод), иккёмёшне **ирёклё куçару** (вольный перевод) теме пулать.

Иртнё вăхăтра тӳртен куçару меслечё е тӳртенлёх, буквализм тён кёнекисене куçарнă чухне ытларах тёл пулнă. Тён кёнекисем, сăмахран, христиансен Библийё, мусульмансен Кораннё т. ыт. те çеттуй, «таса» япаласем шутланнă, тăлмачсем «турă сăмахне» кăшт та пулин улăштарма, пăсма хăранă, çавăнпа сăмахран сăмах куçарма тăрăшнă. Ирёклё куçару меслечёпе тёнпе сыхăнман текстсене, илемлё литература произведенийёсене, уйрăмах поэзие куçарнă чухне усă курнă.

Куçарури çак икĕ туртăм хире-хирĕçлехĕ Возрождени саманинче уйрăмах хытă палăрнă: вăтам ĕмĕрсенчи тĕн тĕшмĕшлĕхĕпе догматизма парăнтарса, ун чухне ирĕклĕ куçару вăй илсе аталаннă. Сăмахран, XVII—XVIII ĕмĕрсенче Францире тăлмачсем ют авторсен текстĕсене пĕтĕмпех «французлатса» куçарнă: геройсен ячĕсене, йăласене, тумтирĕ таранах хăйсем майлă туса кăтартнă. Çавăнпа оригиналăн наци уйрăмлăхĕсем те, авторăн стиль хăйевĕрлĕхĕ те çухалнă.

XIX ĕмĕр пуçламăшĕнче оригиналсен харпăр çĕршывĕпе сыхăннă вырăнти уйрăмлăхĕсене, нацилле сăн-сăпачĕпе колоритне сыхласа хăварса куçармалла, текен принцип вăй илет. Ку шухăша тĕнче культуринче тарăн йĕр хăварнă писательсем: Германире — Шиллер, Гете, Шлегель, Францире—Шатобриан, Виньи т. ыт. те хăйсен творчествинче пурнăçа кĕртеççĕ. Ирĕклĕ куçарупа е тӳртен куçарупа танлаштарсан, кун пек куçарасси нумай йывăртарах. Çакна туйса, хăшпĕр писательсем тата чĕлхеçĕсем илемлĕ произведени содержанийĕпе формине пĕтĕмпех тĕп-тĕрĕс куçарма май çукки çинчен каласа пуçланă. Акă, нимĕçсен аслă ученăйĕ В. Гумбольдт (вăл авалхи антик поэтсене нумай куçарнă) çапла çырнă: «Кирек мĕнле куçару мана кĕретех пурнăçланми задачăна татса пама хăтланнăн туйăнать. Мĕншĕн тесен тăлмач, мĕнле пулсан та, шыв айĕнчи çак икĕ чултан пĕрине çапăнса арканатех: куçармалли текстран пăрăнмасан, вăл харпăр халăхĕн шухăш-туйăмĕпе чĕлхине шырлăх кӳрет, харпăр халăхĕн уйрăмлăхĕсене мала хурсан, текста пăсать. Икĕ мелĕ хушшинче теменле вăтам мел тупма йывăр кăна та мар — ун пек тума пачах май çук»[1].

Ку вăл — идеализм идейисем çинче никĕсленекен куçарăнмаслăх концепцийĕн палăрăмĕ. Куçарăнаслăх (переводимость) тата куçарăнмаслăх (непереводимость) ыйтăвĕ куçару теорийĕн малашнехи пĕтĕм аталанăвĕнче тĕп вырăн йышăнса тăрать.

Российăна илес пулсан, кунта та çак ыйтусем таврах тавлашнине, асăннă икĕ принципран пĕрине пăхăнса ĕçленине курма пулать: пĕрисем оригинал формине çаплах калăпланă, теприсем шухăша ирĕклĕн каласа парассишĕн тăнă. Акă, Державин чаплă антик поэт Гораций сăввисене куçарнă чух çапла сăмахсемпе усă курать: *горшок щей, Петров день, устрицы, рагу* т. ыт. те. Урăхла каласан, икĕ пин çула яхăн ĕлĕкрех Римра пулнă событисене пĕтĕмпех «вырăслатать». Аста куçаруçă шутланнă Жуковский поэт та нимĕç поэчĕсен балладисене куçарнă чухне унти ĕçсем Российăра пулнă пек туса кăтартать. Унашкал меслет тĕллевĕ — вулакана произ-

[1] Федоров А. В. Основы общей теории перевода. Лингвистические проблемы. 4-е изд., перер. и доп. М.: Высш. школа, 1983, с. 31.

ведени «ют» пулнине систермесси. Ку ĕнтĕ тӳртен куçарăва, буквализма хирĕç туртăм палăрăмĕ пулнă.

Тен, ку принцип хăйне тӳрре кăларнă пулĕ? Çук, оригинала ытлашши ирĕклĕн, «хамăрлатса» улăштарни, килĕшменнине, ют пек туйăннине кăлара-кăлара пăрахни куçарăва хакран кăларать.

Куçару ĕçĕн практикине те, унăн теори никĕсĕсене те А. С. Пушкин нумай пуянлатнă. Вăл Вольтер, Гораций, Мицкевич произведенийĕсене уйрăмах нумай куçарнă. Пушкин пысăк поэтсен произведенийĕсенчи хăйне евĕрлĕ уйрăмлăхсене упраса хăварма тимленĕ. «Вырăслатса» куçарма тăрăшнине, çавăн пекех тӳртен куçару меслетне те вăл йышăнман. «Сăмахсерен куçарни, — тесе çырнă Пушкин, — нихăçан та тĕрĕс пулма пултараймасть. Кашни чĕлхен хăйне евĕрлĕ çаврăнăшсем, çирĕпленнĕ риторика çаврăмĕсем, хăнăхнă пуплевĕсем пур, вĕсене урăх чĕлхене çавнашкал сăмахсемпех куçарма май килмест. Илер-ха тĕслĕхшĕн çакнашкал пуплевсене: Comment vous portez-vous? How'do you do? Вĕсене вырăсла сăмахран сăмаха куçарса пăхăр-ха»[2].

Пушкин тĕслĕхĕсене ăнлантарса парар. Иккĕшĕ те пĕрпĕрне саламланă чухне каланисем. Пĕрремĕшĕ — французла пуплев, чăвашла «Сывлăхăр мĕнле Сирĕн?», «Мĕнле пурăнатăр?» майлă куçарăнма пултарать. Тӳртен куçарас пулсан вара «Эсир хăвăра мĕнле йăтса çӳретĕр?» темелле пулĕччĕ (вырăсла тĕрĕс куçару: «Как Вы себя чувствуете?», тӳртен куçару: «Как Вы себя носите?»). Иккĕмĕшĕ — акăлчанла пуплев, пĕлтерĕшĕ çавах, тӳртен куçарсан вара сăмах купи çеç пулать: «Эсир мĕнле тума тăватăр?» (выр.: «Как Вы делаете делать?»).

Анчах ку вăл Пушкин илемлĕ текстсене куçарма май çук тенине пĕлтермест: аслă поэт буквализм мелĕ юрăхсăрри çинчен çеç калать.

Пушкин генийĕн тĕслĕхĕпе, унăн пултарулăхĕн витĕмĕпе XIX ĕмĕрте Российăра илемлĕ куçару çӳлĕ шая çĕкленнĕ. Вăл ĕмĕрти ăста тăлмачсенчен чи малтан Плещеев, Курочкин, Минаев, А. К. Толстой, Фет, Майков ячĕсене асăнас пулать. Проза куçарăвĕнче Иринарх Введенский тата Вейнберг тăлмачсем уйрăмах палăрнă. Куçару ĕçне Тургенев та активлă хутшăннă.

Куçару критикипе теорийĕн аталанăвĕнче вырăссен чаплă революционер-демократĕсем Белинский, Чернышевский, Добролюбов, Писарев паллă вырăн йышăннă. Куçарăвăн культура аталанăвĕнчи пысăк пĕлтерĕшне палăртса, вĕсем произведенисен шухăш тĕввине, содержанине упраса хăварасси-

[2] Федоров А. В. Асăннă ĕç, 47 с.

шĕн, çав вăхăтрах унăн чĕлхе формин, сăнарлăх системин нацилле хăйевĕрлĕхне вырăсла куçарса кăтартассишĕн тăнă.

Куçару ыйтăвĕсем марксизм-ленинизм классикĕсен ĕçĕхĕлĕнче пысăк вырăн йышăнаççĕ. К. Маркс, Ф. Энгельс нумай чĕлхе пĕлнĕ, вĕсемпе анлăн усă курнă. В. И. Ленин хăй те куçару ĕçне активлă хутшăннă, марксизм литературине куçарнисене те тишкернĕ. Марксизм-ленинизм классикĕсен куçару ĕçне тата принципĕсене тĕпчени общество-политика тата философи текстĕсене куçарас ĕçĕн меслечĕсене, çĕнĕ терминсем тумалли тĕрĕс мелсене лайăхрах ăнланма пулăшать.

Совет тапхăрĕнчи куçару ĕçĕн историйĕ чи малтанах А. М. Горький ячĕпе çыхăннă. Вăл пуçарнипе 1919 çулта «Тĕнчери литература» издательство йĕркеленĕ, куçару ĕçне чи лайăх писательсене хутшăнтарнă. Хĕвеланăçĕнчи писательсен произведенийĕсемпе пĕрлех хамăр çĕршыври халăхсен литература произведенийĕсене те вырăсла йышлăн куçарса кăларма пуçланă.

Совет çĕршывĕнчи нумай-нумай халăхсен культури, литератури, шкул ĕçĕ, пичет хăвăрт аталаннă май общество-политика, наукăпа техника, вĕренӳ текстĕсем куçарасси анлăн сарăлнă. Куçару ĕçĕ культура революцийĕн хăватлă хĕçпăшалĕ пулса тăнă. Куçарăва пула ĕлĕк тĕттĕмлĕхре пурăннă вак халăхсем тĕнчери культурăн чаплă çитĕнĕвĕсемпе хăйсен чĕлхи урлă паллашаççĕ. Тепĕр енчен, нацилле литературăсен çитĕнĕвĕсем пĕтĕм тĕнче умне тухса тăраççĕ. Куçару практикипе пĕрлех, уйрăмах юлашки вунăçуллăхсенче, ăна теори енчен, чĕлхе пĕлĕвĕн паянхи шайĕнчен тишкерсе, çак ĕçри закономерноçсене тупса палăртасси пысăк вырăн йышăнать[3].

2. Чăваш çĕршывĕнче куçару пуçланса аталанни

Вырăсларан чăвашла, чăвашларан вырăсла куçарас ĕç Чăваш çĕршывĕ XVI ĕмĕр варринче Россия патшалăхĕ çумне пĕрлешсенех пуçланнă темелле. Тытăм учрежденийĕсенче, чиркӳ-мăнастирсенче, суту-илӳ таврашĕнче вырăнти халăх çыннисемпе куçарусăр хутшăнма май килмен. Уес, вулăс кантурĕсенче тăлмачсем ун чухнех пулни паллă. XVI—XVII ĕмĕрсенче мăнастир шкулĕсемпе крешĕн шкулĕсенче, чăваш халăхне христиан тĕнне кĕртес тĕллевпе, чăваш ачисенчен миссионерсем, пупсем вĕрентсе хатĕрленĕ, вĕсен «турă сăмахне» тăван чĕлхепе, урăхла каласан, вырăсларан е авалхи славян чĕлхинчен чăвашла куçарса ăнлантармалла пулнă. Анчах вăл тапхăрти куçару ĕçĕн курăмлă йĕрĕсем сыхланса юлман.

[3] Тĕплĕнрех çакăнта вуласа пĕлме пулать: Федоров А. В. Асăннă ĕç, 24—122 с.; Крупнов В. Н. В творческой лаборатории переводчика: Очерки по профессиональному переводу. М.: Междунар. отношения, 1976, с. 12—36; Миньяр-Белоручев Р. К. Общая теория перевода и устный перевод. М.: Воениздат, 1980, с. 5—27.

XVIII ĕмĕр пуçламăшĕнче Российăра наука тĕпчевĕсем анлă сарăлаççĕ, çĕршывăн вăтаçĕрти тата тухăçри пайĕсенче пурăнакан халăхсен чĕлхисене, йăли-йĕркине тишкересси пуçланать, словарьсем пухса хатĕрлеме тытăнаççĕ. Словарьсене вырăс е нимĕç чĕлхипе усă куракан авторсем хатĕрленĕ, çавăнпа та вырăнти чĕлхесен сăмахĕсене ялан куçарса ăнлантарнă е вырăсла каланă ăнлава вырăнти халăх чĕлхисене куçарнă.

Çапла майпах пирĕн çырулла куçару та уйрăм сăмахсене куçарса словарьсене кĕртнинчен пуçланнă. Кунашкал словарьсем XVIII ĕмĕрте чылай пулнă. Чăваш сăмахĕсен пирвайхи ушкăнĕ Ф. И. Страленберг ĕçĕнче пичетленсе тухать (1730). Çав ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенчех Г. Миллер тĕпчевçĕ, чăваш сăмахĕсене çырса илнисĕр пуçне, «Отче наш» кĕлле Хусанти тăлмачсене чăвашла куçарттарса çырнă. Ăна нимĕçлерен сăмахран сăмах куçарнă, çавăнпа та куçару пачах ăнланмалла мар пулса тухнă. Куçарнă текста вырăсла оригиналпа танлаштарса пăхар-ха.

Чăвашла:

Атей, хамерна хош пюллу сине, сан ят аснатоб, киллес сан шахер, сан ирек лэплэ пюллу сине и сир сине, сукру пери бар мана сайрем кон, хвар мана хасйэт перн, лэплэ абир хваратебер перн хасйэт син сине; ан изе кай... мана шайтанран.

Вырăсла:

Отче наш, иже еси на небесех, да святится имя твое, да приидет царствие твое, да будет воля твоя яко на небеси и на земли. Хлеб наш насущный даждь нам днесь. И остави нам долги наша, якоже и мы оставляем должникам нашим. И не введи нас во искушение, но избави нас от лукавого.

Калас пулать, ку вăл хăйне евĕрлĕ наука эксперименче пулнă, тĕпчевçĕ текст ăнланмалла пултăр тесе тăрăшман та пулмалла. Тепĕр енчен, ĕçне тăвакан тăлмачăн та пĕлӳ-хăнăху пулман, паллах.

Çав кĕллех Чулхулари тĕн семинарийĕн учителĕ Петр Талиев та куçарнă. Акă унăн тексчĕ:

Аття-тора, пюлють синчи, санын яда тудух чондан азынма пиря бар; киляс суд сяндалак рада пиря анбрах; пиря борнмалых тудух сюкур тувар бар; казяр пирен силых сане, абер де пор син зане пиря озал тунажан чондан казярабыр, анбар пиря ирек силих тувма; осра пиря, шойтан озал тувасран и озал шокш барасран.

XVIII ĕмĕрĕн 80—90-мĕш çулĕсенче Чулхулари тĕн семинарийĕнче чиркӳ-кĕлĕ кĕнекисене чăвашла куçарас ĕç пуçланать. Ку ĕçе хутшăнакансенчен Ермей Рожанский, Григорий Рожанский, Иван Русановский, Петр Талиев ячĕсем паллă. Анчах куçарнă текстсен ытларахăшĕ пичетленмесĕр юлнă. 1788 çулта куçарнă кĕске катихизис кăна 1800 çулта Питĕрте пичетленсе тухнă.

1803 çулта Хусанта кĕске катихизиса тепĕр хут куçараççĕ те Мускавра пичетлесе кăлараççĕ. Унта «Отче наш» кĕллĕн чăвашла çĕнĕ вариантĕ пур:

Аття пирин, хуж сюльди сюд сяндалыкра борнадын: санан ят асла болдыр, килдыр санын пыгызь, санын ирик болдыр пюльть синче сирь синче де, сюкур бар пиря йумурнеда: хувар пиря пирин барым зане, епле абирь казярасыпыр хамыр барам зане, осра пиря олдавран, шойтан дан да осра пиря.

1809 çулта Мускавра чиркӳ кĕллисемпе исповедь кĕнеки чăвашла çапăнса тухнă. Ана пайăррăн кам куçарнине кăтартман, анчах куçарăвне Чулхуларан тăратнă пирки ăна унти семинари тăлмачĕсен ушкăнĕ хатĕрленĕ тесе шутлама пулать.

1820 çулта Мускаврах «Слово о воспитании детей» ятлă текст çапăнса тухнă, тăлмачĕ Етĕрне уесĕнчи Чемей пупĕ А. Ф. Алмазов пулнă. Çав çултах Хусанта тăватевангелие (вырăсла четвероевангелие) чăвашла куçарса кăларнă. Ку вăл — чăваш литература чĕлхи аталанăвĕнчи малтанхи тапхăрта тунă палла утăм. Кĕнеке калăпăшĕ те (514 страница), ăна питĕ хăвăрт — çулталăк хушшинче куçарни те, куçару ĕçне тăлмачсен пысăк ушкăнĕ (чăваш пупĕсем) хутшăнни те вăл вăхăталла вырăсларан чăвашла куçарас ĕç самаях аталаннине кăтартать. Кĕнекене П. Талиев редакцилени те куçару пахалăхне ӳстернех пулмалла.

Çав тапхăрта куçарса кăларнă текстсенчен тата «Начатки христианского учения или краткая священная история и краткий катихизис» ятлă кĕнекене палăртмалла. Ана В. П. Вишневский куçарнă, кĕнеке 1832 çулта кун курнă.

И. Я. Яковлев ятарласа чăваш алфавичĕ хайласа çĕнĕ çырулăх пуçласа яриччен чăвашла пурĕ те 21 кĕнеке çеç пичетленнĕ, вăл шутран 15-ĕшĕ—тĕн кĕнекисем. Кунсăр пуçне тĕрлĕ кĕнекесенче чăвашла куçарнă текстсем тухкаланă[4].

Чăваш çырулăхĕн Яковлевченхи тапхăрĕнче куçару ĕçне лайăхлатма Н. И. Золотницкий нумай вăй хунă. Вăл куçарнă текстсен содержанине, шухăш уçăмлăхне лайăхлатма уйрăмах тимленĕ. Хусан вĕренӳ округĕнчи чăваш шкулĕсен инспекторĕ пулнă май, вăл вĕсем валли учительсем ытларах вĕрентсе кăларма тăрăшнă. Хусанти миссионерсен шкулĕнче (вăл приют ятлă пулнă) Золотницкий вĕренекенсене куçару ĕçне хăнăхтарнă. Приютра вĕреннĕ М. Дмитриев, В. Васильев, Г. Филиппов учительсем вырăсларан тата тутарларан тĕн кĕнекисем куçарнă. Золотницкий кăтартса пынипе вĕсем куçару чĕлхине самаях лайăхлатнă. Çакна тума чи малтанах чăваш пуплевĕсенчи сăмах йĕркине, чăвашла синтаксис моделĕсене

[4] Егоров В. Г. Введение в изучение чувашского языка. М.: Центриздат, 1930, с. 152—159; Петров Н. П. Чăваш литература чĕлхин историйĕ. Яковлевченхи тапхăр: Вĕренӳ пособийĕ. Шупашкар, 1978, 74—87 с.

тимлĕрех уяни пулăшнă. Золотницкий текстсене сăмахсерен куçарнине татăклăн сивленĕ. Чăвашла куçарнă кĕнекесен чĕлхе çитменлĕхĕсене палăртса, вăл çапла çырнă: «Ĕненсемĕр, шăпах сăмахсен йĕркине чăваш синтаксисĕн законĕсене пăхăнтарман пирки, урăхла каласан, вырăсларан сăмахсерен куçарнă пирки, чиркӳсенче чăвашла вĕрентсе каланисене тата «Кон святой борнызинь, али хорав идю сине: епле ман святой борнас?» йышши куçарнă кĕнекесене чăвашсем пачах ăнланмаççĕ. Ку таранччен пĕр чăваш та мана çак кĕнекен ятне те пулин вырăсла куçарса е чăвашла сăмахсемпе ăнлантарса пама пултараймарĕ»[5].

Икĕ чĕлхери сăмах йĕркин уйрăмлăхне ĕнентерме Золотницкий ятарласа тĕслĕх илсе кăтартать. Чăвашла пуплеве сăмахсерен вырăсла куçарса кайсан, пачах мелсĕр пулса тухни кĕретех курăнать:

Çĕрпӳ хулине лаша илме каяс тесе укçа кивçен илтĕм.
в Цивильск город лошадь купить идти говоря деньги взаем взял.

Чăваш пуплевне урăхла йĕркепе — вĕçĕнчен пуçласа куçарсан, вырăсла чип-чиперех пулса тухать:

-ĕм ил-т- кивçен укçа тесе каяс илме лаша
Я взял взаем денег, чтобы отправиться для покупки лошади
хулине Çĕрпӳ.
в город Цивильск.

Чĕрĕ калаçу виçине тытса пыни куçарнă кĕнекесене ăнланмалла тума май панă. Тепĕр енчен, чăвашсен ытларах пайĕ ăнланакан сăмахсемпе тата грамматика формисемпе, фонетика вариантĕсемпе усă курни тин çуралакан литература чĕлхин нормисене хывма пулăшнă.

Хусанти миссионерсен приютĕнче Золотницкий патĕнче вĕреннĕ А. И. Добролюбов куçару мелĕпе усă курса хăйне евĕрлĕ пособи хатĕрленĕ. Унăн тĕллевĕ — чăваш чĕлхине вĕренес текенсене пулăшасси. Унта историпе, тĕн вĕрентĕвĕпе çыхăннă чăвашла текстсене тата халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене вырăсла куçарса панă. Куçарасса икĕ тĕрлĕ куçарнă: малтан сăмахсерен, кайран вара литература чĕлхи нормисемпе. Чăвашла текстăн кашни сăмахне пĕлтерĕш, фонетикăпа графика тата грамматика, чылай чухне этимологи енчен тишкерсе тухнă. Золотницкий, хăй кĕнеке редакторĕ пулнă май, чĕлхе факчĕсене наука тĕлĕшĕнчен тивĕçлĕ шайра ăнлантарма пулăшни сисĕнет.

Çак кĕнеке пуçламăшĕнчи «Христос-тора кумульжын Булгар-холыньчэ хорлых корза вильне сьын, Авраамий ятлы-

[5] Золотницкий Н. И. Заметки для ознакомления с чувашским наречием. Казань, 1871, с. 5.

скер, борнызе» («Житие святого Авраамия, мученика булгарского») ятлă текстăн сыпăкĕсене (чăвашлине тата вырăсла куçарнине), çавăн пекех тишкерӳ тĕслĕхĕсене илсе кăтартăпăр. Кĕнеке авторĕ ăна Григорий Филиппов (çав миссионерсен шкулĕнче вĕренекенех) вăтаçĕр чăвашсен калаçăвĕпе куçарнине палăртса хăварнă.

Чăвашла куçару тексчĕ:

Булгарзам авал чох тэмь тӳсьлэ йыллынэ тытса борнатьчесь, Арап ятлы сьынзамба сода туза, вузэнь йыллынэ перьдак пильгелетьчесь. Ондан вара Булгар патшы, Алмас ятлыскер, 921 сьолда, хойбаньчы сьынзанэ Арап-патшы-батьнэ кайдарза она таргасланы: Магомет вирентьне ху тирьгэне йыллана Булгарзанэ бильдермэшкен вирень-бада ху-бадырдан чиберь выренне сьынзане яр — дэзэ. Сявын-бэкки сьынзам Булгархолынэ бырзассын, порь Булгар-халых Магомет йыллынэ тирьгэмэ посьланы. Ондан кайран Тодарзам, иньчэрэнь вурсьса бырзассын Булгарзанэ сьиньзэ, вузэнь асла холынэ хорах-посса сьондарза пидэрьзэ, конда борнма йольчесь, Булгар халыхпа перьлэ хотшша борнза Болгар чильгибэ каласьма, вузэнь йыллыбэ порнма тапратресь: Булгар халыгын ячь пьтьсэ кайны, вузэнь чильги Тодар чильги — дэзэ, вузэнь йыллы Тодар йыллы — дэзэ каламаллы полны.

Вырăсла сăмахсерен куçарни:

Булгары в былое время неизвестно какого рода веру держа живут-бывало, с Арабами по имени людьми торговлю делая, их веру не много по частям узнают-бывало. После того Булгарский царь, Алмас по имени, в 921-м году, сущих при нем самом людей к арабскому царю заставив идти его просил: Магомет(ом) наученную ты сам (тобою) соблюдаемую веру Булгар узнать заставить-чтобы, к нам от сущих при тебе самом хорошо ученых людей пришли — говоря. Подобные тем люди в Булгар город прибыли когда, весь булгарский народ Магометову веру соблюдать начал. После Татары издалека воюя пришли-когда, Булгар победивши (на) ихний главный город грабеж наложивши, гореть заставивши уничтоживши, здесь жить остались, с Булгарским народом вместе смешавшись живя, булгарским языком разговаривать, их верою жить начали: булгарского народа имя пропало, что *(дэзэ)* ихний язык — татарский язык, что ихняя вера — татарская вера говориться стало.

Вырăсла литература чĕлхипе куçарни:

Неизвестно, какой веры в старину держались Булгары, (но) по торговым сношениям с аравитянами они несколько в частностях ознакомились с их религиею. Впоследствии, в 921-м году, булгарский царь Алмаз, отправив посольство к багдадскому халифу, просил, чтобы тот прислал к нему от себя ученых людей для наставления Булгар в содержимом самим халифом магометовом учении. Когда такие лица прибыли в Булгар, то весь булгарский народ обратился в магометанство. Наконец, когда издалека явились воинственные татары, и, победивши Булгар, разграбивши и сожегши их столицу, остались здесь на житье, то проживая среди Булгар, они усвоили как язык, так и религию Булгар: название булгарского народа исчезло, а язык и вера их стали называться татарскими.

Тишкерӳ тĕслĕхĕсем:

а в а л (тат. *ăуăль*) — прежде, встарину;

ч о х (тат. *чак*) — время, пора;

т э м ь: *тэ* — частица предсловная, выражающая неведение, пред тонкозвучным словом (а пред толстозвучным—*та*)-

тат. *ăллă*. См. в Корн. чув.-рус. Словаре *та; мь* — сокращенное *минь* — что: *тэмь* — неизвестно что, неизвестно какой;

т ӳ с ь л э: *тӳсь* (тат. *тӳз*) — вид, род; *лэ* — послелог, обозначающий присутствие чего и вместе с тем образующий прилагательное положительного качества (*ус-ла* — с умом; умный); он соответствует рус. предлогу — *с* и противоположен *сыр, зыр* — без; *тӳсьлэ* — с каким родом, какого рода;

й ы л л ы н э: *йыла* (тат. *йола*) — вера; *ы* — суффикс 3-го лица, *нэ* — окончание винительного падежа с притяжательной приставкой 3-го лица;

т ы т с а: *тыт* (тат. *тут*) — держать, хранить; *са* — окончание деепричастия соединительного. Это деепричастие (настоящее—прошедшее: видя, видевши) в наречии верховых чуваш (вирьял), следуя за существительным как сказуемое, без соединения с другим глаголом, соответствует прошедшему времени состояния или положения изъявит. наклонения: *корза*— видел, *вильзэ* — умер;

п ӳ р н а т ьч е с ь: *порн* — жить, от слова *пор*— есть, существует — жить; *а* — признак настоящего времени толстозвучный; *ть* — окончание 3-го лица наст. вр. изъяв. накл., образовавшееся из древнего *дер (т-д, ь-е, р* исчезло; «идет» по-тат. *килă* или *килăдер,* по-алтай. *келет); че* — «было, бывало», от утратившегося в чув. нар. существительного глагола *ирь* — быть — 3-го л. прошед. времени действия, вм. *ирче, иче* (тат. *ирде, иде, ийе)* — «бывало, было, бы»; прибавляясь к 3-му лицу наст. времени, *че* образует давнопрошедшее: живет-бывало, жил; *сь* — окончание 3-го лица множ. ч. в глаголах, в прошедшем и будущем вр.

Малтанхи куçарусенче чĕлхе çитменлĕхĕсем те, тĕрлĕ йăнăшсем те сахал мар пулнă. Анчах вĕсене, паянхи чĕлхе аталанăвĕн шайĕпе критерисене тĕпе хурса, хурласа çеç тăкни тĕрĕс мар пулнă пулĕччĕ. Кунта çаксене палăртни вырăнлă:

1) малтанхи куçарусем тăлмачсен кадрĕсене çитĕнтерме пулăшнă, кирлĕ опыт пухма, хăнăху туянма, куçару меслечĕсене тупса тĕрĕслеме май панă, çакă вара малашнехи ӳсĕм никĕсĕ пулнă;

2) куçарнă текстсемпе чиркӳсенче çеç мар, шкулсенче те куллен усă курнă. Учебниксем, хрестоматисем, словарьсем пулман е çитмен чухне куçарнă кирек мĕнле текст та вĕренӳ пособийĕ шутне кĕнĕ;

3) чăвашла куçару чĕлхинчи çитменлĕхсене тиркесе тишкерни, ку ыйтупа статьясем тухни, асăрхаттарусене куçаруçăсен ушкăнĕсенче сӳтсе явни куçару критикине аталантарнă. Ку ĕç Золотницкий вăхăтĕнче пуçланать те Яковлев тапхăрĕнче уйрăмах вăйланать;

4) куçаруçă профессине алла илнĕ çынсен ушкăнĕсем чăмăртанаççĕ, ятарлă куçару комиссийĕсем йĕркеленеççĕ, редак-

торсен ăсталăхĕ ӳсет, чăвашла кĕнекесем кăларма полиграфи майĕсем лайăхланаççĕ;

5) куçарасса, тĕпрен илсен, вырăсларан чăвашла куçарнă пулин те, уйрăм чăваш сăмахĕсене, пуплевĕсене, кĕске текстсене вырăсла е ытти чĕлхелле куçарасси аталанать, çакă наукăпа культура тĕлĕшĕнче пысăк пĕлтерĕшлĕ. Сăмахран, нимĕçсен паллă чĕлхеçи В. Шотт чăваш чĕлхи çинчен хăйĕн диссертацине çырнă чухне 1820 çулта тухнă чăвашла Евангели текстчĕпе усă курнă, чăваш чĕлхинчи сăмахсен сасă тата морфема тытăмĕ, вĕсен несĕл тымарĕсем çинчен, чĕлхен типологи уйрăмлăхĕсем çинчен пысăк пĕлтерĕшлĕ выводсем тунă, чăваш чĕлхи тĕрĕк чĕлхисен йышне кĕнине çирĕплетсе панă (унччен чăваш чĕлхине финн-угр чĕлхисен ушкăнне кĕртнĕ).

3. Яковлев тапхăрĕнчи куçару аталанăвĕ

Чăвашла куçарнă литература йышлăн пичетленсе халăх хушшинче сарăласси Чĕмпĕрти чăваш шкулĕпе, чăвашсен чаплă просветителĕн И. Я. Яковлевăн тата ун таврa чăмăртаннă çыравçăсен — учительсемпе вĕренекенсен ĕçĕ-хĕлĕпе тачă çыхăннă. Яковлев хăйĕн тăван халăхне çутта кăларма, унăн культура шайне ӳстерме, тĕнчери паллă писательсем, ăслăлăхçăсем хайланă произведенисене чăваш хресченĕ килне çитерме ĕмĕтленнĕ. Куçарăва вăл çутĕçĕн хăватлă хатĕрĕ, унăн чĕлхине кĕнекелетмелли, литература чĕлхине аталантамалли мел тесе шутланă. Вăл çапла çырнă: «Куçару ĕçне туса пынăçемĕн майĕпен кирлĕ хăнăху пухăнмалла, харпăр тăван чĕлхипе çырура усă курас ăсталăх ытларах та ытларах ӳссе пымалла»[6]. Яковлева чăннипех хальхи чăваш литература чĕлхин никĕсне хываканĕ теме пулать.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче, унăн пуçлăхĕсĕр пуçне, учительсенчен Д. Ф. Филимонов, А. П. Петров, П. В. Васильев, И. С. Бюргановский, В. Н. Никифоров, Ф. Д. Данилов т. ыт. те куçару ĕçне активлă хутшăннă. Çакăншăн укçа тӳлес йĕркене пулман, куçарусене ытларах Яковлев ячĕпе пичетленĕ; вăл, чăнах та, редактор çеç мар, соавтор та пулнă темелле.

Чăвашсене çутта кăларакана куçару ĕçĕнче те паллă ученай Н. И. Ильминский пысăк витĕм кӳнĕ. Яковлев хăй кун çинчен çапла çырать: «Чăвашла куçарас ĕçе эпĕ хам тĕллĕн пуçарса ятăм тесе мухтанма пултараймастăп. Ку тĕлĕшпе те мана Н. И. Ильминский хавхалантарчĕ: чăваш, вырăс чĕлхисем тата Европăри чĕлхесем хушшинчи çыхăнусене уçса кăтартрĕ, вак халăх чĕлхисен тата ытти чĕлхесен уйрăмлăхне, вăрттăн тупсăмне, вĕсен фонетикине туйса илсе ăнланма вĕрентрĕ... Николай Иванович тата çапла канаш панине, сĕнни-

[6] Переписка о чувашских изданиях переводческой комиссии. Казань, 1890, с. 44.

не астăватăп: «Хăвăра ытлашши ан шанăр! Вĕренĕр те вĕренĕр! Пĕр-пĕр халапçă ват çынран вĕренме ан именĕр! Тимлĕрех тăнлăр! Пуплев уйрăмлăхĕсене, сасă ĕнерĕвне, пĕлтерĕш сĕмĕсене асăрхаса юлма тăрăшăр. Сасă туйăмне çивĕчлетсе пырас пулать. Мĕн куçармаллине тăлмачăн малтан хăйĕн лайăх ăнланса илмелле...» Çапла вĕрентетчĕ мана Н. И. Ильминский. Вăл ăс парса вĕрентнипе эпĕ Хусанти университета вĕренме кĕнĕ çулах тутарларан чăвашла куçарма хăтланса пăхрăм, ку ĕçре мана тутарла лайăх пĕлекен Алексей Рекеевпа Игнатий Иванов пулăшатчĕç. Кайран вара эпĕ, Ильминский сĕннĕ программа тăрăх, вырăсларан чăвашла куçарма тытăнтăм»[7].

Патша правительстви, вырăнти влаçсем, паллах, Христос тĕнне, тĕн кĕнекисене сарас тĕллевпе çеç куçару ĕçне туса пыма ирĕк панă. Куçарусен тематикипе содержанине асăрхама, чĕлхе пахалăхне лайăхлатма Хусанта, Гурий святитель юлташлăхĕ ятлă миссионерсен организацийĕ çумĕнче, ятарласа куçару комиссийĕ йĕркеленĕ. Çавăнпа та Чĕмпĕрти шкул тăлмачĕсем малтанхи вăхăтра куçарса пичетленĕ кĕнекесем хушшинче тĕн кĕнекисем ытларах пулнинчен тĕлĕнмелли çук. Апла пулин те, Яковлев пĕчĕккĕн-майĕпен тĕнпе çыхăнман кĕнекесем кăларма пуçланă. Вăл шутра вĕренӳ кĕнекисем, истори, ялхуçалăх, санитарипе медицина тата ытти ăслăлăх пĕлĕвĕсене халăх хушшинче сарма пулăшакан кĕнекесемпе брошюрăсем пулнă. Уйрăмах классикăлла вырăс литературин произведенийĕсене чăвашла куçарма пуçлани халăха культурăлатас ĕçре çеç мар, чăваш литература чĕлхине никĕслес, унăн стилĕсемпе жанрĕсене аталантарас, нормисене хывас ĕçре пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Тăлмачсенчен чылайăшĕ каярахпа хăйсем те литература ĕçне пикеннĕ, оригиналлă произведенисем çырнă.

Тĕнпе çыхăнман текстсенчен Яковлева чи малтан вырăс писателĕсен педагогика тĕллевĕпе çырнă кĕске произведенийĕсем илĕртнĕ. Вĕсене вăл букварьсене, вулав кĕнекисене куçара-куçара кĕртнĕ. Авторсен шутĕнче Толстой, Крылов, Пушкин, Некрасов, Кольцов, Аксаков, Ушинский т. ыт. те пулнă. Кунсăр пуçне халăх ăстăнне, унăн пархатарлă кăмăлтуйăмне палăртакан фольклор материалĕ — халапсем, ваттисен сăмахĕсем, каларăшсем çав кĕнекесенче пысăк вырăн йышăннă. Çапла майпа вĕрентӳ ĕçĕ воспитани ĕçĕпе тачă çыхăнса пынă. Кунта Яковлев вырăссен прогрессивлă педагогикин идейине — тăван сăмахпа усă курса, ачан ăстăнне аталантарас, чун-чĕрине ырă витĕм кӳрес идейăна — пурнăçа кĕртнине уççăнах курма пулать. Вăл ĕçре Яковлевшăн Толстойпа Ушинский чи паха тĕслĕх пулнă.

[7] 100 лет новой чувашской письменности. Сб. статей. Чебоксары, 1972, с. 104.

27750-чув

Ачасемшĕн ăнланма çăмăлтарах пултăр тесе, Яковлев малтанах сăвăлла произведенисене прозăпа куçарса е каласа панă. Сăмахран, 1880 çулта тухнă «Букварьте» Толстойăн «Кашкăрпа карчăк», «Старик тата вăрăмтунасем», Крыловăн «Тилĕпе иçĕм çырли» юптарăвĕсене прозăпа куçарса пичетленĕ. Куçарнă произведенисем уйрăмах 1900 çулхи «Букварьте» нумай.

Куçару ĕçĕн опычĕ пухăнса пынă май тăлмачсен ăсталăхĕ ӳснĕ, халăх кĕнекесене лайăхрах ăнланса вуланă, хапăл туса йышăннă. Çакă куçару ĕçне сарса, лайăхлатса пымалли никĕс пулнă. XIX ĕмĕр вĕçĕнче тата XX ĕмĕр пуçламăшĕнче Яковлев ушкăнĕ уйрăмах тухăçлă ĕçленĕ. Толстойăн «Вырăсла вуламалли кĕнеке» ятлă 4 сборникне, Аксаковăн «Кĕрен чечек», Андерсенăн «Акăш хурсем» юмахĕсене, Кольцовăн сăввисене чăвашла пичетлесе кăларнă. Яковлев сĕннипе пулас паллă писательсем К. В. Иванов тата Н. В. Шупуççынни Лермонтовăн тата ытти вырăс поэчĕсен произведенийĕсене куçарас тĕлĕшпе ĕçленĕ. Лермонтов сăввисен чăвашла сборникĕ 1908 çулта кун курнă.

Куçарура Яковлев çирĕп принципсене пăхăнса, практикăра тĕрĕсленĕ меслетсемпе усă курса ĕçленĕ. Чи малтанах вăл вулакана ăс паракан, ырра, тĕрĕслĕхе вĕрентекен, илемлĕхе туйма пулăшакан произведенисем суйласа илнĕ, вĕсем чăваш хресченĕн психологине, хăйне майлă этика тата эстетика ăнланăвĕсене çывăх пулччăр тесе тăрăшнă.

XIX ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринче чăвашла куçарнă малтанхи тĕн кĕнекисен чĕлхи ытла та чăвашла мар, кăнттам, тӳртенлĕх картинчен тухман чĕлхе пулнă. Сăмахсене вырăс текстĕнчи йĕркепе куçарни, чăваш синтаксисĕн законĕсене уяманни куçарнă текстсене нумай чухне пачах ăнланмалла мар тунă. Çак çитменлĕхе тишкерсе, Яковлев тĕрĕс вывод тунă: куçару ăнăçлă пултăр тесен, чи малтан унăн чĕлхи чăвашсемшĕн ăнланма çăмăл пулмалла, чăвашла хайланă евĕрлех туйăнмалла.

Малтанхи вăхăтра, тĕн кĕнекисене куçарнă чухне, Яковлев чăвашла куçару тексчĕн тĕллевĕ — оригинала ăнланма пулăшасси çеç пулать, тесе шутланă. Чăн та ĕнтĕ, тĕн кĕнекисене ăнланма чăвашсемшĕн е ытти вак халăх çыннисемшĕн кăна мар, вырăссемшĕн те йывăр пулнă, мĕншĕн тесен вĕсене авалхи чиркӳ-славян чĕлхипе çырнă. Çапла вара куçарура пачах палламан, ăнланма çук сăмахсемпе формăсене тата пуплевсене, ытарлă сăмах çаврăнăшĕсене ăнлантарса парасси пысăк вырăн йышăннă. Чĕлхе тĕлĕшĕнчи тӳркилӳ тĕрĕслĕхĕшĕн, тулли эквивалентлăхшăн тăрăшасси асра пулман-ха. Яковлев хăй кун пирки çапла çырнă: «Чăвашла е ытти вак халăх чĕлхине куçарнин тĕллевĕ вăл чиркӳ-славян чĕлхипе çырнă тĕп текста ăнланма пулăшасси кăна пулать, тесе шут-

ламалла, çавăнпа та ăна улăштарса юсанисем, славян текстне улăштарни пек мар, чăрмав кӳме е йăнăша сулăнтарма пултараймаççĕ»[8]. Куçару задачисене çакнашкал ăнланни тăлмачсене чăвашла текста чĕлхе тĕлĕшĕнчен оригиналтан ирĕклĕрех йĕркелеме, тӳртенлĕхрен хăпма май панă.

Каярахпа, илемлĕ литература тата тĕрлĕ ăслăлăх кĕнекисем куçарма тытăнсан, куçару принципĕ самаях улшăнать. Тӳртен, сăмахсерен куçарас меле Яковлев татăклăн сивлет, пăрахăçлать. Оригиналта каланă шухăша лайăх ăнланса, ăна тăван чĕлхе майĕсемпе килĕшӳллĕ палăртмалла, тет вăл. Çакна валли вара оригинал чĕлхипе (кунта — вырăс чĕлхипе) каласакан халăхăн пурнăç йĕркине, йăли-халамне, шухăшлав-ăнланăвне, кăмăл-еккине лайăх тĕпчесе пĕлмелле. Паллах, тăлмач харпăр халăхне, унăн ăстăн пуянлăхĕпе кăмăлтуйăмне, вĕсене палăртакан чĕлхе хатĕрĕсене аван пĕлме тивĕçлĕ.

Çак принципсене çирĕп тытса пынине пула ĕнтĕ Яковлев шкулĕн куçарăвĕсем пур чăвашсемшĕн те ăнланмалла, витĕмлĕ пулса тухнă. Ку тĕлĕшпе чăваш чĕлхинче, халăх сăмахлăхĕнче упранакан иксĕлми пуянлăхпа — ваттисен сăмахĕсемпе, каларăшсемпе, сăнарлă танлаштарусемпе, тĕрлĕрен фразеологи пĕрлĕхĕсемпе, афоризмла пуплевсемпе усă курни питĕ тухăçлă пулнă. Çав мелсем, произведени содержанине тĕрĕс куçарса панипе пĕрлех, унăн чĕлхе илемлĕхне, авторăн кăмăл-туйăм ĕнерĕвне, тĕллевлĕхне те вулакансем патне илсе çитерме пултарнă. Çапла вара куçарура информаци функцийĕ кăна мар, прагматика функцийĕ те туллин пурнăçланса пынă.

Ильминский каланисене асра тытса, аслă вырăс писателĕсенчен тĕслĕх илсе, Яковлев хăй те уçăмлă, ансат, сăнарлă чĕлхепе çырма тăрăшнă, ытти тăлмачсене те çапла ĕçлеме хăнăхтарнă. Куçарусен чĕлхине якатса лайăхлатас тĕллевпе вăл чăваш хресченĕсемпе, уйрăмах ватă стариксемпе канаш тăвассине, тĕрлĕ вариантсене вĕсемпе сӳтсе явассине пысăк вырăна хунă. Халăхра каласа пек çырăр, — вĕрентнĕ вăл хăйĕн ĕçтешĕсене. Акă Яковлев 1874 çулта А. В. Рекеев патне çырнă çыру сыпăкĕ: «Таса, тĕрĕс чăваш чĕлхипе куçар, куçарнă чух пĕр вырăс сăмахне те ан кӳрт; эс темĕскерле, çырнă чух та, каласа чух та, чăвашла аван пĕлсе, вырăс сăмахĕсене хушатăн... Куçармасăр пĕр вырăн та ан хăвар»[9].

Яковлев куçару текстне якатса лайăхлатас, халăха ăнланмалла тăвас тĕлĕшпе мĕн тери тимлĕ ĕçленине «Псалтыре» куçарнин тĕслĕхĕпе çирĕплетсе пама пулать. Н. В. Никольский профессор çырса кăтартнă тăрăх, ку кĕнекен тĕп ориги-

[8] Переписка о чувашских изданиях переводческой комиссии, с. 53.

[9] Владимиров Е. В. Межнациональные связи чувашской литературы. Чебоксары, 1970, с. 54.

налĕ чиркӳ-славян чĕлхипе çырнăскер пулнă. Ăна тăлмачсен ушкăнĕ, вăл шутра К. В. Иванов та, чăвашла куçарнă чухне вырăсла куçарăва, çавăн пекех авалхи грек тата латин чĕлхисене куçарнине, ку çеç те мар — французла, нимĕçле куçарусене танлаштарса тишкернĕ, шута илнĕ, ятарлă ăнлантару кĕнекисемпе, тĕрлĕрен словарьсемпе усă курнă. Малтанхи варианта, шухăш уçăмлăхĕпе чĕлхе пахалăхне тĕрĕслеме, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренекенсене вуласа панă, вĕсен асăрхаттарăвĕсене, сĕнĕвĕсене шута илнĕ. Çапла йĕркепе пĕрре мар — пилĕк-ултă хутчен юсаса тухсан тин алçырăва Хусанти куçару комиссине тăратнă. Комисси хушнипе ку ĕçе икĕ çын икĕ çул хушши редакциленĕ. Цензура ирĕк панă хыççăн кĕнекене сăнамалăх 150 экземпляр çаптарнă та куçару ĕçне чухлакан, чăваш чĕлхине лайăх пĕлекен çынсене ярса панă, тӳрлетмелли вырăнсене кăтартма ыйтнă. Тĕрĕслетӳ ĕçне çавăнпа пĕрлех Чĕмпĕрти шкулта та туса пынă. Пуçарăннă асăрхаттарусене шута илсе, текста çĕнĕрен юсаса тухнă та пĕтĕм тиража пичетленĕ. Ун хыççăн татах асăрханă йăнăшсемпе чĕлхе шăйăкĕсене малашнехи кăларăмсенче те тӳрлетсех пынă[10].

Çапла ĕнтĕ, XVIII ĕмĕрте Чулхулара пуçланса кайнă чăваш куçарăвĕ Хусанта вăй илсе аталаннă, анчах унăн чăн-чăн центрĕ Чĕмпĕр пулнă. Чăвашла куçарнă кĕнекесен йышĕ хăвăрт ӳснĕ. 1886 çулхи августчен кăна Хусанти комисси чăвашла кĕнекесем 70 пин экземпляра яхăн пичетлесе кăларнă[11]. Яковлев ушкăнĕ 700 яхăн кĕнеке куçарса пичетленĕ, халăх хушшине салатнă. Çакă вăл пĕтĕм халăх культурине малалла яма, çутĕçне чĕрĕ вăй кĕртме пулăшнă.

Куçару ĕçне ытти хуласенче те туса пынă. 1900 çулта Самар хулинче куçару ушкăнĕ йĕркеленнĕ, вăл Хусанти комиссие пăхăнса тăнă. Вунă çул хушшинче ку ушкăн 100 яхăн кĕнеке чăвашла куçарса пичетленĕ. Вăл шутра тĕн литератури те, гигиена, медицина, ялхуçалăх ыйтăвĕсемпе çырнă кĕнекесем те пулнă. Кунта куçарупа пичет ĕçĕн правилисене ятарласа пĕтĕмлетнĕ, куçару ыйтăвĕсемпе темиçе съезд та иртернĕ[12].

Паллă ĕнтĕ, Яковлевăн ĕçне-хĕлне реакцилле чиркӳ çыннисем, патша чиновникĕсем пур майсемпе те чăрмавласа, пӳлсе пынă, тем тĕрлĕ элек сарса хĕсĕрленĕ. Кунта политика енĕпе айăплани кăна мар, чăвашла куçарнă кĕнекесен пахалăхĕ пирки хурласа тиркени те пайтах пулнă. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Шупашкар уесĕнчи пĕр пуп В. Смелов Яковлева хытă тăрăн-

[10] Юмарт Г. Ф. Илемлĕ литературăна чăвашла куçарас ĕçĕн паянхи çивĕч ыйтăвĕсем. — Çак. кĕн.: Чĕлхе культурин ыйтăвĕсем. Шупашкар, 1981, 15 с.

[11] Переписка о чувашских изданиях переводческой комиссии, с. 84.

[12] Юмарт Г. Ф. Асăннă ĕç, 16 с.

нă. Яковлевăн куçару принципĕсене хирĕçлесе, вăл çапла çырнă: «Кирек мĕнле кĕнекене, уйрăммăнах Евангелие куçарни вăл, пĕрремĕшĕнчен, малтанхи текст ӳкерчĕкĕ, пĕр пек копийĕ пулмалла. Иккĕмĕшĕнчен, сăмахсемпе пĕрешкел усă курмалла, вĕсене мĕнле лекнĕ апла суйласа илни пулмалла мар. Виççĕмĕшĕнчен, (ку вăл ытларах чухне пуян чĕлхерен чăваш чĕлхи евĕр чухăн чĕлхене куçарнă чухне асра тытмалли япала) куçаракан чĕлхере çук ятарлă ăнлавсене урăх сăмахсемпе ăнлантарса памалла е çаплах, куçармасăр хăвармалла; вăл ăнлавсене палăртма çĕнĕ сăмахсем шухăшласа кăларни е пур пек сăмахсене çĕнĕ, ятарлă пĕлтерĕш пани пачах пулмалла мар... Хăçан та пулин чăвашсем пурте вырăса тухса пĕтĕç, чăваш чĕлхи те сăмахлăха юратакансен библиотекисенче çав халăхран юлнă палăк çеç пулма тивĕç. Яковлев господин ĕмĕтленнĕ пек, «Чăваш халăхĕнче христианла çутĕç сарăлнăçемĕн чăваш чĕлхи майĕпенех христианство ăнлавĕсен шайне çитĕ, христианла содержанипе пуянланса çĕкленĕ» тесе шанни вара — ытлашши хăюллă ĕмĕт темесен те, политика тĕлĕшĕнчен йăнăш, усăсăр шухăш.

Шăп çак кĕретех паллă требованисене Яковлев господин пурнăçламасть те ĕнтĕ»[13].

Çапла вара, Смелов шучĕпе, текста сăмахсерен, чĕлхе формине ним улăштармасăр куçармалла, çĕнĕ сăмахсем, терминсем тумалла мар, синонимсемпе, вариантсемпе усă курма юрамасть, кивĕ сăмахсен семантикине пуянлатни те пулмалла мар т. ыт. те. Тĕслĕхрен, вăл *волхвы* сăмаха чăвашла çĕнĕрен тунă терминпа — *çăлтăрçăсем* тесе куçарнине хирĕçлет, *çăлтăрсене пăхса пĕлекенсем* теме сĕнет. Çавнашкалах *книжники — кĕнекеçĕсем, благословенный — пиллĕхлĕ, божество — турăлăх, икона — турăш* йышши куçарусене те йышăнмасть.

Анчах çутĕç пĕлтерĕшне, куçару ĕçĕн задачисене, тупсăмне тĕрĕс ăнланакансем, чи малтанах Н. И. Ильминский, Яковлев шкулĕн куçарăвĕсене çине тăрса хӳтĕленĕ. Ильминский ку ыйтупа çырнă документсене пухса ятарлă сборник пичетлесе кăларнă. Чăваш куçарăвĕсем пирки тавлашу, сӳтсе яву хĕрсе пынин усси те пулнă — çакă вăл куçару принципĕсене тĕрĕслесе лайăхлатма, наука тĕлĕшĕнчен ăнлантарса çирĕплетме пулăшнă. Куçару тексчĕсен чĕлхи пирки Н. И. Ашмарин, Яковлев хăй тата ытти сем те статьясем, рецензисем чылай пичетленĕ.

Революцичченхи куçару ĕçĕн, куçару произведенисен содержанийĕпе обществăлла-политикăлла тĕллевлĕхĕ вырăссен пĕрремĕш революцийĕн витĕмĕпе нумай улшăнать. Пирвайхи чăваш хаçачĕ «Хыпар» хăйĕн страницисенче общество

[13] Переписка о чувашских изданиях переводческой комиссии, с. 4.

пурнăçĕн çивĕч ыйтăвĕсене çутатакан статьясене кăна мар, вырăс писателĕсен ирĕк шухăшлă нумай произведенийĕсене те чăвашла куçарса пичетлет. Çĕнĕрен пултарулла тăлмачсем палăраççĕ, вăл шутра Г. Кореньков, Тайăр Тимкки, М. Ф. Акимов, Д. П. Петров т. ыт. те. Çак тапхăрта К. В. Иванов хăйĕн произведенийĕсене çырнипе пĕрлех вырăс классикĕсен нумай сăввисене куçарать. Чăвашсем хушшинче Салтыков-Щедрин, Короленко, Телешов, Горький произведенийĕсем тăван чĕлхепе сарăлаççĕ. Вырăсларан куçарни чăваш писателĕсемпе поэчĕсемшĕн питех те лайăх шкул, оригиналлă произведенисем çырма ăсталăх пухмалли шанчăклă никĕс пулнă[14].

4. Совет саманинчи куçару ĕçĕ

Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенчех пирĕн çĕршыври халăхсем умне çĕнĕ, революцилле пурнăç йĕркине тивĕçлĕ культура тăвас задача тухса тăнă. «Куçарнă литература вăл вăхăтра чăваш халăхĕн наци культурине аталантарассинче пысăк вырăн йышăнса тăнă: унăн халăха çĕнĕлле, коммунизм майлă воспитани парас, кивĕ йăла-йĕркесене питлес, буржуалла сиенлĕ идеологие, тĕн тĕшмĕшлĕхне хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе пысăк ĕç тумалла пулнă. Юлашкинчен, çĕнĕ этем характерне йĕркелеме, ăна малта пыракан тĕнчекурăмлă тума пулăшасси те унăн тивĕçĕ пулнă»[15]. Чĕлхе строительствин ыйтăвĕсем, вăл шутра куçару ыйтăвĕсем те, партипе государство ĕçĕ, пĕтĕм халăх ĕçĕ пулса тăнă. Ку ĕçе йĕркелеме ятарласа куçарупа редакци комиссийĕ туса хунă, ăна паллă чĕлхеçĕ Ф. Т. Тимофеев (Тимухха Хĕветĕрĕ) ертсе пынă.

Куçару 20-мĕш çулсенчех питĕ анлă сарăлса кайнă. Унăн принципĕсемпе меслечĕсем Яковлев шкулĕн традицийĕсем çинче никĕсленсе тăнă, анчах куçаракан кĕнекесен хисепĕпе содержанийĕ нумай улшăннă. Куçару ĕçĕнче, материалсен содержанине кура, виçĕ тĕп çул-йĕр уççăнах палăрать. Пĕрремĕшĕ — политикăлла çутĕç, революцилле пропагандăпа агитаци, кулленхи информаци. Ку вăл ытларах хаçат-журнал ĕçĕпе çыхăннă. Çакăнтах патшалăх тытăмĕпе, власть тата суд учрежденийĕсемпе çыхăннă куçару ĕçне-хĕлне те кĕртме пулать. Иккĕмĕшĕ — халăха вĕрентесси, вĕренӳ кĕнекисем куçарасси; наука тата культура пĕлĕвĕсене пропагандăласси. Виççĕмĕшĕ — илемлĕ литература куçарăвĕ.

---

[14] Тĕплĕнрех çакăнта вуласа пĕлме пулать: Владимиров Е. В. Асăннă ĕç, 43—88; Горский С. П. Очерки по истории чувашского литературного языка дооктябрьского периода. Чебоксары, 1959, с. 43—73; Сироткин М. Я. Очерки дореволюционной чувашской литературы. 2-е изд. Чебоксары, 1967, с. 34—61; Юмарт Г. Ф. Революциччен чăвашла куçарнă поэзи. — Çак кĕн.: Чувашский язык, литература и фольклор, вып. 4. Чебоксары, 1974, с. 137—180.

[15] Владимиров Е. В. Асăннă ĕç, 89 с.

Çӳлерех асӑннӑ отраслсен чӑвашла терминологийӗ пулманни, литература чӗлхин нормисем çирӗпленсе çитменни тӑлмачсем умне пысӑк йывӑрлӑхсем кӑларса тӑратнӑ. Куçару чӗлхинче пӗрешкеллӗх, пӗр пӗтӗм система пулман. Çав йывӑрлӑхсене пӗтерме куçарупа редакци комиссийӗ куçарӑвӑн пӗтӗмӗшле принципӗсемпе меслечӗсене палӑртса пама тӑрӑшнӑ. Комисси çапла йышӑнса çирӗплетнӗ: 1) тӗрлӗ çӗрте пурӑнакан чӑвашсем ӑнланмалла чӗлхепе çырмалла тата куçармалла, çак тӗллевпе комисси составне мӗнпур чӑваш калаçӑвӗсен представителӗсене кӗртмелле; кашни куçарӑва комиссин темиçе членӗ пӑхса тухмалла; 2) вырӑнти калаçура пӗр-пӗр ӑнлава ӑнӑçлӑ палӑртакан сӑмах пур пулсан, ӑна литература чӗлхин çаврӑнӑшне кӗртмелле; 3) шухӑша, ӑнлава палӑртма кирлӗ сӑмахсем чӑваш чӗлхинче çук пулсан, куçарнӑ чухне вырӑс сӑмахне е интернационалла термина çаплах хӑвармалла[16]. Çакӑнпа пӗрлех, уйрӑмах вӗренӳ тата наука литературине куçарнӑ чухне, терминсене чӑвашла куçарса каласси, калькӑласси анлӑ сарӑлать.

Чӑваш халӑхӗн анлӑ массисем хутла пӗлмен чухне, паллах, куçару текстӗсенче çӗнӗ терминсем йышлӑ пулни вӗсене ӑнланма чӑрмантарнӑ. Çавӑнпа та хаçатсенче, кӗнекесенче çӗнӗ терминсен ӑнлантарулли списокӗсене пичетлесси йӑлана кӗнӗ. Кунсӑр пуçне ятарлӑ терминологи словарӗсем те хатӗрлесе пичетленӗ. Терминсене куçарас пирки ун чухне пӗр шухӑш пулман. Пӗрисем (сӑмахран, И. Н. Юркин писатель) ют терминсен пӗлтерӗшӗсене чӑваш сӑмахӗсемпе каласа ӑнлантарма сӗннӗ; теприсем (М. П. Петров историк тата чӗлхеçӗ) виçеллӗ мелшӗн тӑнӑ: куçарма май килнӗ терминсене чӑвашла куçармалла, ниепле те куçарма май килменнисене йышӑнмалла, тенӗ; виççӗмӗшӗсем (сӑмахран, Н. И. Ашмарин, Д. П. Петров) ют сӑмахсене йышӑниччен çӗнӗ чӑваш сӑмахӗсем хайламалла, тенӗ. Чӑваш терминологийӗн теори никӗсне çирӗплетни тата практика опытне пӗтӗмлетни çак ыйтӑва тӗрӗс татса пама май панӑ (ку ыйтӑва кӗнекен ятарлӑ сыпӑкӗнче пӑхса тухатпӑр).

Куçару ӗçӗн ответлӑ та йывӑр участокӗ марксизм-ленинизм литературине чӑвашла куçарса кӑларасси, унӑн идейисене халӑх хушшине сарма пулӑшасси пулнӑ. Ку тӗлӗшпе чи опытлӑ тӑлмачсен ушкӑнӗ вуншар çул хушши çине тӑрса ӗçленӗ. 1919—1969 çулсенче кӑна Карл Маркс, Фридрих Энгельс тата В. И. Ленин произведенийӗсене 151 хут чӑвашла çапса кӑларнӑ, вӗсен пӗрлехи тиражӗ 500 пин экземпляр ытла пулнӑ.

В. И. Ленин ӗçӗсем чӑвашла уйрӑм кӗнекен пирвайхи хут 1919 çулта тухнӑ. Малашне çулленех В. И. Ленинӑн 3—4 ӗçне

[16] Владимиров Е. В. Асӑннӑ ӗç, 91 с.

пичетлесе кăларнă, 1929—1930 çулсенче вара ку хисеп 7—8 çити ӳснĕ. 30-мĕш çулсенче çулпуçăн пысăк ĕçĕсем те чăвашла кун курнă, вăл шутра: «Социал-демократин демократилле революцири икĕ тактики» (1930), «Мĕн тумалла?» (1933). В. И. Ленин произведенийĕсене чăвашла куçарса кăларасси вăрçă хыççăнхи вăхăтра уйрăмах вăйланнă. Паллă темăсемпе пухнă ĕçсен чылай сборникĕсем пичетленсе тухнă.

Обществăпа политика, философи, атеизм, экономика, право ыйтăвĕсемпе, наукăпа техника отраслĕсемпе, ялхуçалăх, медицина, физкультурăпа спорт ыйтăвĕсемпе тĕрлĕ текстсем куçарасси пур вăхăтра та пысăк вырăн йышăннă. Ку ĕç кĕнекесем, брошюрăсем куçарнă май та, хаçат-журнал редакцийĕсен кулленхи ĕçĕ-хĕлĕнче те пурнăçланса пырать.

Илемлĕ литература куçарăвĕ Совет тапхăрĕнче калама çук анлăн сарăлса кайрĕ. Малтанах ку енĕпе литераторсен пысăках мар ушкăнĕ палăрчĕ, вăл шутра Хумма Çеменĕ, Исаев Мĕтри, Н. В. Шупыççынни, Иван Мучи, Г. Тал-Мăрса, П. Н. Осипов т. ыт. те. Каярахпа куçару ĕçне пур паллă чăваш писателĕсемпе поэчĕсем те хутшăннă темелле. Вĕсем тăрăшса ĕçленипе вырăс классикĕсен тата совет писателĕсен паллăрах произведенийĕсенчен чылайăшне чăвашла куçарса пичетленĕ. Кунсăр пуçне тĕнчери литература классикĕсен, хамăр çĕршыври халăхсен писателĕсен произведенийĕсене куçарасси аталанчĕ. 1946—1968 çулсенче кăна СССР халăхĕсен чĕлхисенчен куçарса 1751 кĕнеке, вăл шутра вырăсларан куçарса 1668 кĕнеке пичетленĕ. Çав хушăра ют çĕршыв писателĕсен кĕнекисем пурĕ 77 пичетленсе тухнă.

Вăрçă хыççăнхи тапхăрта чăваш писателĕсен произведенийĕсене вырăсла, çавăн пекех хамăр çĕршыври тăванла халăхсен чĕлхисене тата ют çĕршыв чĕлхисене куçарасси хăвăрт сарăлса пырать. Тепĕр паллă уйрăмлăх — чылай тăлмачсем оригинала вырăс куçарăвĕ урлă мар тӳррĕнех куçарни.

Çапла ĕнтĕ, чăваш куçарăвĕн историйĕ самаях вăрăм та пуян, унăн опычĕ чылай пухăннă, паллă традицисем йĕркеленнĕ. Анчах ку ĕçĕн теорийĕ практикăран нумай юлса пырать. Куçарнă текстсене тимлĕ тишкерсен, нумай чухне вĕсен пахалăхĕ паянхи пысăк требованисене тивĕçтерменни курăнать. Çакна хаçат-журналсенчи васкавлă куçарусем çинчен çеç мар, чылай романсемпе повеçсем, поэмăсемпе сăвă-юрăсем çинчен те калама тивет. Теори тишкерĕвĕ, çавăн пекех кулленхи критика хаклавĕ çукки куçару ĕçĕн пахалăхне малалла лайăхлатма, тăлмачсен ăсталăхне ӳстерме нумай чăрмантарать[17].

---

[17] Юмарт Г. Ф. Илемлĕ литературăна чăвашла куçарас ĕçĕн паянхи çивĕч ыйтăвĕсем, 20—28 с.

Кунашкал лару-тăрура вĕренӳ ĕçĕ — теори ыйтăвĕсене ăса хывасси, тишкерӳ-хаклав тата практикăлла куçару хăнăхăвĕсем туянасси — наука тĕпчевĕпе уйрăлми тачă çыхăнса тăма тивĕç. Çавăнпа та кĕнекери тĕрĕслев ĕçĕсемпе заданисем, çыру ĕçĕсен темисем нумай чухне халиччен тапратман ыйтусене е куçару материалĕсене тишкерме, харпăр хăй тĕллĕн пĕтĕмлетӳсем тума хистеççĕ. Апла пулсан, кунта творчество ĕçĕ-хĕлĕ, чăн-чăн наука шыравĕ валли анлă майсем уçăлаççĕ.

II СЫПАК

КУÇАРĂВАН ПĔТĔМĔШЛЕ СЕМАНТИКА ЫЙТАВĔСЕМ

1. Куçару тупсăмĕ тата унăн тĕсĕсем

Совет чĕлхе наукинче юлашки вăхăтра куçарăва çынсен чĕлхе-пуплев вĕççĕн пулакан коммуникаци, хутшăну тĕсĕ, тесе пăхасси çирĕпленнĕ. Куçару определенийĕсем нумай. Акă, Л. С. Бархударов çапла çырать: «Куçару тесе пĕр чĕлхепе хакланă пуплев произведенине, унăн содержани енне, пĕлтерĕшне улăштармасăр сыхласа хăварса, тепĕр чĕлхепе йĕркелесе палăртнине калаççĕ»[1]. Тĕпчевçĕ çавăнтах икĕ асăрхаттару туса хăварать: 1) «пуплев произведенийĕн» (сăмах вĕççĕн каланин е çырнă текстăн) содержанине, пĕлтерĕшне питĕ анлă ăнланас пулать; 2) çав содержанин тĕп пайĕ, тĕшши сыхланса юлсан та, семантикăн хăшпĕр компоненчĕсем, пĕлтерĕш элеменчĕсем куçару процесĕнче çухалаççех.

А. В. Федоров та куçарăва, тĕпрен илсен, çавнашкалах ăнлантарать, анчах çакна хушса калать: куçару вăл — çын ăстăнĕнче пулса иртекен процесс, психика акчĕ[2]. Чăнах та, куçарнă чухне эпир шухăшлатпăр, çавăнпа та куçарăвăн шалти «механизмне» тĕпчес ĕçе психолингвистика дисциплини хăй çине илет.

Тăлмач ăсĕнче куçару мĕнле пулса пынине тата унăн çынсем хушшинчи хутшăнури вырăнне В. Н. Комиссаров тĕплĕнрех пăхса тухать. «Куçару тупсăмĕ, — тесе çырать вăл, — акă мĕнре: икĕ ăрасна чĕлхепе пулакан пуплев акчĕ пĕр пĕтĕм коммуникаци актне пĕрлешет»[3].

Çапла ĕнтĕ, куçару процесĕн тытăмĕ самаях кăткăс, вăл виçĕ сыпăкран е пайран тăрать: 1) оригинал чĕлхипе (кĕскен

---

[1] Бархударов Л. С. Язык и перевод: Вопросы общей и частной теории перевода. М.: Междунар. отношения, 1975, с. 11.

[2] Федоров А. В. Асăннă ĕç, 9 с.

[3] Вопросы теории перевода в зарубежной лингвистике. Сб. статей. М.: Междунар. отношения, 1978, с. 4—5; Комиссаров В. Н. Слово о переводе: Очерк лингвистического учения о переводе. М.: Междунар. отношения, 1973, с. 11—22.

ОЧ) автор хайланă текста тăлмач «йышăнать»—вуласа е итлесе ăса хывать; 2) тăлмач иккĕмĕш, куçару чĕлхипе (кĕскен КЧ) улăштарса йĕркеленĕ текста вулакан (е итлекен) «йышăнать»; 3) вĕсем хушшинчи акт — чи кирли, тĕп вырăн йышăнаканни: тăлмач ОЧ формиллĕ пуплеве КЧ формиллĕ тăвать, пĕлтерĕшне çаплипех хăварма тăрăшать. Ку вăл — шалти, ăсри пуплев акчĕ, ăна илтме те, курма та çук. Çак кăткăс процеса схемăпа кăтартăпăр:



Ахаль хутшăну пĕр чĕлхе картинчен тухмасть пулсан (1-мĕш тата 2-мĕш акт), куçару икĕ чĕлхепе пурнăçланакан коммуникаци акчĕ пулса тăрать: вăл пулăшнипе ОЧ тата КЧ пĕлекен çынсем хутшăнаççĕ.

«Куçару» терминăн тепĕр пĕлтерĕш те пур. Çак сăмахпа тăлмач ĕçленин результатне, вăл иккĕмĕш чĕлхепе хайланă текста та палăртаççĕ. Сăмахран, эпир «япăх куçару», «лайăх куçару», «Хусанкай куçарăвĕ» тетпĕр т. ыт. те.

ОЧ тата КЧ хушшинчи çыхăну-шайлашу ялан пĕр пек пулмасть. Ку вăл чĕлхесен типологийĕпе аталану шайĕнчен тата вĕсемпе калаçакан халăхсен культуринчен килет. Чĕлхесем—ОЧ тата КЧ — типологи тĕлĕшĕнчен пĕр пек, аталану шайĕпе çывăх пулсан, икĕ халăхăн историйĕпе культури, наци психологийĕ пĕрешкел пулсан, куçару процесĕ нумай çăмăлланать. Унашкал çыхăнусем, сăмахран, тутарпа пушкăрт, вырăспа украин, испанпа португал чĕлхисем хушшинче пур. Тепĕр чухне чĕлхесен аталану шайĕ (е тата типологийĕ те) çывăх, анчах халăхсен истори кунçулĕпе çыхăннă культура традицийĕсем пачах ăрасна. Кунашкал çыхăнусем вырăспа итальян, акăлчанпа япон, нимĕçпе араб чĕлхисем хушшинче палăраççĕ. Ун пек чухне куçару йывăрланать, икĕ чĕлхе уйрăмлăхĕпе çыхăннă хăйне майлă ыйтусем тухса тăраççĕ. Юлашкинчен, ОЧ тата КЧ хушшинче пур енĕпе пысăк уйрăмлăх пулма пултарать. Акă, сăмахран, Африкăри нумай йăхсен, халăхсен çырусăр чĕлхисемпе Европăри вăйлă аталаннă чĕлхесем хушшинчи уйрăмлăхсем çавнашкал. Чăваш чĕлхине вырăс чĕлхинчен уйăракан ăрасналăхсем те пысăк. Калас пулать, чĕлхесен типологийĕ улшăнман пулин те (чăваш чĕлхи — агглютинациллĕ, вырăс чĕлхи — флексиллĕ ушкăна кĕрет), Совет саманинче вĕсем хушшинчи аталанулăх уйрăмлăхĕ те, культура уйрăмлăхĕ те нумай чакрĕ, çакă куçару ĕçĕн условийĕсене палăрмаллах улăштарать.

Чĕлхесем хушшинчи асăннă уйрăмлăхсене асра тытса, Хĕвеланăçĕнчи хăшпĕр чĕлхеçĕсемпе тăлмачсем Европа чĕлхисемпе çырнă чаплă произведенисене «цивилизациленмен» халăхсен чухăн чĕлхисене пачах куçарма май çук, тесе çирĕплетме пăхаççĕ. Унтан та ытларах, пĕр шайри чĕлхесем хушшинчи куçару та оригиналăн пĕлтерĕш ăшчикĕпе форма тытăмне сăнласа параймасть, имĕш. Ку вăл — куçарăнмаслăх теорийĕн палăрăмĕ. Çак теори, авалтанах пыраканскер, философи тĕлĕшĕнчен идеализмла агностицизм çинче, политика тĕлĕшĕнчен расизм идейисем çинче никĕсленсе тăрать.

Совет ученăйĕсем куçарăнмаслăх теорине татăклăн сирсе пăрахаççĕ. Кирек хăш чĕлхе, теççĕ вĕсем, çынсене кирлĕ темĕн тери кăткăс ăнлава та, çав тери тарăн шухăша та палăртма пултарать, мĕншĕн тесен вăл обществăна кирлĕ пулнăçемĕн аталанса, пуянланса, хăйĕн майĕсене хушăнтарса пырать. Пирĕн куçару наукинче куçарăнаслăх принципĕ тĕп вырăн йышăнса тăрать. Вăл текстсене пĕр чĕлхерен кирек хăш чĕлхене куçарма май пуррине пĕлтерет[4]. Революци хыççăн Совет çĕршывĕнчи вак халăхсен чĕлхисем хăвăрт аталанса пуянланни, вĕсем çине, вăл шутра чăваш чĕлхи çине те пур тĕрлĕ литературăна йышлăн куçарни çакна витĕмлĕн çирĕплетсе парать.

Куçараканăн икĕ чĕлхене пĕлме, вĕсемпе ĕçлеме тивет. Анчах вăл çав чĕлхесен пĕтĕм структурипе хатĕрĕсене (сăмахсене, грамматика формисемпе моделĕсене) танлаштармасть. Ку вăл — танлаштаруллă грамматика задачи. Куçаруçă ĕçĕн объекчĕ — чĕлхепе усă курса хайланă пуплев произведенийĕ е, урăхла каласан, текст. Текстра вара куçару чĕлхинче çук сăмахсене, пĕлтерĕшсене е формăсене, чĕлхе мелĕсене урăх сăмахсемпе, вĕсен пĕрлешĕвĕсемпе, урăх формăсемпе е мелсемпе ылмаштарма пулать — кирлĕ содержани çеç сыхланса юлтăр. Акă, сăмахран, вырăс чĕлхинче камăнлăх категорийĕ çук пулсан та, тивĕçлĕ пĕлтерĕше контекстра çăмăллăнах палăртма пулать. Тĕслĕх: «Аçу ăçта ĕçлет?» предложение «Где работает твой отец?» тесе куçаратпăр, камăнлăхăн 2-мĕш сăпатне аффикспа мар, *твой* местоименипе палăртатпăр. Е вырăс текстĕнчи *пятилетка* термина чăвашла калама унăн ĕлкипе пирĕн чĕлхере унччен пулман çĕнĕ сăмах — *пилĕкçуллăх* тăватпăр.

Куçару процесĕнче кирек мĕнле икĕ чĕлхе хушшинче палăракан пĕрешкел çыхăнусене, куçарăвăн пĕтĕмĕшле закономерноçĕсене пĕтĕмĕшле куçару пĕлĕвĕ (общее переводоведение) тĕпчет. Вĕсемсĕр пуçне кашни икĕ конкретлă чĕлхе хушшинче, çумĕрех асăннă сăлтавсене пула (типологи уйрăмлăхĕ, атала-

[4] Бархударов Л. С. Асăннă ĕç, 12—26 с.; Крупнов В. Н. Асăннă ĕç, 30—36 с.; Федоров А. В. Асăннă ĕç, 3—36 с.

ну шайĕ тата культура пĕр килменни), хăйне евĕрлĕ çыхăнушайлашусем пулаççĕ, куçарура та хăйне май, пайăр проблемăсемпе йывăрлăхсем тухса тăраççĕ. Калăпăр, вырăс тата чăваш чĕлхисен куçару тĕлĕшпе хăйсен проблемисем, вырăс тата акăлчан чĕлхисен урăх уйрăмлăхсем пулаççĕ. Вĕсене тĕпчесе тивĕçлĕ методика кăтартăвĕсем, ĕç меслечĕсемпе мелĕсем хайласси — уйрăм куçару пĕлĕвĕн (частное переводоведение) задачи. Кунашкал дисциплина вара куçарупа çыхăннă кашни икĕ чĕлхенех пулмалла. Хăш чĕлхинчен хăшне куçарни те методика тĕлĕшĕнчен пысăк пĕлтерĕшлĕ. Сăмахран, вырăсларан чăвашла пĕр мелсемпе, чăвашларан вырăсла урăхларах мелсемпе усă курса куçарма тивет.

Куçару процесĕ кăткăс, нумай енлĕ, унăн тĕсĕсем те йышлă. Вĕсене классификацилеме тĕрлĕ тĕпчевçĕсем тĕрлĕ паллăсемпе усă кураççĕ.

Пуплев формине кура, куçару çырулла тата сăмах вĕççĕн пулма пултарать. Пирĕн условисенче эпир ытларах çырулла куçарупа тĕл пулатпăр — çырнă текста çырсах куçаратпăр. Хальхи вăхăтра, тĕрлĕ халăх çыннисем куллен хутшăнасси вăйланнă май, сăмах вĕççĕн куçарни те час-часах кирлĕ пулать.

Текста йышăннă самантран пуçласа куçарса каличчен (е çыриччен) паллă вăхăт иртет. Калăпăр, вĕренӳ хăнăхтарăвне куçарма сехет, роман куçарма çулталăк та кирлĕ пулма пултарать. Кунашкал ĕçе вĕçе-вĕç куçару (последовательный перевод) теççĕ. Анчах хальхи вăхăтра тăлмачсен калакан çын (докладчик, пухура сăмах илекен т. ыт. те) сăмахĕсене çав самантрах куçарса пыма тивет. Ку вăл — синхронлă куçару, унпа тĕнчери конгрессенче, конференцисенче анлăн усă кураççĕ. Пирĕн театрта чăвашла спектакль вăхăтĕнче наушниксем урлă вырăсла куçарăва парса пынине те синхронлă куçару теме йышăннă. Анчах кунта малтанах куçарнă текста вулани çеç сценăри репликăсемпе пĕр вăхăтра илтĕнет.

Текст вĕçлениччен тăлмач пĕр чĕлхерен тепĕр чĕлхене куçарать. Çакна пĕр енлĕ куçару теççĕ. Анчах сăмах вĕççĕн куçаракансен, сăмахран, делегацисемпе ĕçленĕ чухне, диалога— пĕр чĕлхепе паракан ыйтусене тата тепĕр чĕлхепе калакан ответсене те куçарма тивет. Ку вара икĕ енлĕ куçару пулать.

Куçару ĕçĕн хăйевĕрлĕхĕпе кăткăслăхĕ текстсен жанрĕнчен нумай килет. Хаçат-журнал информацийĕсене е политика, публицистика тексчĕсене куçарасси, паллах, наука тĕпчевĕсене куçарассипе пĕр мар, илемлĕ литература произведенийĕсене, уйрăмах поэзие куçарасси вара хăйне май ăсталăх, творчество ĕçĕ шутланать.

Куçару тĕсĕсене урăх сăлтавпа та уйăраççĕ, сăмахран, профессилле куçарăва — вĕренӳ куçарăвĕнчен тата кулленхи хутшăнури куçаруран, çынсен хутшăнăвĕнчи куçарăва — ма-

шина куçарăвĕнчен, харпăр хăй валли куçарнине — ыттисем валли куçарнинчен т. ыт. те. Юлашкинчен, ĕçре мĕнле меслетсемпе е принципсемпе усă курнине асра тытса, танпаха (адекватлă) куçару, ирĕклĕ куçару тата тӳртен куçару пурринне палăртас пулать.

2. Танпаха (адекватлă) куçару тата эквивалентлăх ыйтăвĕ

Совет ученăйĕсем куçарăнаслăх теорине тĕпе хураççĕ, чи «пуян» чĕлхерен те чи «чухăн» чĕлхене куçарма принципла чăрмав çук, тесе шутлаççĕ. Апла пулсан, пур куçарнă текст та лайăх-ши? Мĕншĕн-ха куçарнă текстсем пире нумай чухне тивĕçтермеççĕ? Мĕн вăл паха куçару, ăçта унăн паллисем, хакламалли критерийĕсем? Çак ыйтусем, урăхла каласан, куçару пахалăхĕн е адекватлăхĕн проблемисем практик тăлмачсене те, куçару теоретикĕсене те тахçантанпа тыткăнра тытаççĕ. «Адекватлă», «адекватлăх» терминсене (латинла aequa «тан» сăмахран) эпир чăваш чĕлхине йышăннă ĕнтĕ. Анчах ку ăнлава чăвашла «танпаха» терминпа палăртма та пулать. Сăмах май каласан, куçару пĕлĕвĕн теоретикĕ А. В. Федоров вырăсла «адекватный перевод» вырăнне «полноценный перевод» теме сĕнет[5].

Историре паха, тĕрĕс куçарăва тĕрлĕрен ăнланнă, ун çинчен пособин I сыпăкĕнче кĕскен çырса кăтартнă. «Тĕрĕс» куçару икĕ чĕлхе формин пĕрпеклĕхне, сăмахран сăмах куçармаллине пĕлтерет текенсем те, текстăн идейине, пĕтĕмĕшле шухăш шăнăрне тытса пырса чĕлхе формине ним чарусăр улăштарма юрать текенсем те чăнлăх тупма пулăшаймаççĕ: пĕрисем тӳртенлĕх, буквализм патне, теприсем ытлашши пăсса куçарасси патне илсе пыраççĕ.

Хальхи куçару пĕлĕвĕнче танпахалăх ăнлавне ытларах текстсен функцийĕ енчен пăхса палăртаççĕ. Танпаха (адекватлă) куçару тесе оригиналăн шухăш пуянлăхне, кăмăл-туйăм ĕнерĕвне, автор тĕллевĕсене урăх чĕлхе хатĕрĕсемпе тата мелĕсемпе май пур таран туллинрех каласа палăртнине ăнланма йышăннă. Ку определенире «май пур таран» сăмахсене асра тытар. Адекватлă тени вăл текстсем — оригинал тата куçару — шăп та шай пĕр пек пулмаллине пĕлтермест, урăхла каласан, танпахалăх — арифметикăлла тӳртен танлăх мар. Адекватлăх тĕрлĕ виçере пулма пултарать, ку вăл текст кăткăслăхĕнчен те, чĕлхесен уйрăмлăхĕсенчен те, жанр паллисенчен те, тăлмач ăсталăхĕнчен те килет. Анчах пур чухне те пĕр требование нимрен ытларах уямалла: вулакан (итлекен) ăстăнне оригинал мĕнле информаци парать, унăн чун-чĕрине,

[5] Федоров А. В. Асăннă ĕç, 126 с.

кăмăлне мĕнле витĕм кӳрет, куçару тексчĕ те çав функциех нурнăçлама тивĕç. Чĕлхе форми тĕлĕшĕнчен куçару оригинала ĕлкепе ӳкернĕ пек евĕрлени пулмалла мар — вăл иккĕмĕш чĕлхе законĕсемпе, унăн идиоматикипе, стиль требованийĕсемпе килĕшсе тăмалла.

Кунта текст содержанийĕпе чĕлхе форми пĕрлĕхлĕ пулни питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Оригинал формине куçарура та сыхласа хăварма май килсен, паллах, çапла пулмалла та. Сăмахран, вырăсла «Сегодня пятница» тенине (наречи + тĕп падежăн пĕрреллĕ хисепĕнчи япала ячĕ) чăвашла та пĕлтерĕшне пăсмасăр форма тĕлĕшĕнчен пĕрешкел — «Паян эрнекун» тесе куçаратпăр. Кирлĕ пĕлтерĕше (ăнлава, шухăша, кăмăл хусканăвне т. ыт. те) палăртма иккĕмĕш чĕлхинче çавнашкал формăллă элементах тупăнмасть пулсан, тулаш формипе урăхла, анчах функцийĕпе пĕр пек элемент шыраса тупма е çĕнĕрен хайлама тивет. Акă вырăсла *племянник* сăмаха, контекста кура, чăвашла *пичче (шăллăм) ывăлĕ, аппа (йăмăк) ывăлĕ* тесе калама тивет. «Спокойной ночи!» тессине «Ыйхи тутлă пултăр!», «Дом строится плотниками» тессине «Çурта платниксем тăваççĕ» тесе калатпăр.

Кирек мĕнле текст (е унăн сыпăкĕ) нумай элементсенчен тăрать. Куçарнă чухне çав элементсем, пайăр детальсем пĕтĕмне пăхăнса тăни пулмалла. Куçаракан текст (сыпăк, предложени) содержанийĕпе формин пĕрлĕх принципĕ хушать пулсан, юриганалти хăшпĕр элементсене улăштарма, кăларса пăрахма е урăх йĕркепе вырнаçтарса тухма, оригиналта пулман çĕнĕ элементсем кĕртме те тивет. Çавнашкал улшăнусене пĕтĕмĕшпе трансформацисем теме йышăннă.

Текстпа паллашнă хыççăн чи малтан тумалли ĕç вăл — ăна пайласси, сыпăкласси. Унтан оригинал чĕлхинчи çав элементсене, татăксене тӳр килекен, вĕсемпе шайлашакан, вĕсен функцине пурнăçлама пултаракан элементсене куçару чĕлхинче шыраса тупас пулать. Çавăн пек тӳркилӳсене эквивалентсем теççĕ. «Эквивалент» термин пирĕн чĕлхене çаплипех кĕнĕ. Унран тунă «эквивалентлă» паллă ятне «танвалентлă», «эквивалентлăх» япала ятне «танвалентлăх» теме пулать.

Икĕ чĕлхери эквивалентлă элементсем чĕлхе структурин тĕрлĕ шайĕсенче вырнаçса тăраççĕ, çавна май вĕсен текстри вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ те пĕр мар. Ку вăл куçару единицисен ыйтăвĕпе тачă çыхăннă. Предложенисем сăмахсенчен тăнă пирки куçару процесĕнче сăмах эквиваленчĕсене тупасси тĕп вырăнта тăнă пек туйăнма пултарать. Хăшпĕр тĕпчевçĕсем çапла çирĕплетсе калаççĕ те. Чăнах та, кирлĕ сăмах тупасси — тăлмачăн тĕп задачисенчен пĕри. Куçарури йывăрлăхсем те нумай чухне иккĕмĕш чĕлхере тивĕçлĕ сăмах çуккипе çыхăннă (кун пирки III сыпăкра тĕплĕн каланă). Çакна уйрă-

мах вĕренекенсем лайăх туяççĕ: ют çĕршыв чĕлхин текстне куçарнă чухне вĕсем чи малтан хăйсем пĕлмен сăмахсене словарьте шыраса тупаççĕ, вара тин пĕтĕм предложение калăплама пуçлаççĕ.

Хăшпĕр чухне сăмах çеç мар, унăн пĕлтерĕшлĕ пайĕсем, морфемăсем те куçару чĕлхинче тивĕçлĕ эквивалентсем тупаççĕ. Вара морфемаçемĕн куçарма — калькăлама май килет. Ку мелпе куçарура, уйрăмах терминсене куçарса каланă чухне питĕ анлăн усă кураççĕ. Вăл уйрăм лексика единицисем — сăмахсем те *(без-опасн-ость — хăруш-сăр-лăх)*, анлă номинаци единицисем те *(военно-воздушные силы — сывлăш-çар вăйĕсем)*, фразеологизмсем те *(Семь раз отмерь, один раз отрежь — Çиччĕ виç те пĕрре кас)* тума май парать.

Сасăсене, саспаллисене палăртасси те çивĕч тăма пултарать. Паллах, ку элементсен хăйсен пĕлтерĕшĕ çук, анчах ют чĕлхе сăмахĕн хăйне евĕрлĕ сасă янăравне тата графика уйрăмлăхĕсене тепĕр çыру системипе палăртасси çăмăл ĕç мар. Чылай чухне ОЧ сăмахĕсене çав халлĕнех, куçармасăрах хăварма тивет. Ку шута пайăр ятсем, экзотизмсем, тĕрлĕрен номенклатурăсем т. ыт. кĕреççĕ. Вырăсларан чăвашла куçарнă чухне халĕ ун пек йывăрлăх çукпа пĕрех, мĕншĕн тесен пирĕн алфавитра вырăс саспаллийĕсем пурте пур. Чăваш сăмахĕсене вырăс текстне кĕртнĕ чухне вара пуçа çĕмĕрмелли чылай. Тĕслĕхшĕн *Сарпике* (çын, музыка произведенийĕ, кафе ячĕ), *шăрттан, чăкăт* (çимĕç ячĕсем), *Чăвашъен* (телепередача ячĕ) сăмахсене илер. Пĕрремĕшĕнче, *к* янăраса илтĕннĕ пирки, вырăсла *Сарпиге* çырасси çирĕпленнĕ, анчах ку сăмахра *п* сасă та янăрать-çке, апла пулсан, *Сарбиге* çырмалла пек. *Шăрттана* вырăс текстĕнче *ширтан* е *шыртан* тесе çырмалла? *Чăкăт* вырăс текстĕнче *чигыт, чигит* е мĕнле те пулин урăхла? Вырăс хаçатĕнче *Чăвашъен* сăмаха *ă* саспаллисĕр çыраççĕ: *Чвашъен*. Қилĕшмелле-ши кунпа? Вăйсăр *ă, ĕ* сасăсене палăртмасăр хăварсан, *чăкăт* вырăнне те *чгт* çырма тивнĕ пулĕччĕ-çке.

Ют çĕршыв чĕлхисенчен чăвашла тӳррĕн куçарнă чухне те ыйтусем нумай тухса тăраççĕ. Қалăпăр, Геннадий Айхи Франци поэчĕсене куçарнă чухне малти ретри тутапа калакан ансăр сасса вырăссем пек *ю* саспаллипе мар, *ӳ* саспаллипе палăртнă, *сь* вырăнне *ç* саспаллипе усă курнă: *Элюар — Элӳар, Мюссе — Мӳссе, месье — мĕçье* т. ыт. те. Ытти авторсем ун пек сăмахсене чăваш текстĕнче те вырăсла формăпа çыраççĕ. Чăваш радио хумĕсемпе тăтăшах янăракан «Туслăх — баратшаг!» передача ятĕнче венгр сăмахне мĕнле çырасси те шухăшлаттарать, мĕншĕн тесен венгрсем ăна *бораччаг* тесе каласçĕ.

Кунашкал тĕслĕхсене куçарнă чухне тăлмачăн транскрипци е транслитераци мелĕсенчен пĕринпе усă курма тивет.

Транскрипци — ют чĕлхери сасăсене КЧ алфавичĕн саспаллийĕсемпе палăртни, ун пек чух сăмахăн хăй чĕлхинчи орфографи формине шута илмеççĕ. Çапла, Г. Айхи чăвашла *Поль Элӳар* тесе çырнă поэт ячĕ француз орфографийĕпе Paul Eluard çырăнать. Транслитераци вара пĕр чĕлхери сăмахăн орфографи формине тепĕр алфавит саспаллийĕсемпе çырса пани пулать. Транслитерацине çырсан, хайхи поэт ячĕ *Паул Элуард* пулмалла. Кашнин хăйĕн лайăх енĕ те, кăлтăкĕ те пур: транскрипци сăмахăн çырури формине кăтартмасть, транслитераци — сăмах мĕнле илтĕннине. Çавăнпа ĕнтĕ чăваш радио дикторĕсем асăннă венгр сăмахне тĕрĕссипе пăсса калаççĕ — саспалли тăрăх вулаççĕ. Çак икĕ мелрен хăшĕнпе хăçан усă курмаллине татса панă чухне куçаруçăн чылай факторсене шута илме тивет.

Анчах сăмах тулли пĕлтерĕшлĕ единица пулсан та, вăл текст мар-ха, унăн «кирпĕчĕ» кăна. Сăмахсене йĕркипе «кирпĕчĕн-кирпĕчĕн» ылмаштарса пыни адекватлă куçару пама пултараймасть. Ку тӳртен меслет нумай чухне пĕр сăмах е анлă ят шайĕнче те юрăхсăрри курăнать. Акă, вырăсла *противоядие* сăмаха *наркăмăшхирĕçлĕхĕ* тесе, чăвашла *сĕтел-пукан* тенине «мебель» пĕлтерĕшпе *стол-стул* тесе калама çук. Тĕрлĕ чĕлхесенче пĕрешкел элементсемех пачах урăхла пĕлтерĕшпе пĕрлешеççĕ. Чăвашла *урай* (ура+айĕ), вырăсла тӳртен *подножие* пулать, вăл «сăрт айĕ» е «палăк никĕсĕ» тенине пĕлтерет, чăннипе вара *урай* — «пол». Фразеологизмсене куçарнă чухне унашкал мел уйрăмах пысăк йăнăш патне илсе çитерме пултарать. Сăмахран, вырăсла *положить зубы на полку* идиомăна (çиме çукки, выçăхни çинчен) чăвашла *шăлсене сентре çине кăларса хур* тесе, чăвашла *хуп турттар* тенине (харлаттарса çывăрни çинчен) вырăсла *возить лубки* тесе куçарни камитле пулнă пулĕччĕ. Çавнашкалах акăлчансем cold dogs тенине тӳртен куçарсан «сивĕ йытăсем» пулать, тĕрĕссипе вăл «сосиска» тенине пĕлтерет.

Чĕлхесенче сăнарлă ытарлăх, идиомăлăх вăйлă. Сăмахсен шалти форми — япалана, пулăма ят панă чухне сăмах кĕлеткинче çирĕпленсе юлнă паллăсем тĕрлĕ чĕлхесенче пĕр пек мар. Çавăнпа та оригинал сăмахĕсене тӳр килекен сăмахсем тупни — ĕçĕн малтанхи пусăмĕ, хатĕрленӳ сыпăкĕ çеç. Вĕсем пуплев шухăшне иккĕмĕш чĕлхе — КЧ законĕсем хушнă пек килĕшӳллĕ шайласа йĕркелемелли «строительство материалĕ» çеç-ха.

Предложенири сăмахсем пĕр-пĕринпе паллă йĕрке тăрăх çыхăнаççĕ, пĕр-пĕрне пăхăнса тăраççĕ. Çапла вара «кирпĕчсен» хăйне май «блокĕсем» йĕркеленеççĕ. Куçарура та вĕсем валли çавнашкал эквивалентлă пĕрлешӳсем тупăнаççĕ, тăлмач хăйĕн ăсĕнче сăмах майлашăвĕсене, синтаксис ушкăнĕсе-

не пухса-йĕркелесе хатĕрлет. Анчах сăмах майлашăвĕ тĕ куçару единици мар.

Пайăррăн хăш сăмахпа, мĕнле сăмах çаврăнăшĕпе, уйрăмах епле грамматика формипе усă курасси пысăкрах единицăна — предложение е предложенисен пĕр шухăш шăнăрĕпе çыхăнса пĕрлешнĕ ушкăнне (ытларах чухне вăл абзацпа тан пулать) тĕрĕс ăнланса илнинчен килет. Конкретлă условисенче вара ку е вăл уйрăм элемента куçарасси те мала тухса тăма пултарать. Предложенисене, абзацсене, уйрăм сыпăксене куçарнă чухне произведенин пĕтĕмĕшле тĕллевлĕхне, жанрпа стиль уйрăмлăхĕсене, авторăн хăйне май пултарулăх манерне яланах шута илес пулать[6].

3. Сăмах пĕлтерĕшĕн тĕсĕсем тата куçару

Хальхи наукăра чĕлхе хăйне евĕрлĕ знаксен системи пулса тăрать, тесе шутлаççĕ. Знаксем тĕрлĕ йышшисем пулаççĕ; вĕсем, тĕпрен илсен, чĕлхе структурин тĕрлĕ шайĕсенчи тĕп единицăсемпе тӳр килеççĕ: фонема — морфема — сăмах —сăмах майлашăвĕ —предложени. Вĕсенчен тĕп вырăнта тăраканни сăмах шутланать. Чĕлхе знакĕсем икĕ енлĕ: пĕрремĕшĕ — вĕсен пичĕ, тулашĕ, форми, иккĕмĕшĕ — шалашĕ, содержанийĕ, анлăн илсе каласан, знак пĕлтерĕшĕ. Сăмаха калатпăр, илтетпĕр (кунта унăн сасă форми — акустика пулăмĕ тухса тăрать), çыратпăр, вулатпăр (кунта — çыру форми). Калакан-çыраканăн (авторăн) та, итлекен-вулаканăн (йышăнаканăн) та çав материаллă формăпа мĕнле те пулин пĕлтерĕш, ăнлав, кăмăл-туйăм çыхăнать, ку вăл шăпах ĕнтĕ знакăн шалашĕ пулать. Пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕн çак положенийĕ куçару теорийĕшĕн те пысăк пĕлтерĕшлĕ, мĕншĕн тесен, çӳлерех ăнлантарнăччĕ ĕнтĕ, куçару вăл — чĕлхе хатĕрĕсемпе, знаксемпе усă курса хутшăннин тĕсĕ.

Тĕрлĕ чĕлхесенче шал енĕ — пĕлтерĕшĕ пĕр килекен знаксем, сăмахран, пĕр пек пĕлтерĕшлĕ сăмахсем тĕл пулаççĕ: вĕсем пĕр япаласенех, пĕр ăнлавсенех ят параççĕ. Кашни чĕлхерех «эпĕ», «пĕрре», «анне», «пысăк», «чуп» йышши ăнлавсене пĕлтерекен сăмахсем пур. Анчах, шал енĕ пĕрешкел çинчех, вĕсен тулаш енĕ, сасă витĕмĕ (çавна май çырури форми те) пачах ăрасна. Тĕслĕхрен, вырăс чĕлхинчи *брат* сăмах пĕлтерĕшне чăвашла *пиччĕ* е *шăллăм,* акăлчанла brother тесе палăртаççĕ. Ытти чĕлхесенче те ку ăнлав валли хăйсен сăмахĕсем пур.

Анчах тĕрлĕ чĕлхесенчи знаксен пĕлтерĕш енĕ пĕтĕмпех пĕр пек пулни сайра тĕл пулать, мĕншĕн тесен сăмахсен се-

[6] Комиссаров В. Н. Асăннă ĕç, 188—189 с; Крупнов В. Н. Асăннă ĕç, 52—57 с.; Рецкер Я. И. Теория перевода и переводческая практика: Очерки лингвистической теории перевода. М.: Междунар. отношения, 1974, с. 24—28.

мантика калăпăшĕ те, тытăмĕ те тĕрлĕ чĕлхесенче пĕр пек ататаналмасть. Ытларах чухне сăмах семантикин пĕр пайĕ çеç тепĕр чĕлхери сăмах пĕлтерĕшĕпе (е унăн пĕр пайĕпе) танлашать. Акă, *брат* сăмах вырăс чĕлхинче «тăрĕ тăван — арçын» пĕлтерĕшпе çăрет. Чăваш чĕлхинче *пиччĕ* сăмахăн унсăр пуçне тата «атте шăллĕ» пĕлтерĕш пур. Акăлчансен brother сăмахĕн виçĕ пĕлтерĕш: «арçын тăван», «ентеш» тата «тус».

Куçару процесĕнче текстăн е унăн пайĕн, элементĕн содержанине пĕтĕмпех сыхласа хăварма май çук, тенĕччĕ çăлерех. Хăшпĕр çухатусем пулаççех. Калас пулать, тĕрлĕ йышши пĕлтерĕшсен куçарури шăпи пĕр пек мар. Мĕнле пĕлтерĕшсем пур-ха чĕлхе знакĕсен? Вĕсен тулаш формине эпир хамăр ăсра мĕнпе сыхăнтаратпăр? Тĕпрен илсен, знаксен виçĕ тĕрлĕ пĕлтерĕш пулать.

Пĕрремĕшĕ — знакăн (тĕслĕхрен, сăмахăн) тулаш енĕпе вăл ят паракан япала, пулăм хушшинчи çыхăну. Кунта икĕ тĕрлĕ лару-тăру пулма пултарать. Сăмаха пуплевре мар, уйрăм халлĕн илес пулсан, унăн пĕтĕмлетӳ функцийĕ палăрать. Урăхла каласан, пĕр-пĕр сăмахпа пĕртен-пĕр уйрăм, пайăр япалана, сăмахран, йывăç, сĕтеле (эпир курса тăраканнисене е асра тытаканнисене) çеç мар, çавăн йышши мĕнпур япаласене палла тума пулать. Ун пек пĕтĕмлетӳллĕ пĕлтерĕше **референт пĕлтерĕшĕ** теме пулать, мĕншĕн тесен сăмахпа палăртакан ăнлава **референт** теççĕ. Пуплевре, конкретлă предложенире вара знак пĕлтерĕшĕ пайăрланать, хутшăну ситуацине кура, вăл пĕр-пĕр паллă япалапа çыхăнать. Сăмахран, *кĕнеке* сăмаха хăй халлĕн илсен, вăл тĕнчери кирек мĕнле кĕнекене палăртать. Словарьсенче сăмахсене шăпах çавăн пек — контекстпа çыхăнтармасăр çырса кăтартаççĕ. Çапла ĕнтĕ, унта сăмахсен референт пĕлтерĕшĕ сăнланать. Каласа кăтартнă пек, «Ку кĕнекене мана вулама пар-ха» тенĕ чухне вара çав сăмахах пĕр конкретлă кĕнекене çеç палăртать. Пуплевре знак-па паллă тăвакан конкретлă объекта унăн **денотачĕ** теççĕ, кунашкал пайăр пĕлтерĕше **денотат пĕлтерĕшĕ** теме йышăнна. Çак икĕ пĕлтерĕш пĕрешкел, çавăнпа вĕсене пĕрлештерсе сигнификат пĕлтерĕшĕ тесе те калаççĕ. Анчах уйрăмлăх та пур, ăна куçарура шута илме тивет. Акă пĕр тĕслĕх. «Иванов — лайăх студент, активлă комсомолец, спортсмен» предложени денотачĕ — пĕр паллă çын, эпир пĕлекен Иванов. Референчĕсем вара унăн темиçе те, мĕншĕн тесен вăлах студент та (пĕр референт пĕлтерĕшĕ), активист та (тепĕр референт пĕлтерĕшĕ), спортсмен та (тата тепĕр референт пĕлтерĕшĕ).

Тĕрлĕ денотатсен пĕр пек референт пĕлтерĕшĕ те пулма пултарать. Сăмахран, «Эпĕ магазинта костюм туянтăм» предложенири знаксен референт пĕлтерĕшĕ ăна кам, ăçта каланинчен килмест. Пуплев ситуацине кура денотачĕсем вара пачах ăрасна пулма пултараççĕ. Хулара пурăнакан пĕр-пĕр

çын универмагра илнĕ хура костюм çинчен те е, калăпăр, ялти хĕрарăм лавккара туяннă кĕрен тĕслĕ çипуç çинчен те çав сăмахсемпех калама пултараççĕ. Денотачĕсем (çынни, магазинĕ, костюмĕ) тĕрлĕ, референт пĕлтерĕшĕ вара çавах юлать.

Ку тĕлĕшпе пайăр ятсен тăрăмĕ хăйне евĕрлĕ. Вĕсен референт пĕлтерĕшĕ пĕтĕмлетӳсĕр, урăхла каласан, денотат пĕлтерĕшĕпе пĕр килет. Чăнах та, *Пушкин, Мускав, БАМ, Çавал* йышши сăмахсем ялан — хăйсем халлĕн те, контекстра та — пĕр объекта çеç палăртаççĕ.

Иккĕмĕш йышши пĕлтерĕш çынсем хăйсем усă куракан знаксен референчĕсем — сăмахпа мĕн-мĕн палăртни çине епле пăхнинчен килет. Хутшăнура хыпар, информаци пĕлтернисĕр пуçне нумай чухне çыннăн кăмăл-туйăмĕ палăрать. Çакна çыхăнуллă пуплевре çеç мар, чĕлхе системинче — уйрăм знаксен шайĕнче те курма пулать. Хăшпĕр сăмахсен контекстра мар чухне субъективлă хаклав сĕмĕ пачах çук (сăм. *эпĕ, сĕтел, чуп, пысăк* йышшисен), кусем — нейтраллă ушкăн сăмахĕсем. Теприсен çавнашкал сĕм яланах палăрать (сăм. *йĕксĕк, кĕлмĕç, апăрша, чунăм* т. ыт. те). Нумай чухне пĕр япалана е пулăма палăртма субъективлă кăмăл тĕлĕшĕнчен уйрăлса тăракан темиçе знакпа та усă кураççĕ, танл.: *питĕ — çав тери — шутсăр — майсăр — манерсĕр — сĕре — хăрушла* е вырăс чĕлхинчен: *спать — почивать — дрыхнуть — задавать храпака* т. ыт. те.

Çакнашкал кăмăл-туйăм, стиль сĕмĕсене знаксен **коннотаци (е прагматика) пĕлтерĕшĕсем** теççĕ. Малтанхисем пекех, ку пĕлтерĕшсем те пĕтĕм халăх чĕлхинче çирĕпленнĕ, вĕсем контекст условийĕсенчен килмеççĕ, çавăнпа вĕсене словарьсенче те ятарласа палăртаççĕ. Тĕслĕхрен, *йĕксĕк* сăмах яланах калаканăн йĕрĕнчĕк кăмăлне, *чунăм* сăмах ачашлу туйăмне палăртать т. ыт. те.

Виççĕмĕш йышши пĕлтерĕш чĕлхе системинчи знаксен пĕрпĕрин хушшинчи çыхăнăвĕсенчен килет, ăна çавăнпа та **чĕлхери пĕлтерĕш** (внутриязыковое значение) теççĕ. Вăл пĕлтерĕшсене эпир, тĕслĕхрен, морфологи е сăмах пулу парадигмисенче, семантика ушкăнĕсенче аван куратпăр: *сĕтел — сĕтелĕн — сĕтеле — сĕтелпе — сĕтелĕ — сĕтелсем* (вĕçленӳ формисем), е *вăй — вăйлă — вăйсăр — вăйлан — вăйпитти* (пĕр тымартан пулнă сăмахсем), е *хыттăн — вăйлăн — хастаррăн — ассăн — ачашшăн* (пĕр аффикспа тунă сăмахсем), е *хурăн — юман — йăмра — вĕрене* (пĕр тематика ушкăнне кĕрекен сăмахсем). Илсе кăтартнă сăмахсене референт пĕлтерĕшĕсĕр пуçне грамматика пĕлтерĕшĕ уйăрса тăрать. Морфологи парадигмин членĕсем вара, сăмахран, падеж, камăнлăх, хисеп, сăпат, вăхăт формисем, пĕр-пĕринчен чĕлхери пĕлтерĕшпе çеç уйрăлса тăраççĕ, референт тата коннотаци пĕлтерĕшĕсем вĕсен ялан пĕр пек.

Куçару ĕçĕнче çак виçĕ аспекта (вĕсене пĕтĕммĕн **сăмахăн семантика тытăмĕ** теççĕ) тимлесе тишкерме тата шута илме тивет, мĕншĕн тесен кашни чĕлхен ку тĕлĕшпе хăйĕн уйрăмлăхĕсем пур. Чĕлхе знакĕсенчен ытларахăшĕн семантика тытăмĕ тулли — вĕсен виçĕ тĕрлĕ пĕлтерĕшĕ те пулать. Хăшпĕр сăмахсен вара референт пĕлтерĕшĕ те, коннотаци пĕлтерĕшĕ те пачах çук. Ку шута пулăшу сăмахĕсем — татăксем, союзсем, хыççăмахсем, предлогсем, артикльсем т. ыт. кĕреççĕ. Вĕсем яланах (денотата) ят памаççĕ, ăнлава (референта) пĕлтермеççĕ, кăмăл-туйăма палăртмаççĕ (коннотаци сĕмĕ çук). Çапла ĕнтĕ, вĕсен семантикинче чĕлхери пĕлтерĕш кăна палăрать.

Хăш пĕлтерĕшĕ мĕнле сыхланса юлать-ха куçарура? Пуринчен ытла сыхланса юлаканни — референт пĕлтерĕшĕ. Пĕр енчен, тĕрлĕ чĕлхесемпе калаçакан çынсем пĕр тĕнчерех пурăнаççĕ, вĕсен шухăшлав аппарачĕ пĕр пекех, çавăнпа та çутçанталăкри, обществăри япаласемпе пулăмсене вĕсем хăйсен сăмахĕсемпе палăртса хăвараççĕ. Тепĕр енчен, сăмахăн пĕтĕм халăх ăстăнĕнче çирĕпленнĕ лексика пĕлтерĕшĕ улшăнчăк мар, тăтăрхаллă (чĕлхе аталанăвĕн тĕрлĕ тапхăрĕсене илмесен). Çавăнпа ĕнтĕ чăвашсем *вăл, иккĕ, хура, йывăç* йышши тата ытти сăмахсене яланах пĕр пек ăнланаççĕ. Анчах куçару процесĕнче референт пĕлтерĕшĕсем те чылай чухне çухалаççĕ, туллин палăрмаççĕ. Акă, вырăсларан *дядя* сăмаха куçарнă чухне текстра е *кукка,* е *пинче,* е *мучи* теме тивет, уйрăм халлĕн виççĕшĕ те *дядя* сăмахăн пĕтĕм семантикине витеймеççĕ. Ун пек çухатусене контекст та сапласа çитереймест.

Коннотаци пĕлтерĕшне — кăмăл-туйăм ĕнерĕвне, стиль сĕмĕсене, тĕрлĕрен модаллĕхе куçарура сыхласа хăварма чылай йывăртарах. Тĕрлĕ чĕлхесенче пĕр объектсенех тĕрлĕ коннотацине ят параççĕ, сăмахсен модаллĕх, стиль сĕмĕсем пĕр килмеççĕ. Çак йывăрлăх куçаруçăсене уйрăмах хытă такăнтарать. Акă, М. А. Шолоховăн «Уçнă çерем» романĕнчи паллă персонаж Щукарь оригинал текстĕнче сĕтеклĕ те коннотаци тĕлĕшĕнчен питĕ пуян чĕлхепе калаçать, çакă сăнара чăннипех «чун кĕртме» май парать. Куçарнă хыççăн вара мыскараçă пуплевĕсенчи чĕлхе тути-маси, хăйне евĕрлĕ эрешĕ пĕтĕмпех сĕвĕрĕлнĕ, Çăрттан мучи пĕр тикĕс, тĕссĕр чĕлхепе, кĕнеке чĕлхипе калаçакан чунсăр кĕлетке пулса юлнă. Оригинал текстĕнчи диалектизмсене, ансат тата тӳрккес пуплев элеменчĕсене, стиль тăвакан ытти мелсене функци тĕлĕшĕнчен çавăн пекех сĕтеклĕ те витĕмлĕ чĕлхе элеменчĕсемпе ылмаштарасси — куçарури творчество задачи.

Чĕлхери пĕлтерĕшсене илес пулсан вара, вĕсем тĕрлĕ чĕлхесен наци хăйевĕрлĕхĕпе тачă çыхăннă пирки куçарура пуринчен те сахалтарах сыхланса юлаççĕ. Грамматика катего-

рийĕсем пĕр килмен чухне вĕсене куçару чĕлхинче палăртма та май çук. Калăпăр, вырăс чĕлхинчи сăмахсен несĕл (род) категорийĕ, чăваш чĕлхинчи камăнлăх категорийĕ, ытти хăшпĕр чĕлхесенчи иккĕллĕ хисеп, паллăлăх категорийĕсем текста çав чĕлхесенчен урăх типологиллĕ чĕлхесене куçарнă чух çухалаççĕ. Анчах ку вăл куçарнă текстăн информаци пуянлăхне тата коннотаци ĕнерĕвне чакармасть, мĕншĕн тесен кирлĕ референт тата коннотаци пĕлтерĕшĕсене куçару чĕлхин урăх грамматика мелĕсемпе палăртса калама май килет.

Куçарура пĕлтерĕш тĕсĕсем пĕр пек сыхланманни текстсен жанр уйрăмлăхĕсемпе содержанийĕнчен нумай килет. Калăпăр, информаци пĕлтерес тĕллевпе çырнă наука текстне куçарнă чухне референт пĕлтерĕшĕ тĕп вырăнта тăрать, кунта коннотаци сĕмĕсем пачах пулмаççĕ темелле. Илемлĕ произведенисене куçарнă чухне вара кăмăл-туйăма палăртасси, стиль уйрăмлăхĕсене сыхласа хăварасси питĕ пысăк вырăн йышăнать, урăхла каласан, коннотаци пĕлтерĕшĕсене палăртасси тăлмача ытларах шухăшлаттарать. Ку ыйтусем çинче эпир пособин малаллахи пайĕнче тĕплĕнрех чарăнса тăрăпăр.

ОЧ формине сыхласа хăварас туртăм (вăл опытсăр тăлмачсен куçарăвĕнче питĕ хытă палăрать) усăсăр кăна мар, сиенлĕ те, мĕншĕн тесен ун пек туртăм вăй илнĕ чухне куçару тексчĕ содержани тĕлĕшĕнчен чухăнланать, унăн илемлĕхĕ, чĕлхе килĕшӳлĕхĕ чакать. Шăпах çакăнта тымарланса вăй илет ĕнтĕ буквализм. Тĕслĕхшĕн час-часах тĕл пулакан пĕр йăнăша илсе кăтартар. Паллă ĕнтĕ, пайăр мар нумайлăха чăваш чĕлхинче пĕрреллĕ хисеп формипе палăртаççĕ, хисеп ячĕсемпе çыхăнтарса каланă чухне те çав формăпах усă кураççĕ. Анчах, вырăс чĕлхинчи нумайлă хисеп форми хыççăн кайса, хăшĕсем чăвашла та вырăс текстĕнчи пек калаççĕ: «вăрманта йывăç нумай» вырăнне — «вăрманта йывăçсем нумай», «класс тулли ача» вырăнне «класс тулли ачасем» т. ыт. те.

Çак сыпăка вĕçлесе, тăлмачсем ОЧ сăмахĕсен референт тата денотат пĕлтерĕшĕсене кирлĕ пек пĕлмен пирки, çырса кăтартакан ситуацие, унти мĕнпур условисене ăнланса çитмен е уяман пирки час-часах йăнăш туни çинчен калас пулать. Кашни чĕлхен сăмах пуянлăхĕ пысăк. Тăтăшах тĕл пулакан, пурте пĕлекен сăмахсемсĕр пуçне текст авторĕн чĕлхинче сайра, кивĕ, манăça тухнă е уйрăм социаллă ушкăнсемпе калаçусенче çеç усă куракан лексика единицисем пулаççĕ. Вĕсене чухăм, лайăххăн пĕлмесĕр куçарни вара камитле йăнăшсем патне илсе çитерет е содержание хытă пăсать.

Акă хăшпĕр тĕслĕхсем. М. А. Шолоховăн «Уçнă çерем» романне куçаракансем (1959) пĕр эпизодра «одна из девок..., пырская в завеску» сăмахсене «хĕрсенчен пĕри..., чаршава хумхатса», тесе куçарнă. Тĕрĕссипе *пырскать* глагол вăрттăн

е шăппăн, пытарăнчăклăн кулнине, диалект сăмахĕ *завеска* саппуна пĕлтерет. Çапла ĕнтĕ, автор кунта хĕр, хăй кулнине пытарас тесе, тути-çăварне саппунпа хуплани çинчен каланă. Çав текстрах *храп* сăмаха *сăмса* тесе куçарнă, анчах автор лаша ӳрчи çинчен каланă: вырăсла *храп* синонимĕ — *загривок*. «Как рыбы на нересте» тенине «сĕрекене лекнĕ пулăсем пек» тесе «çавăрса хунă», «вăлча сапакан пулăсем пек» темелле пулнă. «Обратав лошадь» сăмахсем, тăлмачсене ĕненсен, «лашине ыталаса лăпкарĕ» тенине пĕлтерет имĕш. Анчах *оброть* вăл чăвашла *нахта, обратать — нăхтала*. «Бурьян-железняк» тенине «хытхура — тимĕр тăпри курăкĕ» тесе ăнлантарнă куçарура. Вырăс диалекчĕсенче *железняк* тесе ĕне çилли хытнине имлемелли курăка калаççĕ (мĕншĕн тесен чир ячĕ — *железница*). Украинецсемпе кӳршĕллĕ пурăнакан вырăссем *взвар* тесе типĕ улма-çырларан сахăрсăр пĕçерекен компота калаççĕ, ăна сивĕлле квас вырăнне ĕçеççĕ. Чăвашла куçарура вара ăна пĕр çĕрте *вĕри апат*, тепĕр çĕрте *яшка* тенĕ, «взвар был сладкий» тенине те «яшки тутлă пулчĕ» тесе куçарнă.

Куçаруçăсем пĕлӳ çитменнине харпăр чухлавĕпе, пĕрешкел сăмах пĕлтерĕшне сĕмленнипе саплама хăтланнă та чăнлăхран юснă. Тĕрĕссипе *завеска — занавеска* сăмахпа, *храп — храпеть* глаголпа, *нерест — нерета* терминпа (чăвашла *нерете* — пулă тытмалли хатĕр), *обратать — обнять* е *брататься* сăмахсемпе, *железняк* — тимĕр тăприне пĕлтерекен омонимĕпе çыхăнман. *Взвар* япала ячĕ, паллах, *варить* глаголтан пулнă, анчах унăн пĕлтерĕшне те чуххăм каланипе тĕрĕс уçса парайман.

Текстра çырса кăтартакан ситуацие тĕплĕн пĕлсе çитме кирлине çакăн пек тĕслĕх çирĕплетсе парать. «Коммунизм ялавĕ» хаçатра (14.07.76) США-ра расистсене суд хӳтте илни çинчен калакан информацие куçарнă чухне «преступница апеллировала к «расовой солидарности» белых присяжных заседателей» пуплеве «преступница шурă ӳтлĕ присяжной заседательсем «тĕрлĕ раса çыннисемпе пĕр шухăшлă пулни» çине шаннă» тесе куçарнă. Тĕрĕссипе вара сăмах пачах урăхи — шурă ӳтлĕ расистсем пĕр-пĕрне хӳтĕлени, вĕсен пĕршухăшлăхĕ çинчен пырать. Информацире каланă тăрăх, суд негра вĕлернĕ шурă хĕрарăма тӳрре кăларнă. Çапла ĕнтĕ, кунта «тĕрлĕ раса çыннисен пĕршухăшлăхĕ» тени содержание пĕтĕмпех пăсса кăтартать.

Референтсем е денотатсем оригиналта тата куçару текстĕнче пĕр килменни нумай-нумай йăнăш тупсăмĕ пулса тăрать, çакă вăл куçарма тытăниччен автор текстне пĕр сăмах юлми ăнланса тĕплĕн тишкермелли çинчен калать[7].

[7] Бархударов Л. С. Асăннă ĕç, 29—36, 169—173 с; Рецкер Я. И. Асăннă ĕç, 31—37 с.

III СЫПĂК

КУÇАРĂВĂН ЛЕКСИКĂПА ФРАЗЕОЛОГИ ЫЙТĂВĔСЕМ

1. Эквивалентлă сăмахсемпе вариантлă тӳркилӳсем

Çӳлерех асăрхаттарнăччĕ ĕнтĕ, куçару процесĕнче сăмахпа еçлесси, кирлĕ лексика единици тупасси пысăк вырăн йышăнать. Ку тĕлĕшпе куçару оригиналлă творчествăран уйрăлса тăмасть темелле. Анчах авторăн сăмах шыравĕнче ирĕк пысăк, тăлмач вара, тĕпрен илсен, оригинал текстĕнче палăртнă картаран тухма пултараймасть.

Тĕпчевçĕсем куçарăвăн лексикăпа фразеологи ыйтăвĕсене тимлĕ тишкереççĕ. Библиографи списокĕнчи нумай кĕнĕкесенче шăпах çак ыйтусем тĕп вырăн йышăнаççĕ. В. С. Виноградов монографийĕн содержанийĕ вара пĕтĕмпех илемлĕ проза куçарăвĕнче тухса тăракан лексика ыйтăвĕсемпе çыхăннă[1].

Куçарăвăн лексика ыйтăвĕсем икĕ чĕлхе хушшинчи уйрăмлăхсем мĕн тери пысăк пулнипе тачă çыхăннă. Вырăс тата чăваш чĕлхисене илес пулсан, вĕсен лексика системисене танлаштарни çакна кăтартса парать:

а) вырăс сăмахĕсемпе танлаштарсан, чăваш лексика единицисем, уйрăмах пĕтĕм халăх сăмахлăхĕн фондне кĕрекен ушкăнсем, пĕлтерĕш конкретлăрах пулнипе уйрăлса тăраççĕ. Абстрактлă пĕлтерĕшлĕ сăмахсене чăвашсем ытти чĕлхесенчен нумай йышăннă, юлашки тапхăрта вĕсен иксĕлми çăлкуçĕ — вырăс чĕлхи;

ă) хальхи вырăс литература чĕлхин лексики чăваш лексикинчен нумай пуянрах; ку вăл вырăс чĕлхинче пур тĕрлĕ терминологи тата номенклатура системисем анлă аталаннипе çыхăннă. Сăмахран, хими отраслĕсен е космос техникин ятарлă номинаци единицисем çĕршер пинĕн шутланаççĕ пулсан, чăваш чĕлхине вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем, кулленхи хутшăнура çӳрекеннисем çеç кĕнĕ. Вырăс чĕлхин вырăнти калаçăвĕсенче диалектизмсем чăвашринчен вуншар та çĕршер хут нумайрах, мĕншĕн тесен çĕршыв талккăшне тата халăх йышне кура диалекчĕсем те питĕ нумай. Тĕрлĕ жанрлă текстсенче вара терминсемпе диалект элеменчĕсен тӳпи пысăк пулма пултарать;

б) ăнлавсене, япаласене палăртассинче вырăс чĕлхинче пĕрсăмахлăх туртăмĕ вăйлă: кашни объект валли чĕлхе уйрăм, ятарлă лексика единици тума тăрăшать (чăн та, терминологире çавăнпа пĕрлех анлă номинаци мелĕпе усă курасси

[1] Виноградов В. С. Лексические вопросы перевода художественной прозы. М.: Изд-во МГУ, 1978.

те вăйланать). Тĕслĕхсем: *подоконник, межа, треть, ужин, солнцепек, вынести, внести, Нечерноземье, Закавказье, Чувашия, средневековье* т. ыт. те. Чăваш чĕлхинчи авалтан пыракан туртăм — çĕнĕ ăнлавсене çĕнĕ лексика единици туса мар, чĕлхере пур сăмахсене çыхăнтарса палăртасси. Çӳлерех илсе кăтартнă вырăс сăмахĕсене, акă, чăвашла çапла куçарса калатпăр: *чӳрече янаххи, ана йăранĕ, пĕрре виççĕмĕшĕ, каçхи апат, хĕвел питти, илсе тух, илсе кĕр, Хура тăпраллă мăр зона, Кавказ леш енĕ, Чăваш çĕршывĕ, вăтам ĕмĕрсем.* Калас пулать, терминологи аталаннă май, вырăс чĕлхин витĕмĕпе пĕрсăмахлăх туртăмĕ юлашки вăхăтра чăваш чĕлхинче те вăйланса пырать. Çак процеса авалтан аталаннă хутлă сăмах пулăвĕн моделĕсем çăмăллатаççĕ (танл.: *урай, йĕкехӳре, çивитти, пӳртум, виръял* т. ыт. те);

в) пĕр ăнлавсенех (е япаласенех) палăртакан нумай сăмахсем икĕ чĕлхере семантика (пĕлтерĕшсен хисепĕ, вĕсен характерĕпе калăпăшĕ) тĕлĕшĕнчен чылай уйрăлса тăраççĕ. Ку уйрăмлăх ытти кирек мĕнле чĕлхесенче те пур. Историре чăваш чĕлхи вырăс чĕлхинчен сăмах нумай йышăннипе палăнă, кунсăр пуçне вырăс лексикин витĕмĕпе чăваш сăмахĕсен семантики те пуянланса пырать, вырăс сăмахĕсен моделĕсемпе çĕнĕ лексика единицисем — калькăсем хушăнсах пыраççĕ, ку шутра абстрактлă пĕлтерĕшлĕ сăмахсем тата ятарлă терминсем уйрăмах нумай;

г) чăвашсем нумаях та пулмасть пурте темелле ялсенче çĕр ĕçлесе пурăннă, çавăнпа та вĕсен чĕлхинче хресчен ĕçĕхĕлĕпе, йăли-халамĕпе çыхăннă сăмахсенчен нумайăшĕ пĕтĕм халăх усă куракан фонда кĕреççĕ-ха, стиль тĕлĕшĕнчен нейтраллă шутланаççĕ. Вырăс лексикинче вара вĕсен ытларах пайĕ профессионализмсен, калаçу сăмахĕсен, диалект элеменчĕсен е архаизмсен шутне кĕрет, стиль тĕлĕшĕнчен вĕсем урăх сĕм туяннă. Кунта вырăс диалекчĕсен кăткăс системи те палăрнах ĕнтĕ;

д) юлашки вăхăтра чăваш лексикине, уйрăмах унăн терминологи ушкăнĕсене, вырăс сăмахĕсем е вырăс чĕлхи урлă интернацилле элементсем йышлăн кĕреççĕ, пĕрешкел лексика фончĕ ӳссе пырать. Тепĕр енчен, чăвашсем хушшинче икчĕлхелĕх хăвăрт аталанать, çапла вара вĕсем вырăс текстĕсене ăнланасси çăмăлланать. Анчах çакăнпа пĕрлех тепĕр юрăхсăр йăла çуралать: чăвашла калаçнă чухнех нумайăшĕ уйрăм ăнлавсене, япаласене е шухăшсене вырăсла каласа палăртаççĕ — хутăш пуплев пулса каять.

Икĕ чĕлхе лексикине тĕплĕн танлаштарса тишкересси — хăйне уйрăм пысăк задача. Анчах вĕсене кĕскен пăхса тухни те текстсене вырăсларан чăвашла е чăвашларан вырăсла куçарнă чухне тăлмач умне лексикăпа çыхăннă нумай йывăрлăхсем тухса тăнине кĕретех кăтартать.

Вырăсла-чăвашла куçарура ытларах чухне оригиналти сăмаха чăваш текстĕнче те уйрăм сăмах тĕл килет (танл.: *ты — эсĕ, черный — хура, стой — тăр* т. ыт. те). Пĕр сăмаха темиçе сăмахпа куçарни те чылай тĕл пулать (çӳлерех *ă* пункта пăхăр). Контекстран килмен, ялан пĕр пĕлтерĕшпе çыхăнакан çакнашкал сăмах мăшăрĕсене **эквивалентлă тӳркилӳсем (е эквивалентсем) теççĕ.** Вĕсем кирек мĕнле куçарăвăн тĕп мăшкарĕ, тĕрекĕ пулса тăраççĕ, ОЧ тата КЧ тексчĕсенчи информаци пĕрпеклĕхне гарантилеççĕ. Чĕлхе системинче çирĕпленнĕ пирки вĕсене икĕ чĕлхеллĕ словарьсенче çырса кăтартаççĕ. Эквивалентлă тӳркилӳсене яланхи мар, улшăнчăк тӳркилӳсенчен — **контекстри тӳркилӳсенчен** уйăрас пулать: вĕсем, хутшăну условийĕсене тата коннотаци кура, питĕ нумай тĕрлĕ пулма пултараççĕ, çавăнпа та словарьсенче унашкал тӳркилӳсене çырса кăтартмаççĕ.

Эквивалентлă сăмах мăшăрĕсен лайăх тĕслĕхĕ — пайăр ятсем. Географи объекчĕсем, паллă çынсем т. ыт. пĕрреллĕ объектсем валли ытларах чухне икĕ чĕлхинче те хăйсен çирĕпленнĕ ячĕсем пулаççĕ, танл.: *Шупашкар— Чебоксары, Çавал — Цивиль, Ухсай Яккăвĕ — Яков Ухсай.* Вырăсларан куçарнă чухне эквивалентсен форми пĕр пек пулма та (сăмахран, *Памир, Урал, Новгород, Александр Сергеевич Пушкин*), грамматика паллисем тĕлĕшĕнчен кăштах «чăвашланма» та (сăмахран, *Франция—Франци, Апеннины—Апеннин, Комсомольское—Комсомольски*) пултарать. Форми чылай улшăнсан та (танл.: *Ростов-на-Дону — Дон-çи-Ростов, Новочебоксарск — Çĕнĕ Шупашкар, Янтиково — Тăвай*), икĕ чĕлхери тивĕçлĕ ятсем хушшинче тулли эквивалентлăх пурри курăнать.

Пайăр мар сăмахсене илес пулсан, эквивалентсем ытларах терминсен ушкăнĕсенче тĕл пулаççĕ: вĕсем пĕртен-пĕр çирĕп пĕлтерĕш пулнипе палăрса тăраççĕ, мĕнле те пулин отрасль терминологийĕнче яланах пĕр референтпа çыхăнса тăраççĕ.

Кулленхи хутшăну лексики, ялан тенĕ пекех, нумайпĕлтерĕшлĕхпе палăрса тăрать. Тĕпчевçĕсем çакна асăрханă: сăмахăн шалти форми кĕретех уçăмлă чухне вăл хăйĕн малтанхи пĕлтерĕшне сыхласа хăварать, семантика улшăнăвĕсем ăна тивсех каймаççĕ. Танл.: *наперсток* «пӳрнеске», *рыболовный* «пулă тытмалли», *алшăлли* «полотенце», *йĕкехӳре* «крыса» т. ыт. те. Куçарура çакна шута илменни сарăмсăр йăнăш тутарма пултарать. Çапла, пĕр хаçат тăлмачĕсем, паллă çынна пытарни çинчен калакан материалти «Прощай, наш дорогой товарищ!» пуплеве «Сывă пул, хаклă юлташăмăр!» тесе куçарнă. Вырăс глаголĕ *прощать(ся)* «каçарас» пĕлтерĕшпе çыхăннă (вăл уйрăлакансем, пĕр-пĕрин пирки усал шухăш ан юлтăр тесе, пĕрне пĕри каçарас йăларан юлнă). Ăна чĕрĕ çынсем сывпуллашнă чухне те, виле пытарнă чухне те калани вырăнлă. *Сывă пул* тенипе вара сывлăх суннине пĕлтерет, çак

уçăмлă шалти формине пула ăна калани виле пытарнипе ниепле те килĕшсе тăмасть.

Икĕ чĕлхери сăмахсен эквивалентлăхĕ тулли тата тулли мар пулма пултарать. Тулли эквивалентлă сăмахсен пĕтĕм семантики пĕр килет. Анчах нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсен семантика тытăмĕ кашни чĕлхере хăйне май аталанать, çавăнпа та вĕсем хушшинче тулли эквивалентлăх çав тери сайра тĕл пулать. Ытларах чухне ОЧ тата КЧ сăмахĕсен семантики пĕчĕкрех пайĕпе пĕр килет, пысăкрах пайĕпе уйрăлса тăрать. Акă, выр. *совет* тата чăв. *канаш* — эквивалентлă сăмахсем. Анчах *совет* сăмахăн «канаш» пĕлтерĕшсĕр пуçне «суйлавлă орган» тата «власть системи» пĕлтерĕшсем пур. *Канаш* сăмахăн ун пек пĕлтерĕшсем çук. Октябрьти революци хыççăн, калька мелĕпе усă курса, *канаш* сăмахăн семантикине сарма тăрăшни çирĕпленмен, вăл тапхăртан хула ячĕ *Канаш* çеç сыхланса юлнă. Юлашки икĕ пĕлтерĕше палăртма чăваш чĕлхинче вырăсран йышăннă *совет* сăмахпа усă кураççĕ.

Выр. *липа* «çăка» тата куçăмлăн «ултав» тенине пĕлтерет. Чăвашла ултавлă япалана *çăка* тесси çирĕпленмен. *Стол* вырăссемшĕн «сĕтел» çеç мар, тата «учреждени», «диета апачĕсем», «кĕреке», ĕлĕкрех тата «патша вырăнĕ» те пулнă. Иккĕмĕш пĕлтерĕшĕ чăваш чĕлхине те куçнă (танл. *паспорт сĕтелĕ*), юлашки пĕлтерĕшĕсем *сĕтел* сăмахшăн ют. Чăв. *йĕп* сăмах, вырăсла куçарсан, «игла» çеç мар, унăн тепĕр пĕлтерĕшĕ — «стрелка часов». *Палец* «пӳрне» сăмахпа усă курса, вырăс чĕлхинче *палец поршня* термин тунă, чăвашла ăна *поршень пӳрни* темĕстпĕр.

Тан пĕлтерĕшлĕ сăмахсен коннотацийĕ те пĕр килсен, вĕсене **абсолютлă эквивалентсем** теççĕ (танл.: *вăл — он, дрянь — йĕксĕк, душенька — чунăмçăм*). Анчах тан пĕлтерĕшлĕ сăмахсен коннотацийĕ, модаллĕхĕпе стиль сĕмĕ час-часах урăхла пулать, кун пек сăмахсем — **абсолютлă мар эквивалентсем**. Çӳлерех хресчен лексики вырăс тата чăваш чĕлхисенче тĕрлĕ вырăн йышăнни çинчен каланăччĕ ĕнтĕ. Çавна пула, сăмахран, чăваш чĕлхинче *такана, серте, уйран, чӳлĕк* йышши сăмахсем нейтраллă лексика ушкăнне кĕреççĕ, тивĕçлĕ вырăс сăмахĕсем *начевки, сныть, пахтанье, супонь* е диалектизм, е çурри манăçнă калаçу сăмахĕ шутланаççĕ. Нумай чухне эквивалентлă сăмахсем туллилĕх тĕлĕшĕнчен те, коннотаци пĕлтерĕшĕпе те уйрăлса тăраççĕ. Куçару ĕçĕнче çак уйрăмлăхсене асăрхас пулать.

Эквивалент пулсан, сăмаха куçарасси йывăрах мар, коннотаци пĕр килменни кăна йывăрлăх кăларса тăратать. Анчах вырăс сăмахне тӳр килекенни чăваш чĕлхинче пĕрре мар, темиçе те пулма пултарать. Е чăваш сăмахне вырăсла тĕрлĕрен куçарма пулать. Çавнашкал ушкăнлă тӳркилӳсене **вариантлă тӳркилӳсем** теме йышăннă. Словарьсенче час-часах тĕрлĕ ва-

риантсене тепĕр чĕлхе сăмахĕн хăйне уйрăм пĕлтерĕщĕсем тесе кăтартаççĕ. Тĕрĕссипе вара кунта нумайпĕлтерĕшлĕх мар, урăхла пулăм: ОЧ сăмахĕн пĕлтерĕшĕ анлă, вăл йышлăрах паллăсене е объектсене пĕрлештерсе тăрать, вĕсене уйăрмасăр палăртать, çавна пула ĕнтĕ ăна куçарнă чухне КЧ лексикинче темиçе тӳркилӳ те тупăнать.

Тĕслĕхсем. Вырăсла *окотиться* глагол тĕрлĕ йышши ама чĕрчун çура тунине пĕлтерет. Чăвашла кушаксем, мулкачсем, кроликсем çинчен *çăвăрла,* сурăхсем, качакасем çинчен *пăранла* теççĕ. Тепĕр енчен, *çăвăрла* глагол та анлă пĕлтерĕшлĕ, вырăсла мĕнле чĕрчун пирки сăмах пынине кура, ăна *окотиться* тесе çеç мар, çавăн пекех *ощениться* (йытă йышши чĕрчунсем çинчен), *опороситься* (сысна çинчен) тесе куçарма тивет. Куçарура мĕнле варианта суйласа илесси вара, паллах, контекстран килет. Сăмахран, вырăс текстĕнче «овца окотилась» тенĕ пулсан, «сурăх пăранланă» тетпĕр («çăвăрланă» мар!). Выр. *корыто* семантикине нумай чăваш сăмахĕсем палăртаççĕ: *валашка, такана, курите, кулата, шан, кункăра.* 1982 çулта Мускавра тухнă «Чăвашла-вырăсла словарьте» çак пулăма тĕрĕс сăнласа пама тăрăшнă: анлă пĕлтерĕшсене пĕр çĕрлĕн, темиçе пĕлтерĕше уйăрмасăр çырса кăтартнă.

Икĕ чĕлхерен пĕринче çав ăнлава уйăрмасăр, пĕр сăмахпа тата уйăрса, темиçе сăмахпа палăртни пулать. Акă, выр. *ехать* е *идти* йышши глаголсен семантикинче ĕç ăçталла (калаканран шутласан) пулса пынине кăтартни çук, чăвашла вара çав паллăна кăтартса калаççĕ: *кил* (калакан патнелле), *кай* (калакан патĕнчен), *пыр* (кам та пулин патне) т. ыт. те. Тĕссен спектрне сăмахпа каласа палăртассинче чĕлхеçемĕн ăрасналăх нумай пулать. Вырăс чĕлхинче тата Европа чĕлхисенче тĕп тĕссене çеç мар, вĕсен сĕмĕсене те уйăрса каласси çирĕпленнĕ. Тĕрĕк чĕлхисенче вара урăхла йĕрке. Калăпăр, «синий», «голубой», «фиолетовый», «серый», «зеленый» пĕлтерĕшсене, урăхла каласан, спектрăн пысăк пайне уйăрмасăр пĕр *кӧк* сăмахпах палăртаççĕ. Чăв. *кăвак* пĕлтерĕшĕ те çавнашкалах, вăл «зеленый» тенине çеç пĕлтермест, мĕншĕн тесен ку функцие иран чĕлхинчен йышăннă *симĕс* сăмах пурнăçлать.

Çак ретрех чăваш чĕлхинче анлă сарăлнă евĕрлев мелĕ тăрать. Вырăс чĕлхинче те евĕрлесе каланă сăмахсем, вăл шутра глаголсем чылай, анчах чăваш евĕрлевĕсем вариантсемпе питĕ пуян. Акă, *шуршать* глагола чăвашла *чаштăртат, чăштăртат, кăшăртат, каштăртат* тесе тата ытти майпа та куçарма пулать.

Çӳлерех сăмахăн шалти форми пĕлтерĕше упрама пулăшни çинчен каланăччĕ. Сăмах майлашăвĕн шайĕнче çакă тата лайăхрах палăрать. Аçа илер-ха, сăмах вăл — ансăр номинаци единици, унăн пĕлтерĕшĕнче пĕтĕмлетӳ туртăмĕ вăйлă. Çав

пĕлтерĕше кирлĕ пек пайăрлатма эпир ун çумне определени функциллĕ тепĕр сăмах хушатпăр, вара номинаци единицин тытăмĕ кăткăсланать, анлăланать, пĕлтерĕшĕ вара ансăрланать. Çакна ирĕклĕ (е синтаксис) сăмах майлашăвĕсем çинчен те, çирĕп пĕтĕçнĕ майлашусем çинчен те каламалла. Сăмахран, выр. *собака* «йытă» нумай ăрата пĕлтерме пултарать. Функцине пайăррăн палăртса вара йытăсен ушкăнĕсене *охотничьи собаки* «сунар йыттисем», *сторожевые собаки* «хурал йыттисем», *комнатные собаки* «пӳлĕм йыттисем» теççĕ т. ыт. те.

Куçарура сăмах майлашăвĕ е анлă ят тепĕр чĕлхери уйрăм сăмаха тӳр килни час-часах пулать. Акă, вырăс чĕлхинче чĕрчун, кайăк çури-чĕпписене ятарлă лексика единицисемпе палăртаççĕ, чăваш чĕлхинче çавнашкал сăмахсем те (танл.: *теленок — пăру, жеребенок — тиха*), пайăрлатуллă майлашусем те пур (танл.: *поросенок — сысна çури, гусенок — хур чĕппи, олененок — пăлан пăрушĕ* т. ыт. те). Чăв. *вите* пĕлтерĕшĕ пĕтĕмĕшле, анлă пулнă пирки унашкал хуралтăн конкретлă тĕсне ятарласа палăртма тивет (танл.: конюшня — *лаша вити, коровник — ĕне вити, овчарня — сурăх вити, птичник — чăх-чĕп вити* т. ыт. те). Анлава контекст ыйтнă пек тĕрĕс те пайăррăн уçса пама куçарура çавăн пек мелпе анлăн усă кураççĕ.

Куçаруçăсем тепĕр чухне анлă ятсен пуплеври пĕр уйрăмлăхне шута илмеççĕ: текстра çине-çинех тĕл пулнă чухне вĕсен пайăрлату элементне пирвайхи хут каласан çитет, малалла унсăр та ăнланмалла пулать. Сăмахран, *мальчик* сăмаха пĕрмаях *арçын ача* тесе куçарни текста йывăрлатать, стиль килĕшӳлĕхне пăсать. Малаллахи предложенисенче *ача* тесе калани те çителĕклĕ. Хутлă сăмах пайĕсене вара, паллах, ун пек каламасăр хăварма çук.

2. Лексика трансформацийĕсен тĕсĕсем

Куçарури трансформаци тесе референт тата коннотаци пĕлтерĕшĕсене сыхласа хăварса текстăн чĕлхе формине (чĕлхери пĕлтерĕшпе çыхăннине) иккĕмĕш чĕлхе формипе ылмаштарнине калаççĕ. Грамматика шайĕнче трансформацисем уйрăмах кĕрет курăнаççĕ, анчах ытти шайсенче те вĕсем куçару процесĕн тĕп никĕсĕ пулса тăраççĕ. Чĕлхе системин кашни шайĕнче трансформацисем хăйне майлă уйрăмлăхсемпе палăрса тăраççĕ (танл.: транскрипципе транслитераци, калькăлав, синтаксис ылмаштарăвĕсем т. ыт. те).

Лексика трансформацийĕ — ОЧ сăмахĕн пĕлтерĕшне контекстра иккĕмĕш чĕлхен яланхи (урăхла каласан, словарьте кăтартакан) тӳркилĕвĕпе мар, урăх лексика единицисем пулăшнипе уçса пани. Шухăшлавăн логика мелĕсемпе усă курса, çав кирлĕ пĕлтерĕше вулакан ăстăнне çитерме тăлмач

шалти форми тĕлĕшĕнчен ăрасна сăмаха е сăмах майлашăвне суйласа илет. Çапла вара эквивалентсем тата вариантлă тӳркилӳсем чĕлхесен системинче çирĕпленнĕ семантика пулăмĕсен шутне кĕреççĕ пулсан, трансформацисен тупсăмĕ — пуплевре, вĕсем пĕтĕмпех контекст условийĕсенчен килеççĕ.

Лексика трансформацийĕсем темиçе тĕрлĕ пулаççĕ; куçарура вĕсем уйрăмшарăн та, пĕр-пĕринпе хутăшса та палăраççĕ. Чи тăтăш тĕл пулакан лексика трансформацийĕсен тĕсĕсем — уйăру (дифференциаци), пайăрлату (конкретизаци), пĕтĕмлетӳ (генерализаци), ăнлава аталантарса куçарни. Трансформацисен сайрарах тĕл пулакан тĕсĕсем — антонимла куçару, пĕлтерĕш туллимарлăхне саплани е компенсаци[2]. Лексика трансформацийĕсем ăнлавсем хушшинчи логика çыхăнăвĕсем çинче никĕсленсе тăраççĕ. Тĕрлĕ халăх çыннисен шухăшлав аппарачĕ пĕр пек пулнă пирки çак трансформацисем кирек хăш чĕлхерен куçарнă чухне те тĕл пулаççĕ.

Пĕлтерĕшсене уйăрса куçарни. ОЧ сăмахĕ анлă пĕлтерĕшлĕ, пĕтĕмĕшле ăнлава палăртать, куçару чĕлхинче вара ăна ансăртарах пĕлтерĕшлĕ темиçе сăмах тӳр килет. Словарьте вĕсене пурне те кăтартса çитерме йывăр. Текстра, конкретлă предложенире, ситуаци хушнă тăрăх пайăр пĕлтерĕшлĕ пĕр тӳркилĕве тупма тивет. Çапла вара ОЧ сăмахĕн семантикинчи хăшпĕр элементсем (вĕсене пĕлтерĕшĕн пайланман единицисем — семăсем теççĕ) палăрмасăр юлаççĕ. Кирлĕ сема, вĕсенчен уйрăлса, дифференциленсе, куçару контекстне куçать.

Çӳлерех илсе кăтартнă тĕслĕхсенчен выр. *корыто,* чăв. *кăвак* сăмахсене аса илер. Вĕсен КЧ контекстĕнчи кирек хăш тӳркилĕвĕн семантика калăпăшĕ ОЧ сăмахĕнчен пĕчĕкрех. Е, калăпăр, вырăс текстĕнче «Мы запаслись на зиму топливом» предложени тĕл пулать. Чăваш чĕлхинче халĕ *топливо* термин пур, анчах вăл çырууллă жанрсенче çеç çӳрет, кулленхи пуплевре тĕл пулсах каймасть. Пĕр-пĕр предприяти çинчен каланă чухне унпа усă курни вырăнлă та пулĕ, анчах килçуртри ĕç-пуç çинчен сăмах пынă çĕрте чăвашла топливăн конкретлă тĕсне кăтартни контекстпа килĕшет, кунта *вутă, вутă-шанкă, торф, брикет, кăмрăк, киçек* сăмахсенчен пĕри кирлĕ пулма пултарать.

Кунашкал тĕслĕхсенче, анлă пĕлтерĕш уйрăм элементсене, семăсене уйрăлнисĕр пуçне, тата иккĕмĕш йышши трансформацие — пĕлтерĕше пайăрлатса куçарнине куратпăр. Чăнах та, пĕтĕмĕшле ăнлава уйăра-уйăра куçарни пĕлтерĕше яланах ансăрлатать тата пайăрлатать, конкретлăрах тăвать. Унсăрăн автор асра тытнă референта палăртма йывăр пулнă

---

[2] Бархударов Л. С. Асăннă ĕç, 210—231 с.; Комиссаров В. Н. Асăннă ĕç, 37—42 с.; Рецкер Я. И. Асăннă ĕç, 38—63 с.

пулĕччĕ. Чăв. *кăвак* сăмаха вырăсла шăпах çавăн пек пайăрлатса — е *синий*, е *голубой*, *е серый* тесе, контекста кура вара *багровый*, *лиловый*, *васильковый* тесе е урăх майлă та куçарма тивет. Выр. *тело* — чăв. *ӳт* çеç мар, *ӳт-пӳ*, *пӳ-си*, *çанçурăм*, *хул-çурăм*, *кĕлетке* т. ыт. те, кашни тӳркилĕвĕн конкретлă пĕлтерĕш сĕмĕ пур. Чăв. *апатлан*, *апат çи* тенине, вăхăта палăртса, *завтракать*, *обедать*, *полдничать*, *ужинать* тесе куçаратпăр. Выр. *осадки* — чăв. *çумăр*, *юр*, *пăр*, *ӳĕпхӳ*; *населенный пункт* — *хула* е *поселок*, *ял* т. ыт. те, пĕтĕмлетӳллĕ мăшăр сăмах *хула-ял* та вырăс терминĕн семантикине пĕтĕмпех витеймест.

Акăлчан сăмахĕ student пирĕншĕн пĕр «студент» пĕлтерĕшлĕ çеç пулнăн туйăнать, мĕншĕн тесен унăн семантики вырăс чĕлхинче те çавнашкал ансăр. Анчах акăлчан чĕлхинче унăн пĕлтерĕшĕсем — «студент», «вĕренекен», «тĕпчевçĕ». Акăлчансен mount сăмахне те пайăрлатмасăр куçарма май килмест: унăн пĕтĕмĕшле анлă пĕлтерĕшне («йĕнерлесе çӳремелли чĕрчун») палăртма вырăс тата чăваш чĕлхисенче тивĕçлĕ лексика единици çук. Контекста кура кунта *лаша*, *ут*, *ашак*, *верблюд*, *мул* т. ыт. те пулма пултараççĕ.

Пĕлтерĕш пĕтĕмлетĕвĕ (генерализаци) — çӳлерех илсе кăтартнă икĕ меле хирĕçле трансформаци тĕсĕ. Вăл ОЧ лексикин пайăр, ансăр пĕлтерĕшлĕ сăмахне КЧ текстĕнче анлă пĕлтерĕшлĕ сăмахпа куçарнинче палăрать. Çапла ĕнтĕ, çӳлерехри мĕнпур тĕслĕхсене тепĕр майлă çавăрсан, пĕтĕмлетӳ пулнине куратпăр: выр. *синий* (е *голубой*, *серый* т. ыт. те) — чăв. *кăвак*; чăв. *курите* (е *валашка*, *кункăра*, *такана* т. ыт. те) — выр. *корыто*. Хаçат-журнал тексчĕсенче час-часах *курс*, *направление*, *путь*, *ориентация* сăмахсем тĕл пулаççĕ, чăвашла вĕсене пĕр пек — *çул-йĕр* тесе куçаратпăр. Вырăс чĕлхинче выльăх кĕтекенсен конкретлă ячĕсем нумай: *пастух*, *чабан*, *овчар*, *гуртоправ* т. ыт. те, чăвашла вĕсем пурте — *кĕтӳçĕ*.

КЧ текстĕнчи анлă пĕлтерĕш ОЧ сăмахĕн конкретлăхне ытла та çухатса ярать, референта тĕрĕс ăнланма чăрмантарать пулсан, куçарура пайăрлату сăмахĕсем хушма тивет. Сăмахран, *конюшня* сăмаха *вите* тесе мар, *лаша вити* тесе, *крупеник*, *солянка* йышши сăмахсене *яшка* тесе мар, *кĕрпе яшки*, *йӳç хăяр яшки* тесе куçарма пулать т. ыт. те.

Анлава аталантарса куçарас мел чĕлхесен типологи, аталану шайĕ тата халăхсен культура традицийĕсем хытă уйрăлса тăнă чухне уйрăмах кирлĕ. Вырăсла-чăвашла куçарура та вăл пысăк вырăн йышăнать. Ку мел тупсăмĕ—КЧ тӳркилĕвĕ мĕнле те пулин сăлтава пула ОЧ сăмахне куçарма юрăхсăр пулсан, ăна контекстпа килĕшекен урăх сăмахпа ылмаштарнинче. Çакна май референтăн тĕп пĕлтерĕшĕ сыхланса юлмалла. Ылмашу тумалли никĕс — сăмахсен пĕлтерĕшĕсем хушшинчи логика çыхăнăвĕсем. Çавăнпа та кунта тĕрлĕрен

метафорăсемпе метонимисем, пĕр-пĕр япала вырăнне унăн паллине, ĕç вырăнне унăн результатне кăтартни е тепĕр майлă ылмаштарнисем час-часах тĕл пулаççĕ.

Выр. *бестия, плут, пройдоха* йышши сăмахсене пĕр референт «чее ултавçă» пĕрлештерет. Анчах кун пек каласан, коннотаци оригиналти пек пулмасть, куçару стильпе сăнарлăх тĕлĕшĕнчен вăйсăрланать. Çавăнпа та чăвашла *тилĕ* тесе куçарни çак çитменлĕхе сирме пултарать. Çавнашкалах выр. *обжирается* тенине чăвашла *нумай çиет* тесе куçарни кирлĕ стиль сĕмне палăртаймасть. Анлава аталантарса тепĕр майлăрах — *шампа хырăм* тесен, кăмăл-туйăм экспрессийĕ те, «çăткăнлăх, пахмăтсăрлăх» пĕлтерĕш те туллин сăнланать.

Текстра сăмахăн, кĕретĕн каламан ăнлав е шухăш оригиналта контекстран паллă, куçарнă чухне çав пĕлтерĕш уçăмлăхĕ çухалма пултарать. Ун пек чухне тăлмачăн кирлĕ шухăша сăмахпа каласах уçса пама тивет. Кун йышши трансформацие пула текстра оригиналта пулман сăмах çаврăнăшĕсем, ăнлантарусем хутшăнаççĕ. Тĕслĕхсем илер. Калăпăр, вырăсла текстри диалогра çапла каланисем тĕл пулаççĕ: «Ну как, поели?» Хурав: «Спасибо». Куçарма ансат ку репликăсене. Анчах, ситуацие кура, хуравне чăвашла эквивалентпа «Тавтапуç» тесе куçарсан, иккĕлле ăнланма пулать. Хуравлакансем тутă, çиесшĕн мар пулсан, репликăна «Тавтапуç, çиес килмест» е «Тавтапуç, выçман-ха» тесе йĕркелеме тивет. Апатне çинĕ пулсан, «Тавтапуç, çирĕмĕр» тесе хуравлама пулать.

Диалогра çеç мар, автор калăвĕнче те кĕскетнĕ, эллипслă пуплевсем час-часах тĕл пулаççĕ, мĕншĕн тесен хăшпĕр ăнлавсене, пĕлтерĕш сĕмĕсене ятарлă формăпа палăртмасăр каласси — тĕрлĕ чĕлхесенче анлă сарăлнă пулăм. Акă, акăлчан текстĕнче «I began the book» йышши пуплевсем тăтăшах тĕл пулаççĕ. Тăррĕн куçарсан, «Я начал книгу», чăвашла «Эпĕ кĕнеке пуçларăм (е тытăнтăм)» пулса тухать. Паллах, кун пек куçарма май килмест. Контекстпа ситуаци тарăх çак пуплевпе палăртакан ĕç темĕн тĕрлĕ пулма пултарать: кĕнеке вулама е çырма, тĕпчеме, хуплашкалама, юсама, конспектлама тытăнни т. ыт. те. Куçарура вăл ĕçе пайăррăн калама тивет.

Чăваш чĕлхинче те çавна майлă тĕслĕхсем пулаççĕ. Калăпăр, улаха çырса кăтартакан эпизодра «Хĕр кĕпе тытса ларчĕ» предложени тĕл пулать. Вырăсла ăна «Девушка взяла в руки платье» е «Девушка уселась, взяв платье» тени референта уçса паман тăртенлĕх çеç пулĕччĕ: чăннипе хĕр кĕпене ахальшĕн мар — тĕрлеме е çĕлеме, саплама, сăтме тытса ларать. Вырăсла çавна хушса калас пулатех.

Анлава сăмахпа палăртмасăр каланине кăтартакан лайăх тĕслĕх — вырăс чĕлхинчи предлогла, глаголсăр ят сăмах

майлашăвĕсем, тĕслĕхрен: *наука о природе, двигатель на твердом топливе, бег с препятствиями, колхоз имени Кирова, поход по местам боевой славы.* Вĕсене чăвашла куçарнă чухне, уйрăмах контекстра, ялан тенĕ пекех пĕлтерĕшĕпе юрăхлă глагол хушма тивет: *çутçанталăка тĕпчекен наука, хытă топливăпа ĕçлекен двигатель, чăрмавсем урлă каçса чупни, Киров ячĕпе хисепленекен колхоз, çăпăçу мухтавĕн вырăнĕсенче ирттерекен поход* т. ыт. те.

Оригинал чĕлхинче сăмахпа каламасăр (эллипсис е компресси мелĕпе) палăртнă ăнлава куçарура пайăррăн уçса пама кирли терминологире тăтăшах тĕл пулать. Акă, *безъядерная зона* тенине *ядерсăр зона* тесе те, *ядросăр зона* тесе те калама май килмест — *ядерлă хĕçпăшалсăр зона* тесе куçарма тивет. Çавнашкалах *краснознаменный—хĕрлĕ ялавлă* мар, *Хĕрлĕ Ялав орденлĕ* т. ыт. те.

Куçарури хушăмсем чылай чухне ОЧ текстĕнче сăнланнă нации культурипе йăла элеменчĕсене вулаканшăн ăнланмалла тума кирлĕ. Кашни халăхăн хăйне евĕрлĕ культура информацине **фон пĕлӳлĕхĕ** (фоновые знания) теççĕ. Ют халăх çыннисен вăл информаци, вăл пĕлӳлĕх çук, çавăнпа та куçарура йывăрлăхсем тухса тăраççĕ. Ирĕксĕрех хушса калама, пĕлмен референтсене «уçăлтарма» тивет. Çапла майпа тăлмачсем вулаканăн фон пĕлӳлĕхĕ çитменнине саплаççĕ. Сăмахран, чăвашла текстсенчи *шăрттан, чăкăт, шӳрпе, масмак, сурпан, киремет, йĕрĕх, хыпарçă, капкăнçă* е *Кукша Иван, Лапшу Çтаппанĕ, Ашапатман карчăк* йышши элементсене чăвашсем хăйсем ятарласа ăнлантармасăрах пĕлеççĕ, ытти чĕлхесене куçарнă чухне вара ăнлантарусем е ылмашусем тума тивет. Вырăс чĕлхинчен ют çĕршыв чĕлхисене куçарнă чух совет пурчăç йĕркипе çыхăннă нумай-нумай ахаль сăмахсемпе терминсене ăнлантарма тивет, сăмахран, *сельсовет, народный контроль, пионерлагерь, КВН, ДНД, ДОСААФ* т. ыт. те. Вырăсла-чăвашла куçарура ку йывăрлăхсен вăхăчĕ иртсе кайнă ĕнтĕ, мĕншĕн тесен çĕнĕ пурнăç паллисене сăнлакан сăмахсем пирĕн чĕлхене çирĕп кĕрсе вырнаçнă, референчĕсене хăйсене те эпир лайăх пĕлетпĕр.

Тепĕр икĕ тĕслĕх акăлчан чĕлхинчен. США ра çын çӳлĕшне футпа (30 сантиметра яхăн) тата дюймпа (3 сантиметра яхăн) палăртасси йăлана кĕнĕ. Калăпăр, питĕ çӳлĕ, икĕ метрлă çынна — 6 фут та 7 дюймлă, питĕ пĕчĕккине 5 футран та ытла мар теççĕ т. ыт. те. Ытти чĕлхесенче ун пек пайăррăн калас йĕрке çук. Вырăсла ун пек чухне е нейтраллă майпа *свыше двух метров ростом* тесе, е коннотацие кура, *долговязый, каланча, настоящий великан* теме пултараççĕ. Чăвашла та çавнашкал куçару варианчĕсемех пулма пултараççĕ. США па Англире адреса кăтартнă чухне штат е графство, хула тенипе пĕлтерекен сăмахсене çырмаççĕ, калăпăр, Калифорни шта-

тĕнчи Окленд хулине конверт çине: Oakland, California тесе çеç кăтартаççĕ. Вырăсла е чăвашла куçарнă чухне *штат, город* (е *хула*) сăмахсем хушма тивет.

Сайрарах чухне куçарура сăмах хушни мар, оригиналта пур лексика единицине кăларса пăрахни те пулать. Çак мелпе усă курнин сăлтавĕ — куçару текстĕнче пĕр-пĕр элемент семантика тĕлĕшĕнчен ытлашши пулни, сăмах сыхăнăвĕсене вырнаçманни е стиль требованийĕсене тивĕçтерменни[3]. Анлă терминсене вырăсларан чăвашла куçарнă чухне час-часах 2-мĕш изафет моделĕпе е атрибутивлă сăмах майлашăвĕпе усă кураççĕ, вĕсем ытларах виçĕ компонентлă мар, икĕ компонентлă пулаççĕ. Урăхла каласан, куçарнă май пĕр компоненчĕ каланмасăр юлать. Паллах, референт пĕлтерĕшĕ улшăнмасан çеç çапла трансформаци тума май килет. Тĕслĕхрен, *ракеты стратегического назначения* термина чăвашла «назначение» пĕлтерĕшлĕ сăмахсăр куçарса каласан лайăхрах: *стратеги ракетисем* е *стратегилле ракетăсем. Зона жизненных интересов* тенине *пурнăçшăн кирлĕ зона* теме пулать, «интересы» пĕлтерĕшлĕ компонент сиксе юлать.

Антонимла куçару мелĕн тупсăмĕ акă мĕнре: подлинникра каланă пĕр-пĕр ăнлава куçарура хирĕçле ăнлавпа ылмаштараççĕ, сăмах форми тĕлĕшĕнчен çакă антоним пулать. Анчах шухăша пăсасран çав антоним çумне хирĕçлев, çуклăх пĕлтерĕшлĕ элемент хушаççĕ. Ку мел тĕллевĕ — текстăн кăмăлтуйăм ĕнерĕвне вăйлатасси, оригинал шайне çитересси. Сăмахран, «Войска прочно удерживают позиции» пуплеве çав калăппах куçарма пулать: «Çарсем позицисене çирĕп тытса тăраççĕ». Контекста кура, вирлĕрех илтĕнтĕр тесе, çапла калама пулать: «Çарсем йышăннă позицирен пĕр утăм та чакмаççĕ» е «Тăшман пĕр позицие те тытса илеймерĕ» т. ыт. те. Пĕрремĕш вариантĕнче, оригиналти пекех, çирĕплетӳ формиллĕ предикат, иккĕмĕшĕпе виççĕмĕшĕнче — хирĕçле пĕлтерĕшлĕ, анчах çуклă формăллă предикатсем (танл.: *тытса тăраççĕ — чакмаççĕ, илеймерĕ*). «Я свободный человек» тенине антонимла мелпе «Эпĕ чура мар» тесе куçарма пулать. Çӳлерех эпир *абсолютлă эквивалентсем* тата *абсолютлă мар эквивалентсем* терминсемпе усă куртăмăр. Вĕсенчен пĕрремĕшне вырăсларан çаплипех куçарнă *(абсолютный эквивалент)*, иккĕмĕшĕнче антонимла ылмашу тунă, мĕншĕн тесен *относительный эквивалент* терминăн пĕрремĕш компонентне *танлаштарулă* тесе куçарни кунта вырăнах килмест. Çапла вара *относительный* вырăнне унăн антонимне илетпĕр те хирĕçлев сăмахĕ хушатпăр, *абсолютлă мар* пулса тухать.

Хирĕçлев, çуклăх формине çирĕплетӳ формипе те çавнашкалах ылмаштарма пулать. Тĕслĕх: «Предприятире ним йĕр-

---

[3] Бархударов Л. С. Асăннă ĕç, 226—231 с.

ки çук» тенине вырăсла «На предприятии нет никакого порядка» тесе тӳррĕн куçарма та пулать, анчах антонимла трансформаци пуплеве вăйлăрах янăратать: «На предприятии царит полный беспорядок».

Çӳлерех илсе кăтартнă тĕслĕхсенче тăлмач вариантсене хăй ирĕккĕн суйласа илме пултарать. Анчах тепĕр чухне, икĕ чĕлхе системин уйрăмлăхĕсене кура, формипе адекватлă тӳркилӳ пулмасть, вара антонимла трансформаци тума тивет. Уйрăммăн илсен, вырăс чĕлхинче глаголăн таврăну залогĕн (страдательный залог) формипе йĕркеленĕ пассивлă сăмах çаврăнăшĕсем валли çав калăплă синтаксис конструкцийĕсем çуккине палăртмалла. Çавăнпа та тĕп залогăн (действительный залог) формипе, анчах субъектпа объекта ылмаштарса калама тивет. Тĕслĕх: выр. «Полицией (доп.) производятся (сказ.) аресты (подл.)» — чăв. «Полици (подл.) арестсем (доп.) туса ирттерет (сказ.)».

Куçарури саплав (компенсаци) мелĕ — трансформацин хăйне евĕрлĕ тĕсĕ. ОЧ текстĕнчи хăшпĕр элементсем валли куçару чĕлхинче тӳркилӳсем çук пулсан, пĕлтерĕшĕн мĕнле те пулин пайĕ çухалма пултарать. Вара тăлмачăн çавнашкал сĕмех (референт е коннотаци пĕлтерĕшне) урăх майсемпе каласа пама тивет. ОЧ тексчĕпе танлаштарсан, пĕлтерĕш çухалнине саплакан элемент урăх вырăна та кĕрсе ларма пултарать — кунта функцийĕ пĕр пек пулни çеç кирлĕ.

Референт пĕлтерĕшĕ çухаласси ытларах чухне оригиналти **эквивалентсăр лексикăпа** çыхăннă. Ку вăл — ОЧ çĕршывĕнчи хăйне евĕрлĕ, урăх çĕрте çук объектсен, реалисен ячĕсем, тĕрлĕрен идиомăсем (вĕсем тӳррĕн куçарăнмаççĕ) т. ыт. те. Наци реалийĕсем географи, истори, этнографи уйрăмлăхĕсемпе, фольклор е мифологи сăнарĕсемпе, социаллă пурнăç условийĕсемпе çыхăннисем пулма пултараççĕ. Вĕсен ячĕсене тĕрлĕ мелсемпе куçараççĕ:

а) транскрипци и транслитераци туса. Тĕслĕхшĕн вырăс чĕлхинчен Европа чĕлхисене куçнă нумай сăмахсене илме пулать. Шалти формине кура калькăлама май пур çинчех *колхоз, большевик, совет, спутник, Большой* (театр) йышши сăмахсене, калăпăр, нимĕçле Kolchos, Bolschewik, Sowjet, Sputnik, Bolschoj тесех çырасси çирĕпленнĕ. Чăваш реалийĕсен сăмахĕсене вырăсла çырасси çинчен çӳлерех асăннăччĕ ĕнтĕ. Тата темиçе тĕслĕх илер. Вырăнти колорит сĕмне кăтартас тĕллевпе Юхма Мишшин Мускавра 1970 çулта тухнă «Книга о Чувашии» кĕнекинче (чăвашларан А. Волков куçарнă) çакăн пек çырнисем тĕл пулаççĕ: *Адыл* (Атăл), *Сербю* (Çĕрпӳ), *батор* (паттăр), *сьер-анне* (çĕр-анне), *агатуй* (акатуй), *Хургайк Сюле* (Хуркайăк Çулĕ), *Улып* (Улăп), *сиру терри* (çыру тĕрри) т. ыт. те. Опыт, пĕлӳ çитмен чухне е стиль пĕрлĕхĕн туйăмĕ çук чухне тăлмачсем ку мелпе кирлĕ мар

çĕртех усă кураççĕ. Тĕслĕхсем, «Уçнă çерем» романран: *квиток* «хут, документ», *круг* «4 теçеттин», *боевой группа* «хастар ушкăн»; «Коммунизм ялавĕ» хаçатран: *маляри* «сивчир», *çĕлен ячĕ* «çĕлен наркăмăшĕ», *ростовщик* «усламçă», *Африка Рогĕ «Африка Сăмсахĕ»* т. ыт. те.;

ă) КЧ элеменчĕсенчен кирлĕ пĕлтерĕшлĕ çĕнĕ сăмахсем хайлани е сăмах майлашăвĕсем йĕркелени. Кунта, тĕпрен илсен, калькăсем тата перифразăсем — темиçе сăмахлă ăнлантарусем кĕреççĕ. Çапла, выр. *небоскреб* сăмаха акăлчан чĕлхинчен skyscraper ĕлкипе тунă (sky «пĕлĕт», scrape «хыр»). Чăв. *шăрттан* сăмаха вырăсла час-часах *домашняя колбаса, чăкăта — пресный сырок, масмака — налобная повязка* тесе куçараççĕ. Пушкинăн «Капитанская дочка» повеçĕнчи Савельич «должноçĕ» вырăсла — *дядька* (улпут ачисене пăхакан арçын тарçа çапла каланă). Чăвашла куçарура *пожалованному мне в дядьки* вырăна *мана пăхма хушнă* тесе каланă. Кунта тĕрлĕрен трансформаци элеменчĕсем палăраççĕ: пĕтĕмлетӳ те, кĕскетӳ те, ăнлантарулла саплав та.

Нумай контекстсенче, уйрăмах илемлĕ произведенисенче, куçарура пĕр сăмаха вăрăммăн ăнлантарса кайни пуплев витĕмлĕхне сĕвĕртсе ярать е шухăша тĕтрелетет. Акă, Шолоховăн «Поднятая целина» романĕнчи пĕр реплика: «Тоже остряк-самоучка, факт!» Чăвашла çапла куçарнă: «Вăл та килте сăмсаланса ӳснĕ çивĕч чĕлхеллĕ çын иккен, факт!» Тăватă сăмах вырăнне — вуннă! Тарăху, тăрăхлав модаллĕхĕ, пуплев кĕскелĕхĕпе çивĕчлĕхĕ — йăлтах пĕтнĕ. Калаканĕ (Давыдов) тахăшĕ вырăнсăр та тӳрккессĕн шӳтлеме хăтланнине сивлет. Чăвашла çакна *остряк* тата *самоучка* сăмахсене словарьти пек определени памасăр, оригиналти майлах кĕскен те вирлĕн «çаптарса» каламашкăн темĕн тĕрлĕ вариант тупма пулать. Çав текстранах тепĕр тĕслĕх: «Сбоку лежал ворох рассыпанного сена». Чăвашла: «Ун çумĕнче пĕр çĕклеме яхăн утă сапаланса выртать». Чăннипе вара ижĕ вăкăр (!) кӳлнĕ утă лавĕ тӳнсе кайнă-мĕн. Тем мăнăш лав пĕр çĕклем пулса тăнă. «Коммунизм ялавĕ» хаçатра *умеренные христиане* термина куçарма эквивалент тупаймасăр *ытлашши чăрсăрланма юратман христиансем* тесе çырнă. Сăмах вара христиансен общинин чи реакциллĕ тата прогрессивлă ушкăнĕсем хушшинчи фракцийĕ çинчен пырать;

б) реализене ăнлантармалли виççĕмĕш май — оригиналти эквивалентсăр сăмаха куçару чĕлхинчи çывăха килекен сăмахпа ылмаштарасси. Ун пек ылмаштару пĕтĕм текст пахалăхне, содержанине чакармалла мар. Калăпăр, чăв. *супан, хăрт, йĕлен, хĕртсурт* сăмахсене вырăсла, ятарласа ăнлантармасăрах, *полотенце, секира, халат, домовой* тесе куçарни тĕл пулать; тĕрĕссипе вара çак мăшăрсенчен пĕри те тулли эквивалентлă мар. Гетен «Фаустне» чăвашла куçарнă чухне

Н. А. Андреев, истори колоритне тата чĕлхе стильне сыхласа хăварас тесе, нимĕç сăмахĕсене çывăх пĕлтерĕшлĕ тата коннотациллĕ нумай чăваш архаизмĕсемпе вырăнлă усă курнă, сăм. *пирĕшти, пӳлĕхçĕ, açтаха, чике старик, элчел* т. ыт. те. Анчах кунта виçене пĕлни кирлĕ, мĕншĕн тесен куçару чĕлхин сăнарлăхĕ оригиналăн хăйне евĕрлĕ сăн-питне пачах хуплани пулмалла мар. Çавăнпа та «Фауст» текстĕнчи *чисти, маçтăр, причак, акай, мăнаçи, палларăн-а, хусамăр* тени, паллах, килĕшӳçĕр илтĕнет[4];

в) эквивалентсăр лексикăна куçармалли тăваттăмĕш мел виççĕмĕшне çывăх, унпа пĕрле те тĕл пулать. Унăн тупсăмĕ— ансăр пĕлтерĕшлĕ экзотизма анлăрах пĕлтерĕшлĕ пурте пĕлекен сăмахпа куçарнинче. Çапла ĕнтĕ ку мел шухăшăн пайăр содержанине кăшт та пулин чухăнлатать. «Капитанская дочка» повеçри *погребец* сăмаха чăвашла *арча, басурман* сăмаха — *ют çын, шаматон* сăмаха *çăмăлттай* тесе куçарнă; чăваш эквиваленчĕсем пурте — анлăрах пĕлтерĕшлĕ. *Погребец* вăл — çула тухнă чух апат-çимĕçпе савăт-сапа хумалли ятарлă арча, *басурман* — христиансем мусульмансене йĕрĕнсе-тиркесе калани, *шаматон* — тенине *хутахай* е *ăçтиçук* тесе куçарни референта çывăхрах, коннотацийĕ те патнех пырать. Вырăс чĕлхинче касакан-чикекен кăрал ячĕсем нумай: *меч, сабля, шашка, шпага, палаш, рапира* т. ыт. те., чăвашла куçарнă чухне вара вĕсене пур чухне те пекех *хĕç* тӳр килет. Йӳçĕтнĕ сĕт апачĕ кашни халăхăн хăйне евĕрлĕ, ячĕсем те пĕр пек мар, чăвашла куçарас пулсан пурне те *турăх* теме тивет.

Çӳлерех пăхса тухнă мелсемпе усă курасси нумай факторсенчен килет. Вĕсем вырăна килнĕ пулсан, тăлмача унăн кăткăс задачисене ăнăçлă татса пама пулăшаççĕ, трансформацисене вырăнсăр, виçесĕр туса ирттерни вара, пачах урăхла, куçарнă текст пахалăхне чакарать çеç[5].

Чăннипех творчествăлла ĕçлекен ăста куçаруçă трансформацисем тунă чухне произведенин, автор чĕлхин стиль уйрăмлăхĕсене, сăмахсемпе вĕсен майлашăвĕсен текстри функцийĕсене уйрăмах хытă тимлеме тăрăшать. Текст форми хыççăн кайса тӳртенлĕх йĕрне ӳкни, КЧ нормисене уяманни, унăн сăнарлăх-илемлĕх майĕсемпе туллин усă курайманни хальхи вăхăтра чăваш куçарăвĕн чи пысăк çитменлĕхĕ пулса тăрать.

3. Пайăр ятсене куçарассин уйрăмлăхĕсем

Пайăр ятсен семантика уйрăмлăхĕ çинчен çӳлерех кĕскен каланăччĕ: ахаль сăмахсем (пайăр маррисем) пĕр-пĕр референта, ăнлава палăртаççĕ, çавăнпа та нумай-нумай объекта

[4] Юмарт Г. Ф. Илемлĕ литературăна чавашла куçарас ĕçĕн паянхи çивĕч ыйтăвĕсем, 28—32 с.

[5] Федоров А. В. Асăннă ĕç, 145—157 с.

пĕтĕммĕн ят параççĕ пулсан, пайăр ятсем пĕртен-пĕр объекта çеç ят параççĕ, унăн хăйне евĕрлĕ тăмхи, «этикетки» пулса тăраççĕ. Пайăр ятсен тупсăмĕ денотата ят парасси, урăхла каласан, номинаци функцийĕ пулса тăрать. Пĕр ятлă çынсем час-часах тĕл пулаççĕ, анчах ятсен пахалăхĕсем уншăн улшăнмаççĕ. *Иванов* хушаматлă çынсем пирĕн çĕршывра нумай миллион пулма пултараççĕ, анчах вăл сăмах темĕнле «ивановлăх» ăнлавне палăртмасть, Ивановсен те ытти хушаматлă çынсенчен ăрасна паллăсем çук. Çакна çын хăйĕн ятне-хушаматне (сăмахран, кавча кайнă чухне) улăштарма пултарни çирĕплетет, хула-ял ячĕ улшăнни те нумай пулать. Çăка йывăç юман е ĕне выльăха лаша теме вара ниепле те май килмест, мĕншĕн тесен пайăр мар ятсен *(çăка, юман, ĕне, лаша* т. ыт. те) семантики паллă объектсен — ӳсентăран тата чĕрчун тĕсĕсен характерлă уйрăмлăхĕсемпе çыхăннă.

Пулăвĕпе пайăр ятсем пурте — иккĕмĕшле номинаци единицисем, мĕншĕн тесен вĕсем пайăр мар ятсенчен пулса кайнă. Яланхи хутшăнура малтанхи пĕлтерĕш никĕсĕ е шалти форми калаçакансен асне килмест те. Тĕслĕхрен, *Нарспи* (çын ячĕ), *Петров* (хушамат), *Канаш* (хула ячĕ), *Йĕкĕрвар* (ял ячĕ), *Йĕршшу* (шыв ячĕ) сăмахсем пуплевре тивĕçлĕ денотата кăтартаççĕ кăна. Хĕр ятне нарăс уйăхĕнче (хальхи февраль) çуралнăран *Нарспи* хунине (*-пи* формант — *пике* сăмахран пулнă, вăл авалхи хĕрарăм ячĕсене вĕçлет), вырăсран кĕнĕ хушамат тĕпĕнчи *Петр* ят грек чĕлхинче «чул» пĕлтерĕшлĕ пулнине, Шăхран станцийĕн ятне, Совет саманине чысласа, *Канаш* «совет» неологизмпа улăштарнине, Йĕкĕрвар ялĕ икĕ вар хушшинче вырнаçнине, Йĕршшӳ шыв ячĕ авалхи тĕшмĕш чăвашсем йĕрĕхрен шикленессипе çыхăннине эпир е пачах сĕмленместпĕр, е пĕлсен те асра тытмастпăр. Вăл пĕлтерĕшсем ятарлă тĕпчев тунă чухне кăна малти вырăна тухса тăраççĕ.

Тахçантанпах тачă çыхăну тытса пурăнакан халăхсен чĕлхисенче пĕр-пĕрин пайăр ячĕсене каламалли тата çырмалли йĕркесем çирĕпленсе нормăланаççĕ. Сăмахран, вырăсла (ун хыççăн чăвашла тата пирĕн çĕршыври ытти нумай чĕлхесенче) паллă хуласен ячĕсене *Лондон, Париж, Варшава, Гавана* тесе каласси-çырасси çирĕпленнĕ. Çапла ĕнтĕ тĕрлĕ чĕлхесенче пĕр объектсен ячĕсем фонетикăпа графика тата морфологи тĕлĕшĕнчен те самаях уйрăлса тăма пултараççĕ. Акă, вырăсла хула ячĕ *Москва* тĕрлĕ чĕлхесенче *Москау, Моску, Муску, Москов, Мускав* тата ытти тĕрлĕ илтĕнет, çавна майлах çырăнать.

Халĕ пирĕн çĕршывра çырулла стильсенче географи ячĕсене тата çын ячĕсене ытларах вырăс чĕлхинчи формăпа палăртасси йăлана кĕнĕ. Ку пĕрпеклĕх государство ĕçĕшĕн, экономикăпа культурăшăн, пичетшĕн, почта çыхăнăвĕшĕн т. ыт. те

пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çав вăхăтрах кулленхи хутшăнура, вырăнти информаци хатĕрĕсенче, илемлĕ литературăра, наука тĕпчевĕсенче пайăр ятсен малтанхи, нацилле формисемпе активлăх усă кураççĕ. Сăмахран, вырăсла текстсенче *Чебоксары, Цивильск, Волга, Байсубино,* чăвашла текстсенче — *Шупашкар, Çĕрпӳ, Атăл, Пăçпак* т. ыт. те.

Хамăр республикăри пайăр ятсен системинчи çавнашкал тӳркилӳсем тахçанах шайлашса нормăланнă темелле, вĕсене тĕрлĕ жанрлă çырулăх палăкĕсене кĕртсе çирĕплетнĕ. Анчах чăвашсем тăван республика тулашĕнче те йышлăн пурăнаççĕ. Кӳршĕ республикăсемпе облаçсенчи чăваш ялĕсен, унти географи объекчĕсен ячĕсене вара кам мĕнле пĕлет, çапла çырать. Тĕрĕссипе вĕсен малтанхи чăваш ячĕ те, çирĕпленнĕ вырăсла ячĕ те пур, çавăнпа та чăвашла текстсенче чăвашла тӳркилĕвĕпе усă курни вырăнлă. Тивĕçлĕ справочниксем çукки (нумай облаçсемпе республикăсен администрацине территори пайланăвĕн справочникĕсенче ятсен вырăсла формисене çеç е вырăсла тата автономиллĕ республика чĕлхипе йĕркеленĕ формăсене панă, чăвашла формăсем унта çук) чăваш топонимĕсене тĕрĕс палăртма чăрмантарать. Акă «Коммунизм ялавĕ» хаçатри статьяран илнĕ пĕр предложени: «Чăваш ученăйĕсем Ульяновск облаçĕнчи Чăнлă, Чердаклы, Çĕнĕ Малыкла, Куйбышев облаçĕнчи Исаклы, Клявлино, Шенталы тата Тутар АССРĕнчи Çарăмсан, Октябрьски, Аксу районĕсенче 20—25 ялта пулса кураççĕ» (15.06.84). Кунта *Чăнлă* (выр. *Цильнинский), Çарăмсан (Черемшанский), Октябрьски (Октябрьский), Аксу (Аксубаевский)* районсен ятне чăвашла тĕрĕс кăтартнă, ыттисене вырăсла формăпа çырнă. Унти чăвашсем вара *Чартаклă, Çĕнĕ Малăклă, Исаклă, Клевлĕ, Шунтал* теççĕ.

Географи ячĕсене куçарасси вĕсен истори кунçулĕпе те çыхăнма пултарать. Совет влаçĕ вăхăтĕнче кивĕ ятсенчен чылайăшне улăштарнă, революци символикипе çыхăнтарса çĕнетнĕ. Иртнĕ истори тапхăрĕсемпе çыхăннă текстсенче вара, паллах, кивĕ ятсемпе усă курма тивет. Сăмахран, *Горький — Нижний Новгород* (чăв. *Чулхула*), *Ульяновск — Симбирск (Чĕмпĕр), Калинино — Норусово (Нурăс), Красноармейское — Траки (Трак), Советское — Шуматово (Шăмат)* т. ыт. те.

Икĕ чĕлхере пĕр объект валли çирĕпленнĕ ятсен мăшăрĕсем пулмасан, куçарнă чухне ОЧ топонимне тĕрлĕрен палăртни тĕл пулать. Практика çакна кăтартать: пайăр ятсен наци тата чĕлхе тĕлĕшĕнчи хăйевĕрлĕхне пула тăлмачсем вĕсене реали ячĕсемпе юнашарах тăратаççĕ, çавăнпа та куçарура, вырăн е вăхăт колоритне кăтартас тесе, çав сăн-сăпатпах хăварма тăрăшаççĕ. Кун пек чухне вара транскрипципе транслитераци мелĕсем кирлĕ пулаççĕ.

Анчах чылай чухне, уйрăмах анлă тытăмлă, çав вăхăтрах уçăмлă шалти формăллă пайăр ятсене куçарнă чухне, вĕсене калькăлани тĕл пулать. Кунашкал ятсем тĕлĕшпе вара вырăсла-чăвашла куçарура, тӳрех калас пулать, йăнăш тата пăтрашу питĕ нумай.

Тĕп йывăрлăх вырăс текстĕнчи анлă ятсен çыхăну паллă ячĕ формиллĕ пуçламăш компонентне чăвашла каласси-çырассипе çыхăннă. Çав паллă ятне тăвакан сăмах тĕпĕ вырăс форминче уçăмлă мар, чăвашла вара ăна час-часах уйăрса калама тивет, мĕншĕн тесен изафет конструкцийĕ малти позицие япала ячĕ лартма хушать. Ку тĕлĕшпе гидронимсем лайăх тĕслĕх пулма пултараççĕ. *Белое море, Баренцево море, Саргассово море, Мертвое море* йышши ятсене çăмăллăнах чăвашла куçарма пулать ĕнтĕ. *Шурă тинĕс, Баренц тинĕсĕ, Саргас тинĕсĕ, Вилĕ тинĕс.* Анчах акă урăхла тĕслĕхсем: *Карское море, Маточкин шар* (пролив ячĕ), *Большое Невольничье озеро, Подкаменная Тунгуска* (Енисей юппи), *Северский Донец* (Дон юппи), *Марианские острова* — вĕсене чăвашла мĕнле çырмалла-ши? *Карское море* ята 1961 çулта тухнă «Чăвашла-вырăсла словарьте» *Карск тинĕсĕ,* М. Р. Федотовăн «Авалхи тĕрĕк чĕлхи» кĕнекинче *Карс тинĕсĕ* тенĕ. Чăннипе *Карск* е *Карс* сăмах тĕпĕсем вырăс чĕлхинче çук, çавăнпа чăваш изафечĕн пĕрремĕш компонентне те вăл формăллă тума кансĕр. *Карское* тĕпĕ — çав тинĕсе юхса кĕрекен *Кара* юханшыв ячĕ. Изафет формипе тусан, *Кара тинĕсĕ* пулать, анчах ку вариант вырăс форминчен чылай уйрăлса тăрать. Çавăнпа та 1982 çулта тухнă «Чăвашла-вырăсла словарьте» ку гидронима *Карски тинĕс* формăпа панă. *Маточкин шар* ятăн иккĕмĕш компоненчĕ — «пролив» пĕлтерĕшлĕ коми сăмахĕ, ăна чăвашла *пролив* темех пулать, *шар* термина йышăнсан, вăл «çаврашка» тата «инкек» пĕлтерĕшлĕ омонимĕсемпе пăтрашма пултарать. *Маточкин* компоненчĕ ăçтан пулса кайнине ученăйсем пĕлмеççĕ, ăна çаплипех хăварма вырăсла *-ин* суффикс чăрмантарать. 1982 çулхи словарьте ку ята вырăс формипех хăварнă, анчах çакă чăваш чĕлхин нормисене тивĕçтермест.

Çӳлерех илсе кăтартнă ытти географи ячĕсем те пуçа ватмалли ыйтусем çуратаççĕ. Вĕсене чăвашла каласан лайăхрах (сăм. *Мăн Чура кӳлли, Чулай Тунгуска),* анчах *Северский,* акă, «çурçĕр» пĕлтерĕшпе çыхăнман, вăл авалхи славян йăхĕн *севера, северяне* ятĕнчен хунавланать. Утравсене 1982 çулхи словарьте *Мариан утравĕсем* тенĕ пулин те, ку ят пирки шухăшласа пăхмалла, мĕншĕн тесен сăмах тĕпĕ *Мария* пулнă, апла-тăк *Мария* утравĕсем темелле пек, анчах ку вариант вырăслинчен уйрăлса каять.

Сăмах тĕпне тупма пĕлмесĕр вырăс чĕлхинче çук хула-ял, сăрт-ту, шыв-шур ячĕсене чăвашла текста кĕртсе яни пирĕн хаçат-журналсенче, куçарнă кĕнекесенче çине-çинех тĕл пу-

лать. Куна таçти-инçетри çĕршывсенчи халиччен илтмен ятсем çинчен çеç мар, хамăр çĕршыври топонимсем çинчен те калама тивет. Акă «Коммунизм ялавĕ» страницисенчен илнĕ темиçе тĕслĕх: *Коломенский музей—Коломенскри музей* (хулан чăн ячĕ *Коломенск* мар — *Коломна*), *Персидский залив—Персид заливĕ, Персидски залив* (тĕрĕс: *Перси заливĕ*), *в Бретани — Бретанире* (тĕрĕс: *Бретаньре*), *яванский носорог — Яванри носорог* (тĕрĕс: *Ява носорогĕ*).

Хамăрăн историрен тепĕр тĕслĕх. Чăвашсем хушшинче шкул ĕçне малтанах мăнастирсем çумĕнче йĕркеленĕ пулнă. Вĕсен ячĕсене Н. П. Петров вырăсларан чăвашла çапла куçарнă: *Казанский Зилантов монастырь — Хусанти Зилант мăнастирĕ, Свияжский Успенский м. — Сĕвери Успенски м., Казанский Спасско-Преображенский м. — Хусанти Спас-Преображен м., Чебоксарский Троицкий м. — Шупашкарти Троицки м., Казанский Иоанно-Предтеческий м. — Хусанти Иоанно-Предтечески м.* т. ыт. те[6]. Географи ячĕсемпе çыхăннă çак номенклатурăсен тĕп сыппи — чиркĕве (е мăнастире) мĕнле тĕн уявĕн е святойăн ятне пани: *Успенье, Спас-Преображенье, Троица, Иоанн Предтеча.* Вĕсемпе усă курса, изафет форми тума май килнĕ: *Хусанти Иоанн Предтеча мăнастирĕ* т. ыт. те. *Зилантов монастырь* ят ыттисенчен ăраснарах, унăн тĕпĕнче — тутар топонимĕ, Атăл çыранĕнчи сăрт ячĕ *Джилан тау,* чăв. *Çĕлен тăвĕ.* Вырăс форминче иккĕмĕш компонентне аффикс пек ăнланса йышăннă. Çапла ĕнтĕ, *Зилант* ят пулмăн, чăвашла *Зилант мăнастирĕ* теме май килмест.

Географи ячĕсен куçарăвĕнчи питĕ йышлă йăнăш сăлтавĕ — топонимăн контекстри падеж форминчен тĕп формине уйăрса палăртма пĕлменни, çавна пула тĕп формăна пăсса кăтартни. Ку вăл пирĕншĕн ют çын ячĕсене куçарнă чухне те тĕл пулать. Хаçатсен страницисенче, акă, çакăн пек çырнисене куратпăр: *в городе Ла-Корунье — Ла-Корунье хулинче* (тĕп падеж тĕрĕссипе *Ла-Корунья*), *в городе Лейк-Плесиде — Лейк-Плесиде хулинче* (тĕрĕс: *Лейк-Плесид*), *в Кокберн-Саунде — Кокберн-Саундере* (тĕрĕс: *Кокберн-Саундра*), *в Лхасе—Лхасра* (тĕрĕс: *Лхасăра*). Çын ячĕсенче: *об аресте капитана Бурши Абдаллы — Бурши Абдаллы капитана арестлени çинчен; суд стал на сторону Сандры Дапри — суд Сандры Дапри майлă пулнă* (тĕрĕс: *Бурша Абдалла, Сандра Дапри*).

Ку таранччен калаçу чĕлхесенче, пурнăçра чăннипе пур пайăр ятсем çинчен пычĕ. Вĕсене куçарнă чухне йăнăшас мар тесен, тăлмачăн чи малтанах харпăр культура шайĕпе тавракурăмне, чĕлхе пĕлӳлĕхне ялан ӳстерсе пымалла. Унсăр пуçне ятарлă географи, энциклопеди справочникĕсемпе, тĕрлĕ словарьсемпе куллен усă курасси çирĕп йăлана кĕмелле. Ка-

[6] Петров Н. П. Асăннă ĕç, 43 с

ламасăрах паллă, вырăс чĕлхинчи сăмах улшăнăвĕн парадигмисене, чăваш чĕлхин сăмах пулăвĕпе сăмах çыхăнăвĕн мелĕсене лайăх пĕлес пулать.

Çакăнпа тачă çыхăннă уйрăм ыйту — вырăсла е урăх чĕлхесенчи ятсен пĕчĕклетӳ, ачашлу, тăрăхлав формисене е канон ятсен пуплешӳ, диалект вариантĕсене куçарасси. Вĕсен функцийĕсем тулли ятсемпе пĕр килменни, паллах, кунсăр пуçне чăваш чĕлхинче христиан ячĕсене вырăс чĕлхисенчи пек мар, пачах урăх модельсемпе пĕчĕклетеççĕ, ачашлав е тăрăхлав сĕмĕ хушса вариантлаççĕ. Кун çинчен И. А. Андреевăн нумай пулмасть тухнă кĕнекинче уçăмлăн çырса кăтартнă[7]. Ят вариантĕсем кĕретех «чăваш сăнлă» пулмасан, илемлĕ произведенисенче вĕсемпе вырăс ячĕсем вырăнне усă курма юратех (танл.: *Ванечка — Ванюк, Ванюш; Ванька — Ванькка; Ванюша — Ванюш, Ванюç* т. ыт. те). Шел пулин те, пирĕн тăлмачсем ытларах чухне ку ыйтупа пуçа ватса тăмаççĕ, вырăсла мĕнле — çапла çыраççĕ.

Чĕлхере чăннипе пур ятсемсĕр пуçне илемлĕ произведенисенче вĕсен авторĕсем шухăшласа кăларнă пайăр ятсем нумай пулаççĕ. Персонажсен, ĕçсем пулса иртекен вырăнсен ячĕсем икĕ ушкăна пайланаççĕ. Пĕрремĕшне чăн пурнăçри пайăр ятсемпе пĕр килекен е вĕсен моделĕсемпе тунă нейтраллă ятсем кĕреççĕ (танл.: *Чĕмпĕр, Вăрманкасси, Иванов* е *Шуркел, Салампи, Онегин, Корчагин, Пиквик* т. ыт. те). Нейтраллă тесе вĕсене акă мĕншĕн калама тивет: объекта ят панисĕр пуçне вĕсен урăх функци — хакласси, тăрăхласси, ачашласси тавраш пулмасть. Куçарура вĕсене транскрипци е транслитераци туса çыраççĕ, çирĕпленнĕ тӳркилӳ пулсан, ăна илеççĕ. Иккĕмĕш ушкăна «пĕлтерĕшлĕ», урăхла каласан, объекта сăнласа хаклакан, унăн паллисене уçса паракан ятсене кĕртеççĕ. Вĕсем авторăн идейăпа эстетика тĕллевĕсене пурнăçлама пулăшаççĕ, сăнар тупсăмне уçса параççĕ. Аса илер-ха Гоголь произведенийĕсенчи персонаж ячĕсене: *Собакевич, Манилов, Плюшкин,* е Грибоедовăн: *Молчалин, Скалозуб,* Некрасовăн ял ячĕсем: *Неелово, Горелово, Неурожайка* т. ыт. те. Унашкал ятсем сатира жанрĕпе çырнă произведенисенче уйрăмах йышлă. Акă, Салтыков-Щедрин персонажĕсен питлевлĕ-тăрăхлавлă ячĕсем кăна мĕне тăраççĕ. Хамăрăн «Капкăн» журналти материалсенче те ун пек ятсем пайтах тĕл пулаççĕ. Тепĕр чухне произведенин тĕп идея шăнăрĕ те персонаж ячĕпе уйрăлми çыхăнса тăрать, тĕслĕхшĕн Хусанкайăн Аптраман таврашне аса илтерме пулать.

Ку шутах хушма ятсене (выр. прозвища) те кĕртмелле, вĕсен хакласа ӳкерчĕклес функцийĕ пушшех те уççăн палăрать.

---

[7] Андреев И. А. Çын ячĕсем. Шупашкар, 1983, 26—37 с.

«Пĕлтерĕшлĕ» ятсен текстри вырăнĕпе функцийĕ вулакансем çав ятсен çурма ытарлă, çурма кĕрет тупсăмне ăнланассипе çыхăннă. Çавăнпа та вĕсене ОЧ формипех пани куçарăва самаях сарăплать, унăн сăнарлăхĕпе витĕмлĕхне чакарать. Аста тăлмачсем «пĕлтерĕшлĕ» ятсене КЧ мелĕсемпе куçарса калама е функци тĕлĕшĕнчен танлашакан эквивалентпа ылмаштарма тăрăшаççĕ. Ку тĕлĕшпе пултарулла тăлмач Н. М. Любимов ĕçĕн опычĕ уйрăмах кăтартуллă. Франсуа Раблен «Гаргантюа и Пантагрюэль» ятлă вилĕмсĕр романĕнчи тăрăхлавлă, мăшкăлавлă ятсене вырăсла куçарнă чухне «чун кĕртме» вăл çывăх пĕлтерĕшлĕ тата тивĕçлĕ коннотацилле персонажсен ячĕсене вуншар хайланă. Акă вĕсенчен хăшĕпĕрисем: *Пустомелиус, Простофиль, Пейвино, Мордобит, Котлолиз, Пейдаври.* Тĕрлĕрен титулсемпе çыхăнтарни вĕсене пушшех кулăшла тăвать, çавăнпа пĕрлех чаплă ятлă ăçтиçуксен кĕтĕк ăсне-пуçне, нишлĕ чунне яриех уçса кăтартать, сăм. *герцог де Шваль, сеньор де Скупердяй, герцог де Прживаль, принц де Парша* т. ыт. те[8]. Ку произведение чăвашла вырăсларан е тӳррĕнех французларан куçарас пулсан та, паллах, çав вăлтса-тăрăхласа хайланă ятсене чăвашла каламасăр хăварма май çук.

Халлĕхе чăваш куçарăвĕсенче «пĕлтерĕшлĕ» ятсене те, ахаллисене хăварнă пекех, улăштармасăрах КЧ текстне кĕртес туртăм вăйлă. Ку вăл, пĕр енчен, икчĕлхелĕх аталаннипе, чăваш вулакансем вырăсла ятăн шалти формине тата унпа çыхăннă пĕлтерĕш сĕмĕсене ăнланнипе çыхăннă. Анчах куçару тексчĕ çавна пула пурпĕрех нумай чухăнланать. Акă «Уçнă çеремĕн» 1959 çулта тухнă чăвашла кăларăмĕнче *дед Щукарь— Щукарь мучиех; Молчун, Шалый, Менок* йышши ятсене те тивмен. Кондратько хушаматлă кĕреш юман пек кĕлеткеллĕ командира юлташĕсем, юратса та шӳтлесе, «батько Квадратько» теççĕ иккен. Куçарура та хушма ят çавăн пекех юлнă. Чăвашла вара унăн пĕлтерĕшне *тăваткал* сăмахпа усă курса вăлтма май килнĕ. Романти хутор ятне Шолохов ахальтен мар *Гремячий Лог* тесе хунă, кунта унăн паллă эстетика содержанийĕ хывас кăмăлĕ пулнă ĕнтĕ. Тăлмачсем ăна куçарман, çав вăхăтрах ăна чăвашла питĕ çыпăçуллă çавăрса калама май пур: янравлă евĕрлев сăмахĕсем те (сăм. *шăнкăр, чăнкăр, йăнкăр*), «лог» пĕлтерĕшлĕ географи терминĕсем те (сăм. *вар, васан, çырма*) сахал мар пирĕн. Калăпăр, *Чăнкăрвар, Шăнкăрвар е Чăнкăрçырма, Шăнкăрçырма* формиллĕ тăвас пулсан, хамăрăн çавнашкалах илтĕнекен ял ячĕсем (танл.: *Чăнкăвар, Йĕкĕрвар, Шăнкăртам* т. ыт. те) асра пулни те вĕсене чăваш текстне çураçуллă кĕрсе вырнаçма пулăшнă пулĕччĕ.

---

[8] Виноградов В. С. Асăннă ĕç, 134—151 с.

Е тата А. Н. Толстойăн «Ылтăн уçă е Буратино мыскарисем» кĕнекинчи персонажсен ячĕсене илер (Шупашкар, 1982). Выр. *папа Карло* — чăв. *Карло атте;* автор пуплевĕнче те çавах, чăваш чĕлхин законĕсем тăрăх вара тăван ачи кăна çынна *атте* теме пултарать, кунта *мучи* сăмах вырнаçуллăрах пулнă. *Крыса Шешура — Шешура йĕкехӳре;* чăштăрти чĕрчуна сăнлама чăваш евĕрлевĕсем темĕн чухлех пулнă. Хăрушла *Карабас Барабас* ята та, *кот Базилио, лиса Алиса, черепаха Тортилла* тенисене те чăвашлатса калама май килнĕ. Кĕнекере икĕ ята куçарса пани *(Дуремар — Ухмантей, Тарабарский король — Лĕпĕрти король)* çавăн пек тума нименле чăрмав та пулманнине питĕ лайăх кăтартса парать (вăл ятсене ăнăçлăрах хайлама май пулни çинчен шарламăпăр кунта).

Çапла ĕнтĕ, пайăр ятсене ăнăçлă куçарасси тăлмач вĕсен текстри функцине, эстетикăпа стиль сĕмĕсене лайăх ăнланса илнинчен, чăннипех творчествăлла, ăслайлă ĕçленинчен килет.

4. Фразеологи материалне куçарасси

Чĕлхе наукинче фразеологие тĕрлĕрен ăнланаççĕ. Пĕрисем унăн чиккине ансăртарах хываççĕ, фразеологи единицисен шутне тачă пĕтĕçнĕ, пĕр ăнлава палăртакан сăмахсен майлашăвĕсене кĕртеççĕ. Вăл категорири пĕчĕкрех ушкăнсем — фразеологи шăранчăкĕсем (фразеологические сращения), ф. пĕрлĕхĕсем (ф. единства), ф. майлашăвĕсем (ф. сочетания).

Куçару ыйтăвĕсене пăхса тухнă чухне фразеологие анлăлăрах ăнланни тĕл пулать: кунта паремисене те (ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсене), афоризмсемпе «çунатлă сăмахсене» те, хаçат-журнал чĕлхинче тăтăшах тĕл пулакан штампсене, çирĕпленнĕ анлă номинацисен хăшпĕр тĕсĕсене те кĕртеççĕ. Юлашки ушкăн вара терминологипе, номенклатурăпа тачă çыхăнса тăрать. Ункайлăх ятне эпир кунта çавнашкал анлă ăнлава тĕпе хурăпăр.

Фразеологи материалĕн нумайенлĕхне кура, текстсен стильпе жанр паллисене кура куçарăвăн тĕрлĕ мелĕсемпе, тĕрлĕ йышши трансформацисемпе усă курма пулать. Кунта кашнинчех юрăхлă, ялан тӳрре тухакан рецептсем пама пачах май çук. Çавăнпа тĕп йывăрлăхсем, типлă лару-тăрусем çинчен пĕтĕмĕшпе çеç калăпăр. Фразеологизмсене куçарас пайăр ыйтусене конкретлă куçарусене тишкернĕ чухне тĕплĕн пăхса тухни вырăнлă.

Куçаруçăшăн чи йывăр ыйтусенчен пĕри — идиомăсене, пачах уйрăлми шăранса пĕрлешнĕ сăмах ушкăнĕсене тăван чĕлхепе калама ăсталăх çитересси. Идиомăлла çаврăнăшсен пĕлтерĕшĕ хăйсен компоненчĕсен пĕлтерĕшĕсенчен тухса тăмасть (сăлтавлăх çыхăнăвĕ, детерминаци çук), кăмăл-туйăм

экспрессийĕ ялан вăйлă пулать, çавна май идиомăсем текстра илемлĕхпе стиль тата коннотаци тĕлĕшĕнчен пысăк пĕлтерĕшлĕ пулаççĕ. Тĕслĕхсем: *бить баклуши, бред сивой кобылы, за здорово живешь, тютелька в тютельку, сыграть в ящик, вот где собака зарыта, ни аза в глаза* т. ыт. те. Сăмахран сăмах куçарса пыни камитле мелсĕр пулса тухать. Çавăнпа та кунашкал фразеологизмсене куçарнă чухне трансформацин тарăнрах, творчествăллăрах меслечĕсемпе усă курма тивет. Çав трансформацисенчен пĕри — текстăн (предложенин) пайне, сыпăкне пĕтĕмĕшпе ылмаштарасси (выр. прием целостного преобразования). Ун пек чухне сăмахсен тата вĕсен ансат майлашăвĕсен, ушкăнĕсен шайĕнче тӳркилӳ форма тĕлĕшĕнчен пачах пулмасть, вĕсене пайăн-пайăн куçарма та май çук.

Фразеологизма каппипе ылмаштарма, паллах, куçару чĕлхинче çав пĕлтерĕшлĕ тата тивĕçлĕ коннотациллĕ, стиль сĕмĕллĕ единица пулни кирлĕ. Пуян фразеологиллĕ чĕлхесенче ун пек эквивалентлă единицăсем тупăнаççĕ. Акă, М. Ф. Черновăн «Кĕске вырăсла-чăвашла фразеологи словарĕнче» (Шупашкар, 1975) выр. *бить баклуши* валли *кĕрĕк арки йăвала, хăйраса лар, якăр хăйраса çӳре, кĕл алласа лар, кĕл пăрçине суйла* эквивалентсем сĕннĕ, унсăр пуçне скобкăра ăнлантарса панă: «вăхăта усăсăр ирттер». Чăн та, словарь хыççăн хушса панă статьяра вăл «фразеологи эквиваленчĕсемпе куçарни» шутне *без роду и племени — йăхсăр-несĕлсĕр, валить через пень колоду — тунката урлă каска йăвантар, вести двойную игру — иккĕлле вăйă выля* йышши тĕслĕхсене те кĕртнĕ. Тĕрĕссипе вĕсем кĕретех калька шутне кĕмелли курăнать. Вăл калькăсем чĕлхере мĕн тери тымар ярса çирĕпленни вара — урăх ыйту.

Идиомăсен шайĕнче икĕ чĕлхе единицисем пур енĕпе те туллин танлашни, çапах та, тăлмач ĕçĕнче пĕрмаях пулмасть. Пĕрремĕшĕнчен, ун пек танлăха шыраса тупса çирĕплетес пулать, çак тĕллевпе фразеологизма темиçе контекста лартса тĕрĕслес пулать. Иккĕмĕшĕнчен, трансформаци тумалли материал хисепĕ вуншар хут пысăкрах пулать: кунта е семантика ăраснарах килет, е стильпе коннотаци çĕнĕ чĕлхе контекстне «шăнăçмаççĕ». Ахальтен мар ĕнтĕ икĕ чĕлхеллĕ словарьсенче вĕсене ытларах тӳркилӳпе мар, ăнлантарупа уçса панине курма тивет. Сăмахран, çав словарьтех *за здорово живешь* тенине *ним (ним туман) çинчех, пĕр сăлтавсăрах, нимĕн айăпсăрах* тесе, *сыграть в ящик* тенине *вилсе кай* тесе куçарнă. Тата çакна асра тытас пулать: вырăс фразеологине Европа чĕлхисен фразеологийĕпе танлаштарса тахçанах тĕпчеççĕ, икĕ чĕлхеллĕ фразеологи словарĕсем те сахал мар кăларнă, çавăнпа та унта идиомăна идиомăпа куçарнине ытларах тĕл пулма пулать. Вырăсла-чăвашла танлаштарулла фразеологи тĕпчевĕсем вара çукпа пĕрех. Çакă тăлмачсене твор-

чествăлла ĕçлеме, харпăр ăслайне тата наука шыравлăхне ытларах палăртма хистет.

Словарьти ăнлантару пĕр-пĕр текста куçарнă чухне унти фразеологизмсен пĕлтерĕшне ăса илме кирлех ĕнтĕ — куçарăвăн пĕрремĕш пусăмĕ оригинала, унăн пур элеменчĕсене те ăнланасси пулать. Çакă уйрăмах ют культурăпа, литература традицийĕсемпе, мифологи е тĕн сăнарĕсемпе, тивĕçлĕ сăмахлăхпа çыхăннă фразеологизмсене куçарнă чухне кирлĕ. Акă, антика культурине пĕлмесĕр *ахиллесова пята, атическая соль, ариаднина нить, эзопов язык, между Сциллой и Харибдой* йышши, христиан тĕнĕн текстĕсемсĕр *аредовы веки, вавилонское столпотворение, каинова печать, манна небесная* йышши, вырăс литературине вуламасăр *тришкин кафтан, а Васька слушает да ест, как бы чего не вышло, луч света в темном царстве, унтер Пришибеев* йышши фразеологизмсене тĕрĕс ăнланма та, куçарма та çук.

Анчах контекстра, уйрăмах илемлĕ произведенире, сăнарлă та вичкĕн идиома вырăнне вăрăм перифраза, пуплеве сӳрĕклетекен ăнлантару кĕртсе яни пурçăн кĕпе çумне шăла пир çанă çĕлесе лартниех пулать. Тӳртен куçару, калькăлав та пулăшмасть ун пек чух. Референт тата коннотаци пĕлтерĕшĕпе шăп та шай тӳр килекен единица тупăнмасан ăна функци тĕлĕшĕнчен саплакан, компенсацилекен майсемпе усă курас пулать. Ку вара — питĕ кăткăс задача, ăна чăннипех творчествăлла ĕçлекен, нумай пĕлӳллĕ çын çеç ăнăçлă татса пама пултарать. Фразеологин текстри илемлĕхпе стиль «тиевлĕхне» ăнланса çитерейменни е ăна КЧ мелĕсемпе хайласа кăтартма пултарайманни чăваш куçарăвĕсен питĕ пысăк çитменлĕхĕ пулса тăрать.

«Уçнă çеремĕн» чăвашла текстĕнчен тĕслĕхсем илĕпĕр. Выр.: «Калибра оно мелкого, слабосильное, и дела его через это очень даже плачевные. А тем самым и льется вода на мельницу...» Чăв.: «Калăпăшĕпе вăл пĕчĕккĕ, халсăр, çавна пула унăн ĕçĕсем те шутсăр начар. Çапла пулнипех ĕнтĕ арман урапи çине вĕссĕрех шыв юхать те». Сăмах кунта çĕр ĕçлемелли юлташлăх çинчен пырать. Тĕп шухăш: ушкăнлă ĕç пĕрлешĕвĕ ăнăçсăр пулни тăшманшăн усăллă. Ана пат тӳррĕн каламан, ытарлăн «лить воду на чью-нибудь мельницу» фразеологизм пулăшнипе вăлтнă. Тӳртен куçарăва пула çакă пачах çухалнă. Чăвашла ăрасна сăнарлă идиома тупни те (пĕтĕмĕшле ылмаштару мелĕ), юлташлăх путланни камшăн пайталлă пулнине тӳррĕн калани те (хушăм трансформацийĕ) вырăнлă пулнă.

Вырăсла текстра: «В тебе казачьего — поганая капля. Ведерник тамбовский тебя делал». Куçару: «Санра казак хастарлăхĕ йĕрĕнчĕк тумлам кăна юлнă иккен. Сана витресем тĕплесе сӳрекен тамбовски çынни туса янă». Дон çинче казак

тесе арçынна калаççĕ, чăвашла пулсан, вăл сăмахсене калакан хĕрарăм «Эсĕ арçын мар, çуламан пăру» тенĕ пулĕччĕ. Мĕн вăл *йĕрĕнчĕк тумлам?* Кунта *поганый* сăмахăн урăх пĕлтерĕш — «пĕчĕк, сахал, кăшт çеç». *Тамбовски çынни* тени те пăтрав çеç çуратать вулакан пуçĕнче. Ĕçĕ тĕрĕссипе акă мĕнре: ĕлĕк Дон тăрăхĕнче Раççейĕн вăтаçĕр кĕпĕрнисенчен пынă алăстисем нумай çӳренĕ. Ĕçе ал айĕнчи пур-çук хатĕрпе хăппăл-хаппăл тунă пирки казаксем вĕсене хисеплĕмен. Шухăш тĕшши — «пахасăр, япăх ĕç», ытарлăн — «ниме тăманăн çын, ăçтиçук». Çавна чăвашла çавăрса калама урăх сăнарлă пуплев тупмалла е хайламалла пуннă (сăм. *катăк калăппа тунă, калăпне лартайман* т. ыт. те). *Тамбовский, ведерник* сăмахсене тăсса кайса ăнлантарни вара кунта пачах вырнаçусăр.

Çав текстрах «кое-как овладев собой» тенине «хăйне-хăй аран-аран алла илсе» çăмахсемпе куçарнă. Пĕлтерĕш уçăмлă. Контекста кура, çын мĕнле кăмăл-туйăмпа хĕрӳленсе кайнине шута илсе, вăл çиллине шăнарни е лăпланни çинчен каламалла пулнă. Чăвашла *алла ил* тени вара унашкал пĕлтерĕшпе çыхăнмасть. Калама пĕлмен сăмах шухăша пăснине çак ăнăççăр куçару та çирĕплетет: «Пойдут как одна душа» — «Вĕсем пĕр чунлă çынсем пек тапранса тухĕç». Çакна Островнов кулак казаксем совет влаçне хирĕç çĕкленессе шанса калать. Чăвашла *кар тăрĕç* е *пĕр çын пек çĕкленĕç* тесе куçарма май пулнă. Тăлмачсем вара теменле «пĕр чунлă» çынсем пирки иккĕленӳллĕ шухăша яраççĕ (ахăртнех, «икĕ чунлисем» те пур-тăр!).

Фразеологи единицин сăнар тытăмĕ, шалти форми уçăмлă пулсан, çакă пĕлтерĕш тĕшшине кĕретех палăртать пулсан, ăна калькăласа куçарни вырăнлă. Икĕ чĕлхепе калаçакансен культура традицийĕсем çывăх пулни, икчĕлхелĕх аталанни çак калькăлав çулне нумай çăмăллатать. Тĕслĕхрен, иртнĕ ĕмĕрсенче вырăс чĕлхине Европа чĕлхисенчен фразеологи калькисем питĕ нумай кĕнĕ. Халĕ вырăс чĕлхинчен СССР халăхĕсен, çавăн пекех ытти çĕршывсен чĕлхисене те фразеологи калькисем куçасси вăйланса пырать, çакă куçару ĕçĕ сарăлнипе тӳррĕнех çыхăннă. М. Ф. Чернов словарĕнчен илнĕ тĕслĕхсем: *выходить (выйти) сухим из воды — шывран типĕ тухăр готов (рад, хотел бы) сквозь землю провалиться — çĕр айне анса кайма хатĕр, третьи петухи пропели — авантсем виççĕ авăтрĕç.*

Анчах кунта çакна шута илес пулать: словарьти куçару контекстăн пур тĕрлĕ пайăр условийĕсене шута илме пултараймасть. Фразеологизма куçарасси вара, уйрăмах илемлĕ литературăра, контекстран нумай килет. Пĕр наци традицийĕн паллисем йĕрленсе юлнă фразеологизма тепĕр чĕлхене калькăласа куçарсан, çĕнĕ контекстра мелсĕр хирĕçлĕх, çура-

çусăрлăх сиксе тухма пултарать. Çапла, *кричать во всю Ивановскую, вот тебе, бабушка, и Юрьев день* йышши вырăс каларăшĕсем урăх чĕлхе контекстĕнче тивĕçлĕ шухăша ăнланмалла палăртаймаççĕ. Нумай чĕлхесенче *çĕлен пек* танлаштару пĕлтерĕшĕ — «сиенлĕ, усал, ултавлă». Анчах Азири хăшпĕр çĕршывсенче, сăмахран, Индире çĕлен сăнарĕ пачах урăххине символлать, унта *çĕлен пек* тесе питĕ ăслă çынна, ăсчаха калаççĕ. Çавнашкалах *сивĕ вăрçă* тени Инди çыннисемшĕн — пачах майсăр япала, мĕншĕн тесен ку çĕршыв климатĕнче шăрăх вăл — яланхи инкек, сулхăн, сивĕ вара — ĕмĕтленнĕ ырлăх. Вĕсемшĕн сивĕ вăрçă «лайăх вăрçă» пĕлтерĕшлĕ пулса тухать.

Тепĕр енчен, хатĕр тӳркилӳ пур çинченех контекст куçарура калькăлама хистени те пулать. Кăткăс та пысăк ĕç час пулманни çинчен вырăссем «Не сразу Москва строилась» теççĕ, французсем çавнах Париж çинчен калаççĕ, ку единицăн испанла эквиваленчĕ — «Саморăна пĕр сехетрех çĕнсе илеймен». Вырăсларан е французларан испанла куçарас пулсан, Мускава е Парижа асăнма тивнĕ пулĕчĕ, мĕншĕн тесен Самора вăл контекстсемшĕн — пачах ют япала.

«Çунатлă сăмахсене», афоризмсене куçармасăр, çав халлĕнех хăварни те тĕл пулать (тӳрĕ цитаци мелĕ). Ун пек чухне ют чĕлхе сăмахĕсен графика формине те çаплах хăвараççĕ. Паллах, ку мелпе вулакансен анлă массисем оригинал чĕлхин материалне çителĕклĕ чухлĕ пĕлнĕ чухне çеç усă курма пулать.

Пĕтĕмлетсе çакна палăртас пулать. Фразеологи единицисем нумай тĕрлĕ, вĕсен семантики, синтаксис тытăмĕ, сăнарлăх-ытарлăхĕ, текстри функцийĕ, паллах, пĕр пек мар. Фразеологи материалне куçарнă чухне куçару мелне суйласа илесси çак факторсемпе çыхăннă: а) сăмах çаврăнăшĕн идиомăлăхĕ, шăранулăхĕ тата пĕлтерĕш пĕрлĕхĕ, пайланманлăхĕ, ă) куçару чĕлхинче çавнашкал тытăмлă тата пĕлтерĕшпе функциллĕ тӳркилӳ пурри е çукки, б) фразеологизмăн нацилле хăйевĕрлĕх паллисем пулни. Куçарăвăн конкретлă ыйтăвĕсене татса панă чухне, паллах, ытти факторсем те витĕмлĕ пулма пултараççĕ.

ХУШСА ПАНИСЕМ

I. ДОКЛАДСЕМПЕ РЕФЕРАТСЕН ТЕМИСЕМ

Рефератсем хатĕрлесси

Куçару теорийĕпе тата историйĕпе çыхăннă ыйтусене анлăрах тишкерме студентсем реферат хатĕрлеççĕ. Рефератсене лекцисенче тивĕçлĕ ыйтусене пăхса тухнă хыççăн сӳтсе явмалла, унсăрăн ăнланмалла пулмĕ. Автор шухăшĕсене лайăхрах ăнланса илме чи малтанах унăн ĕçне пĕтĕмĕшпе пăхса тухмалла, библиографи списокĕнчи кĕнекесене те вуламалла.

Рефератсемпе докладсене чăвашла çырас пулать, çавăнпа та тĕп определенисене, ăнлавсене уçса пама çак пособири терминсен списокĕпе, ятарлă справочниксемпе усă курмалла, преподавательпе канаш тумалла. Вĕренӳ планĕнчи ытти дисциплинăсене лайăх пĕлни кирлĕ. Реферат 20—25 минутран вăрăм пулмалла мар, çавăнпа та авторăн тĕп шухăшĕсене уйăрса илмелле. Тĕпчевçĕсем кирлĕ чĕлхесенчен тĕслĕхсем илсе кăтартаççĕ. Вĕсене ăнлантарнипе пĕрлех чăваш чĕлхинчен те юрăхлă тĕслĕхсем тупса кăтартма тăрăшас пулать.

Кашни тема хыççăн скобкăра тишкермелли ĕç авторĕн ятне тата тивĕçлĕ кĕнеке страницисене çырса панă. Кĕнеке ятне автор хушамачĕ тăрăх библиографи списокĕнче тупма пулать.

Реферат темисем:

1. Куçару наукин тытăмĕпе задачисем (А. В. Федоров, 9—23).
2. Куçару науки тата унăн объекчĕ (Р. К. Миньяр-Белоручев, 5—28).
3. Куçарăва тĕрлĕ наукăсенче тишкерни (А. Д. Швейцер, 6—16).
4. Куçару ĕçĕпе унăн теорийĕ Хĕвеланăç Европăра аталанни (А. В. Федоров, 24—35).
5. Российăра куçару ĕçĕ XIX ĕмĕрччен аталанни (А. В. Федоров, 35—42).
6. Российăра куçару ĕçĕ XIX ĕмĕрте аталанни (А. В. Федоров, 43—52).
7. К. Маркспа Ф. Энгельс тата В. И. Ленин куçару çинчен (А. В. Федоров, 71—83).
8. Вырăс революционер-демократĕсем куçару çинчен (А. В. Федоров, 53—61).
9. Куçару ĕçĕ Российăра XIX ĕмĕр вĕçĕнче — XX ĕмĕр пуçламăшĕнче аталанни (А. В. Федоров, 62—70).
10. Пирĕн çĕршывра куçару ĕçĕ революци хыççăн аталанни (А. В. Федоров, 84—92).
11. Куçару теорийĕ пирĕн çĕршывра вăрçăнченхи тапхăрта аталанни (А. В. Федоров, 93—100).

12. Куçару теорийĕ пирĕн çĕршывра вăрçă хыççăн аталанни (А. В. Федоров, 101—121).

13. Куçару пулăмĕн лингвистика тупсăмĕ (Л. С. Бархударов, 5—46).

14. Куçарăнаслăх тата куçару танпахалăхĕн ыйтăвĕ (А. В. Федоров, 122—130).

15. Куçару единицисем çинчен (Р. К. Миньяр-Белоручев, 83—99).

16. Куçару — хутшăну тĕсĕ (В. Н. Комиссаров, 18—22).

17. Куçарăвăн денотат теорийĕ (В. Н. Комиссаров, 32—36).

18. Куçарăвăн трансформаци теорийĕ (В. Н. Комиссаров, 37—42).

19. Куçарăвăн семантика теорийĕ (В. Н. Комиссаров, 42—61).

20. Эквивалентлăх шайĕсен теорийĕ (В. Н. Комиссаров, 74).

21. Фон пĕлĕвĕсем тата куçару (В. С. Виноградов. 85—107).

22. Çĕнĕ тата ăнсăрт сăмахсене куçарасси (В. С. Виноградов, 108—122).

23. Куçару тупсăмĕ тата унăн тĕсĕсем (Вопросы теории перевода в зарубежной лингвистике, 91—114).

24. Куçару тата пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕн ыйтăвĕсем (Çав сборниках, 16—24).

25. Коммуникаци теорийĕ тата куçару ыйтăвĕсем (Çав сборниках, 69—90).

26. Куçару наукин хăшпĕр ыйтăвĕсем (Çав сборниках, 114—137).

Тĕпчев ĕçĕсем çырасси

Тĕпчев ĕçĕсене студентсем лекцисем итленĕ тата практика занятийĕсенче куçару текстĕсене тишкерме хăнăхнă хыççăн çыраççĕ. Вĕсен темисене темиçе ушкăна уйăрма пулать.

Пĕрремĕш ушкăна Чăваш çĕршывĕнче куçару пуçланса аталаннипе çыхăннă темăсем кĕреççĕ.

Иккĕмĕш ушкăна уйрăм тăлмачсен ĕçне-хĕлне, опытне, ăсталăх мелĕсене, вĕсен куçару принципĕсене тишкерессипе çыхăннă темăсем кĕреççĕ.

Виççĕмĕш ушкăнра — куçарăвăн тĕрлĕ аспекчĕсемпе е уйрăм ыйтăвĕсемпе çыхăннă темăсем.

Çавăн пекех списокра куçару критикин темисем те пур. «Критика» тени куçарăва мĕнле пулсан та тиркесе тăкмаллине пĕлтермест: сăмах куçарнă текстсене вăхăтра тишкерсе тĕрĕс хак парасси, усăллă опыта, çитĕнӳсене асăрхасси, вĕсене çирĕплетме, шăйрăксемпе çитменлĕхсене пĕтерме пулăшасси çинчен пырать.

Тĕпчев результачĕсем çинчен семинарта, кружокра е наука конференцийĕсенче доклад тума, нумайăшĕсемпе курс тата диплом ĕçĕсем хатĕрлеме, хаçат-журналсем валли статьясем çырма пулать. Ĕçе ăнăçлă пурнăçламалли тĕп услови — кирлĕ теори пĕлĕвĕсене пуçа хывса, анализ меслечĕсене алла илсе, харпăр хăй тĕллĕн материал пухса тĕпчесси. Кăтартнă текстăн оригиналне тата куçарăвне тимлĕн танлаштарса вуланă хыççăн ăнланман вырăнсене, сăмахсене, фактсене пĕлсе çитме тăрăшмалла — справочниксем вуламалла, преподавательтен ыйтса пĕлмелле. Уйрăмах текстăн жанрпа стиль палăсисене, чĕлхе уйрăмлăхĕсене тимлĕ асăрхамалла. Тăлмач хăй паллă писатель е поэт пулсан, унăн харпăр пултарулăхĕн меслечĕ-ăслайĕсене те асра тытмалла, мĕншĕн тесен вĕсем куçарура мĕнле палăрнине сăнасси те тĕпчев задачи пулса тăрать.

Çакăн хыççăн пур енлĕн (куçарăвăн лексикăпа семантика, грамматика, стиль енĕсене асăрхаса) е палăртса панă аспектпа, ыйтупа материал çырса илмелле. Тĕпчев материалне яланах 9×12 см пысăкăш карточкăсем çине çырмалла: малтан чăвашла предложение (е унăн пайне, сăмах çаврăнăшне), ун айнех — вырăсла текстри тивĕçлĕ вырăна. Кашни цитата айне кĕскетнĕ майпа — индекспа мĕнле кĕнекен хăш страницинчен çырса илнине палла тумалла, журналăн, хаçатăн номерне, çулне кăтартмалла. Пухăннă материала ушкăнласа тишкермелли мелсене, преподаватель ăнлантарнисĕр пуçне, вуланă статьясен, кĕнекесен авторĕсенчен те вĕренсе пырас пулать.

Чĕлхе факчĕсем икĕ тĕрлисем пулаççĕ: пĕрисем тăлмач хăйĕн задачине ăнăçлă пурнăçланине çирĕплетеççĕ, теприсем пĕлӳ е ăсталăх çитменнине кăтартаççĕ, кĕретех йăнăш куçарнисем, шухăша пăснисем, стиль сĕмне улăштарнисем те чылай пулаççĕ. Вĕсене те, кусене те асăрхамалла, тема аспектне кура пуçтарса пĕтĕмлетмелле. Йăнăш е ăнăçсăр куçарнă вырăна студентăн яланах юсаса тĕрĕслеме, харпăр хăй вариантне сĕнме тăрăшмалла. Асăрханă йăнăш характерне, тупсăмне çийĕнчех карточка вĕçĕнче кĕскен çырса палăртмалла, унсăрăн каярахпа тĕслĕхе мĕн пирки çырса илнине манма пулать.

Тишкерме палăртнă текст ытлашши пысăк пулсан, преподавательпе калаçса татăлса, унăн пĕр пайне илме е темиçен пĕр текста валеçсе тишкерме пулать. Темăна суйласа иличчен кăтартнă произведенин (çакă уйрăмах кивĕ куçарусене пырса тивет) вырăсла тата чăвашла текстне тупма май пурринне ыйтса пĕлмелле. Ку вăл заочниксемшĕн уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Май пулсан, библиотекăран илнипе мар, харпăр кĕнекипе ĕçлеме тăрăшăр, мĕншĕн тесен унта кирлĕ палăртусем, асăрхаттарусем тума пулать.

Кашни темăпа ĕçленĕ чухне хăйне май йывăрлăхсем тĕл пулаççĕ. Ĕçсен композицийĕпе тытăмĕ пĕр пек пулма пултараймасть. Хăшпĕрисемпе литература чылай тупăнать, теприсемпе нимĕн те çук. Анчах кирек мĕнле темăпа ĕçленĕ чухне те çаксене уçса пани кирлĕ:

1) ыйтăва (автора, жанра, саманана т. ыт. те) пĕтĕмĕшле характеристика пани;

2) ку темăпа халиччен мĕн-мĕн çырни-каланине кĕскен пăхса тухни;

3) пухнă материала тишкернин тĕллевне тата пĕлтерĕшне ăнлантарса пани;

4) фактсене ушкăнласа, тивĕçлĕ лингвистика е, кирлĕ пулсан, стилистика анализĕ туса ирттерни, пĕтĕмлетӳсем хатĕрлени;

5) ĕçе вĕçлесе, халлĕхе татса памасăр юлнă е çĕнĕрен тухса тăнă ыйтусене кăтартмалла; куçарăва лайăхлатма харпăр хăй сĕнĕвĕсем пулсан, вĕсене каламалла, çирĕплетсе памалла.

Карточкăсене çырса пухнă материалсене кăларса пăрахма юрамасть, вĕсене типтерлĕн усрамалла: тен, малашне çав темăпах ĕçлемелле пулĕ. Ĕçе пĕтĕмпех вĕçлесен, сăмахран, диплом ĕçĕ çырса пĕтерсен, карточкăсене тĕпчев ĕçĕпе пĕрле кафедрăна тăратас пулать, вĕсем анлăрах тĕпчевсем тума кирлĕ пулаççĕ.

Темăсем хыççăн библиографи кăтартăвĕсем паман. Кĕнеке вĕçĕнчи списокри ĕçсемпе çырлахмасăр, кашни студентăн кирлĕ кĕнекесемпе статьясене харпăр хăй тĕллĕн шыраса тупма вăй хурас пулать. Халĕ пурăнакан ученăйсемпе, тăлмачсемпе, писательсемпе хăйсемпе калаçса материал пухни питĕ пысăк усă парĕ. Информаци хатĕрĕсен куçару ĕçне-хĕлне тишкернĕ май вĕсен редакцийĕсемпе тачă сыхăну тытас пулать.

Тĕпчев ĕçĕсен темисем:

1. Л. Н. Толстойăн «Книги для чтения» кĕнекисене (4 кĕнеке) чăвашла куçарнин чĕлхе уйрăмлăхĕсем.

2. «Рассказы из русской истории» кĕнекесене чăвашла куçарнин чĕлхе уйрăмлăхĕсем.

3. Чăвашсен пирвайхи «Хыпар» хаçатĕнчи куçарнă материалсен чĕлхе уйрăмлăхĕсем.

4. К. В. Ивановăн куçару пултарулăхĕ.

5. К. В. Иванов М. Ю. Лермонтовăн «Песня про купца Калашникова...» произведенине куçарни.

6. Н. В. Шупуççыннин куçару пултарулăхĕ.

7. Хумма Çеменĕн куçару ăсталăхĕ.

8. Митта Ваçлейĕн куçару пултарулăхĕ.

9. М. Я. Сироткин профессорăн куçару пултарулăхĕ.

10. А. Д. Кăлкан — драматурги куçарăвĕн ăсти.

11. А. С. Пушкин произведенийĕсем чăвашла (уйрăм произведенисем тăрăх).

12. П. П. Хусанкай А. С. Пушкинăн «Евгений Онегин» романне куçарнисене танлаштарса тишкерни (сыпăксем тăрăх).

13. П. П. Хусанкай куçару меслечĕсемпе принципĕсем çинчен (поэт статйисем тăрăх).

14. Н. А. Некрасов сăввисем чăвашла (уйрăм произведенисем тăрăх).

15. И. С. Тургенев произведенийĕсем чăвашла (уйрăм произведенисемпе сборниксем тăрăх).

16. А. И. Куприн произведенийĕсем чăвашла (уйрăмшарăн).

17. А. М. Горький произведенийĕсем чăвашла (уйрăмшарăн).

18. М. А. Шолохов произведенийĕсем чăвашла (уйрăмшарăн).

19. В. В. Маяковский сăввисем чăвашла (уйрăм произведенисем тăрăх).

20. А. Н. Толстойăн «Золотой ключик или приключения Буратино» кĕнекине чăвашла куçарнин чĕлхи.

21. Çывăх тăванла чĕлхесем хушшинчи куçару уйрăмлăхĕсем (тутарларан тӳрех чăвашла куçарнисене тĕпчесе).

22. Л. Я. Агаковăн «Ылтăн вăчăра» повеçне вырăсла куçарни (тăлмач — А. М. Чистяков).

23. Хветĕр Уярăн «Таната» романĕ вырăсла.

24. К. В. Ивановăн «Нарспи» поэмине вырăсла куçарнисене танлаштарса тишкерни.

25. И. В. Гетен «Фауст» трагедине тӳррĕнех нимĕçлерен чăвашла куçарни.

26. Нимĕç писателĕ А. Пробст кĕнекисене тӳррĕнех чăвашла куçарни (тăлмач И. С. Серов).

27. Геннадий Айхи Франци поэчĕсен сăввисене тӳррĕнех чăвашла куçарни.

28. «СССР Конституцине» чăвашла куçарнине тишкерни.

29. КПСС черетлĕ съезчĕн материалĕсене чăвашла куçарнине тишкерни.

30. «Коммунистсен партийĕн Манифестне» чăвашла куçарнисене танлаштарса тишкерни.

31. В. И. Ленин ĕçĕсене чăвашла куçарнисене тишкерни («Государство и революция», «Две тактики социал-демократии в демократической революции», «Задачи союзов молодежи», «Очередные задачи «Советской власти», «О кооперации» т. ыт. те).

32. Чăваш театрĕсенчи куçарнă пьесăсен чĕлхи (уйрăм спектакльсем тăрăх).

33. Чăваш радиопа телевидени передачисенчен куçарнă материалсен чĕлхе уйрăмлăхĕсем.

34. «Коммунизм ялавĕ» хаçатри куçарнă материалсен чĕлхине тишкерни (тематика ушкăнĕсем е уйрăм пысăк материалсем тăрăх).

35. «Агитатор блокнотĕнчи» куçару чĕлхи (уйрăм номерсем е рубрикăсем тăрăх).

36. Чăваш литература журналĕсенчи куçарнă материалсен чĕлхи (тематика ушкăнĕсем тăрăх).

37. Район хаçачĕсенчи куçарнă материалсен чĕлхи (кашни хаçачĕпе уйрăммăн).

38. Шкул учебникĕсене чăвашла куçарнин чĕлхине тишкерни (тĕрлĕ тапхăрта тухнă уйрăм кĕнекесем тăрăх).

39. Уроксенче куçару мелĕпе усă курасси (тĕрлĕ классенче, тĕрлĕ предмет урокĕсенче сăнавсем туса).

40. Куçарура транскрипци тата транслитераци мелĕсемпе усă курни (хаçат-журнал материалĕпе).

41. Куçарура лексика трансформацийĕн мелĕсемпе усă курасси (тĕрлĕ жанрлă литературăпа усă курса).

42. Эквивалентсăр лексикăна куçарса ăнлантармалли майсем.

43. Вырăсла текстăн куçармасăр хăваракан элеменчĕсем тата вĕсен функцийĕсем.

44. Пытарăнчăк пĕлтерĕше аталантарса куçармалли мелсем.

45. Куçарăнман лексикăпа стиль элеменчĕсене функци тĕлĕшĕнчен сапласси.

46. Географи ячĕсене куçарас ыйтусем (хаçат-журнал материалĕсем тăрăх).

47. Куçарури наукăпа техника терминологийĕн ыйтăвĕсем (А. Г. Николаев космонавтăн «Космос — дорога без конца» кĕнекине куçарнин материалĕпе).

48. Спорт терминологине куçарас ыйтусем (хаçатсен материалĕсем тăрăх).

49. Предприятисемпе учрежденисен тата организацисен ячĕсене (номенклатурине) чăвашла куçарасси («Коммунизм ялавĕ» хаçат материалĕсем тăрăх).

50. Фразеологи единицисене куçармалли мелсем (илемлĕ литература куçарăвĕ тăрăх).

51. Куçарура грамматика трансформацийĕн мелĕсемпе усă курасси (хаçат-журнал тата илемлĕ литература куçарăвĕн материалĕсем тăрăх).

52. Вырăс чĕлхинчи çыхăну паллă ячĕсене чăвашла куçарасси.

53. Вырăс чĕлхинчи предлоглă, глаголсăр сăмах çаврăнăшĕсене куçарасси.

54. Вырăс чĕлхинчи пăхăнуллă хутлă предложенисене чăвашла куçармалли мелсем.

55. Вырăс чĕлхинчи хутлă определенниллĕ сăмах майлашăвĕсене (анлă терминсене) чăвашла куçарасси.

II. ПИРВАЙХИ ЧАВАШ КУҪАРАВЕСЕН ТЕСЛЕХЕСЕМ

1788 ҫулта Чулхулара куҫарнă «Кĕске катихизис» сыпăкĕсем

Вопрос: Чему тебя прежде всего сия молитва научает?

Ответ: Тому: что великий бог меня и весь свет создал, меня и весь свет управляет, и хранит, при том еще совесть моя повелевает непрестанно: любить его сердечно, почитать нелицемерно, и думать и делать все то, что его святой закон повелевает.

Идю: Мине сана борыньчень илик ку киле вирендеть?

Хоров: Она: минь аслы тора мана бор сяндалык не да соратны, мана сяндалык не да тюрледеть, осрать та, ондах тада ишчики манан хошать мана тутуш: йорадас она чире ба, кардас олдаламассар, шокшлас тувас она боре да, минь онан святой сакон хошать.

Вопрос: Как ты о боге рассуждаешь?

Ответ: Я думаю, рассуждаю, — верю и признаю — бога единаго, и кроме его другаго не знаю, он един всегда был, он начала и конца не имеет, он дух — безтелесный, и бессмертный. При том правосуден, милосерд, везде на всяком месте есть, все видит, все слышит, и все знает наши мысли и в мыслях содержимое.

Идю: Епле ас торашин шокшладан?

Хоров: Абе шокшладап, шокш хорадап, шанадап баллашадап та тора бряхсана, ондан посне орех бильместап, вул бичень тутуш борче, вул посянны татак та бильместь, вул сывлиш йутьсар, вилим зар да. Тада тюрь сут туваган, милисьля, киректа хараберь серде бор; шибах корать, шибах итлеть, борне билеть перинь шокш сама шокш ишиньче тыда туранна да.

Вопрос: Довольно ли о боге так знать и думать, а делать как хочешь?

Ответ: Не довольно: я как рассуждаю о боге, так согласно и жить мне должно. Когда я знаю бога справедливым, то делать худое опасаться буду, избегая тем его правосудия, а ожидая его милости. Ежели он милосерд, я в своих грехах буду просить прощения, надеясь, что он его не отвергнет. Ежели он везде есть, и все знает, для того я буду беречься, всякое худое делать и думать, и постараюсь служить ему всегда чистою совестию и мыслию непорочною.

Идю: Сидеди торашин апла биляс шокшлас та, тувас вара епле кильштередан?

Хоров: Ситместь: Абе епле шокш тыдадап торашин, тувас канаш ба мана бурнма да керле. Хынса абе торана биледап тюрь тувагана, ондан озал тувма шихланма болап, хуталса

он бала онан тюрь тува туран-на, кютьса вара онан милис не. Хынса вул милисьля, абе хаман силах замшин казяру тар-гаслама болап, шанза мин вул она брахме деза. Хынса вул харабер серде бор, бор не да билет, он шин абе шихланза болап; шибах озала тувма шокшлама да, тармашап вара служить тувма она тутуш таза ишчики ба, шогыш ба да аип сар.

Вопрос: Чему учит христианская вера о господе нашем Иисусе Христе?

Ответ: Она уверяет нас: сколь милосерд к нам грешным господь наш Иисус Христос. Он для нас сошел с небес, принял на себя нашу плоть, открыл нам волю свою, и потемненную нашу мысль просветил истинным богопознанием: а потом ради великой евоей любви, и для очищения грехов наших на кресте умер: и в третий день воскрес, и с плотию вознёсся на небо.

Идю: Мине вирендеть вырусла юла аспоть перин шин Сюсь Христос?

Хоров: Вул шандарать пиря: минь таран милихся пере силахла зама аспоть перин Сюсь Христос. Вул перин шин анче пюлють зам синчен, ильче ху сине йуть порин не, осьре перя хуван ирик те, тютюмленны да перин шогыш не судулдарче чинлах тора биле туран ба: он дан кайран хувын аслы пере кумул шин, таза ласшин да силах сама перин крест синче вильны: Висе конда да чирьльче, йуче ба да хабарнны пюлють сине.

Вопрос: Сие христианское веры учение, что пользы приносит к лучшему твоему житию?

Ответ: Безотрицательно заставляет любить бога, ежели бог меня столь возлюбил, и благоволил в приятой плоти все за меня пострадать и умереть. Так же и мне должно его весьма благодарить, и сердечно больше всех вещей в свете любить, и больше всего почитать. Кроме же того весьма утешаюсь, и без сомнения надеюсь получить от бога всякое добро и счастие. Ежели он единороднаго сына своего ради меня не пожалел, как же и другое что ради его мне не дарует?

Идю: Ку вырус юлаш вирене туран, минь чола ирлага кюреть санан ира бурнась-шин?

Хоров: Харлашмазар хошать мана йоратма Торана, хынса Тора он чохла мана йоратре, кильшре да йуть ленза борамар маншин хорлах корма виляс та. Сяван бек манан да керле она питьтин поссябас, чиреба да бор тюнчеры ябала зам ран ытла йорадас, таминь день да итла кардас. Он дан посне вара питьтин хибирдедедап, шихланмазар да шанадап тобас тораран харабер ирлах телей ба. Хынса вул берлече сиоратны ху ивул на маншин хиргенмере; лепле вара орех минь оншин мана баме?

Вопрос: Что ты принял от святаго крещения?

Ответ: Получил очищение грехов, и приобщился к собранию христиан: а при том пред богом и пред церковию его даю обещание так чисто и непорочно свою жизнь провождать, как я чист и непорочен вышел из купели крещения, сделался достойным причастником тела и крови христовой.

Идю: Минь ильдан ас теня кильны ран?

Хоров: Топрам силах сама тазала туранна, сипсяндам да поха сйомне вырус саман: онда вара Тора унче черквя да унче онан бама боладап, сяпла таза аипсар да хаман бурнасьна осатма, епле абе таза аипсар да тохса теня кины вырандан, йоралла болдым причасник йуть ба йонна Христован.

Вопрос: Для чего ты сей великой святыни причащаешься?

Ответ: Принимаю святое причащение ради приобщения моего самому Христу, и ради получения новыя силы и благодати, жить свято и по-христиански: и обще со всеми христианами приступая ко храму божию, уверяю их, от церкви быть не разлучным, и с ними любовно и единомысленно пребывать желаю.

Идю: Минь шин ас кончола аслы ирлага причащатца тувадан?

Хоров: Сыбадап святой причастине сипснас-шин хуне Христос сйомне, тобас шин да синерен хал ирлах ба, бурнма тазалахра да выруза вышкал: берле да вырус сам ба кирьза торан киле батня, шандарадап вул зама, черквя ран оярмазар болма, вул зам та да варла берьканашла да бурма боладап.

III. КУҪАРУ ЁҪЁН ТЕРМИНЁСЕМ

абсолютлӑ мар эквивалентлӑх относительная эквивалентность
абсолютлӑ мар эквивалентсем относительные эквиваленты
абсолютлӑ эквивалентлӑх абсолютная эквивалентность
абсолютлӑ эквивалентсем абсолютные эквиваленты
автор куҫарӑвӗ авторский перевод
авторизаци авторизация
авторизациленӗ куҫару авторизованный перевод
адекватлӑ (танпаха) куҫару адекватный перевод
анлӑ контекст широкий контекст
анлӑлатса куҫарни лексическое развертывание, перевод слова словосочетанием
ансӑр контекст узкий контекст
ансӑрлатса куҫарни лексическое свертывание, перевод словосочетания словом
антонимла куҫару антонимический перевод
архаизмсене куҫарасси передача архаизмов в переводе

аффикс пĕлтерĕшне сăмахпа палăртни передача значения аффикса словом
ăнлава аталантарса куçарни смысловое развитие при переводе
буквализм буквализм
вариантлă тӳркилӳсем вариантные соответствия
вĕренӳ куçарăвĕ учебный перевод
вĕçе-вĕç куçару последовательный перевод
вырăнти колорит местный колорит
географи ячĕсене куçарасси передача географических названий при переводе
глаголăн вид пĕлтерĕшне куçарса каласси передача видового значения глагола
грамматика трансформацийĕ грамматическая трансформация
грамматика ылмаштарăвĕсем грамматические замены
денотат денотат
денотат пĕлтерĕшĕ денотативное значение
диалект сĕмне сĕвĕртни нейтрализация диалектной окраски
диалектизмсене куçарасси передача диалектизмов в переводе
драматурги произведенийĕсене куçарасси перевод драматических произведений
жанртан килекен куçару уйрăмлăхĕсем жанрово обусловленные особенности перевода
закономерлă тӳркилӳсен теорийĕ теория закономерных соответствий
икĕ енлĕ куçару двусторонний перевод
илемлĕ текста куçарасси художественный перевод
информаци тексчĕсене куçарасси перевод информационных текстов
истори колоритне сĕвĕртни нейтрализация исторического колорита
компенсаци мелĕ прием компенсации
коннотаци коннотация
коннотаци пĕлтерĕшĕ коннотативное значение
контекст условийĕсем условия контекста
контекстран килмен тӳркилӳ внеконтекстуальное соответствие
контекстри ăнсăрт пĕлтерĕшсем окказиональные (случайные) контекстуальные значения
контекстри пĕлтерĕшсене куçарса каласси передача контекстуальных значений в переводе
контекстри çирĕпленнĕ пĕлтерĕшсем узуальные (повторяющиеся) контекстуальные значения
контекстри тӳркилӳсем контекстуальные соответствия
культурăпа истори реалийĕсем культурно- исторические реалии
куçарăвăн лингвистика теорийĕ лингвистическая теория перевода

куçарăвăн литературоведени теорийĕ литературоведческая теория перевода

куçарăвăн пайăр методики конкретная методика перевода

куçарăвăн уйрăм (пайăр) теорийĕ частная теория перевода

куçарăвăн пĕтĕмĕшле закономерноçĕсем общие закономерности перевода

куçарăвăн прагматика аспекчĕ прагматический аспект перевода

куçарăнаслăх теорийĕ теория переводимости

куçарăнман идиомăсем непереводимые идиомы

куçарăнмаслăх теорийĕ теория непереводимости

куçарнă текст переведенный текст, текст перевода

куçару адекватлăхĕ (танпахалăхĕ) адекватность перевода

куçару анализĕ анализ перевода

куçару вариантĕ вариант перевода

куçару единици единица перевода

куçару ĕçĕ переводческая деятельность

куçару историйĕ история перевода

куçару йăнăшĕсем ошибки перевода

куçару критики критика перевода

куçару мелĕсем приемы перевода

куçару меслечĕсем способы перевода

куçару методики методика перевода

куçару пĕлĕвĕ переводоведение

куçару пособийĕ пособие по переводу

куçару правилисем переводческие правила

куçару практики практика перевода

куçару принципĕсем принципы перевода

куçару словарĕсем переводные словари

куçару теорийĕ теория перевода, переводоведение

куçару чĕлхи (КЧ) язык перевода (ЯП)

куçару чĕлхин нормисене пăсни нарушение норм языка перевода

куçару эквиваленчĕсем переводческие эквиваленты

куçару экспериментчĕ переводческий эксперимент

куçарура модаллĕхе сыхласа хăварасси передача модальности в переводе

куçарура сăмах пĕлтерĕшне ваклани дробление (дифференциация) значения слова при переводе

куçарури илемлетӳ приукрашивание в переводе

куçарури йышăну заимствование при переводе

куçарури калькăлав калькирование при переводе

куçарури пайăрлату конкретизация при переводе

куçарури пĕтĕмлетӳ генерализация при переводе

куçарури пысăк йăнăш грубая ошибка, ляпсус в переводе

куçарури çухатусем утраты при переводе

куçарури çухатусене саплани (компенсацилени) компенсация потерь в процессе перевода
куçарури трансформацисем переводческие трансформации
куçарури хăйирĕклĕх переводческий произвол
куçарури хушăмсем добавления в переводе
куçарури шухăш тĕрĕслĕхĕ смысловая точность перевода
куçарури ылмаштарусем замены в переводе
куçаруçă, тăлмач переводчик
«куçаруçăн суя тусĕсем» «ложные друзья переводчика»
лексика трансформацийĕ лексическая трансформация
лексика ылмаштарăвĕсем лексические замены
машина куçарăвĕ машинный перевод
модаллĕх çухални утрата модальности
морфема шайĕнчи куçару перевод на уровне морфем
наука текстĕсене куçарасси перевод научных текстов
наци реалийĕсем национальные реалии
номенклатура ячĕсене куçарасси перевод номенклатурных названий
общество-политика текстĕсене куçарасси перевод общественно-политических текстов
описаниллĕ куçару описательный перевод
оригинал оригинал
оригинал чĕлхи (ОЧ) язык оригинала, исходный язык (ИЯ)
пайăр ятсене куçарса каласси передача собственных имен при переводе
пайăр ятсене чăвашла çырасси чувашское оформление собственных имен
пăхăнуллă предложение сăмах çаврăнăшĕпе куçарни передача придаточного предложения оборотом
перифраза перифраза
перифразăлла куçару перифрастический перевод
пĕлтерĕш йăнăшĕ смысловая ошибка
пĕлтерĕш компоненчĕ çухални утрата семантического компонента
пĕлтерĕш туллимарлăхне саплани восполнение семантической неполноты
«пĕлтерĕшлĕ» пайăр ятсене куçарасси передача характеризующих собственных имен
пĕлтерĕшсене пайăрлатса куçарни конкретизация значений при переводе
пĕлтерĕшсене пĕтĕмлетсе куçарни генерализация значений при переводе
пĕлтерĕшсене уйăрса куçарни дифференциация значений при переводе
пĕр енлĕ куçару односторонний перевод
пĕтĕмĕшле куçару теорийĕ общая теория перевода
пĕтĕмĕшле ылмаштару мелĕ прием целостного преобразования

подлинник подлинник
подлинник текст текст подлинника
подлинник чĕлхи язык подлинника
подлинника пăсса куçарни искажение подлинника при переводе
подлинникăн автор уйрăмлăхĕсем индивидуально-авторские особенности подлинника
подлинникăн наци уйрăмлăхĕсем национальные особенности подлинника
подлинникăн стиль уйрăмлăхĕсем стилистические особенности подлинника
подлинникăн чĕлхе уйрăмлăхĕсем языковые особенности подлинника
подлинникăн экспресси уйрăмлăхĕсем экспрессивные особенности подлинника
подстрочник подстрочник
подстрочниклă куçару перевод с подстрочником
поэзи куçарăвĕ поэтический перевод, перевод поэзии
поэзиллĕ куçару поэтический перевод, перевод стихами
предложени пайĕсене куçарса лартни перестановка частей предложения
предложени шайĕнчи куçару перевод на уровне предложений
предложенисене куçарса лартни перестановка предложений
предметлă ситуаци предметная ситуация
проза куçарăвĕ прозаический перевод, перевод прозы
прозăллă куçару прозаический перевод, перевод прозой
произведенин идея тĕллевлĕхĕ идейная установка произведения
профессионал куçарăвĕ, профессилле куçару профессиональный перевод
профессионал куçаруçă переводчик-профессионал
профессионализмсене куçарасси передача профессионализмов в переводе
пуплев пайĕсене ылмаштарни замены частей речи
пытарăнчăк шухăш подтекст
референт референт
референт пĕлтерĕшĕ референциальное значение
сасă янравлăхне упраса хăварасси передача звукописи при переводе
сăвăллă куçару стихотворный перевод
сăлтава следствипе ылмаштарни замена причины следствием
сăмах вăййине куçарса каласси передача игры слов в переводе
сăмах вĕççĕн куçару устный перевод
сăмах йĕрки тӳр килменни несовпадение порядка слов
сăмах майлашăвĕ шайĕнчи куçару перевод на уровне словосочетаний

сăмах майлашăвĕсене куçарса лартни перестановка словосочетаний
сăмах пĕлтерĕшĕ контекстра уçăлни контекстуальное раскрытие значения слова
сăмах пĕлтерĕшне аффикспа палăртни передача значения слова аффиксом
сăмах формисене ылмаштарни замены форм слова
сăмах шайĕнчи куçару перевод на уровне слов
сăмахăн сăнарлă пĕлтерĕшне куçарса каласси передача образного значения слова при переводе
сăмахăн шалти формине сыхласа хăварни сохранение внутренней формы слова
сăмахпа каламан семантика компонентне хушни добавление формально невыраженного семантического компонента
сăмахпа окказилле усă курни окказиональное употребление слова
сăмахсен çыхăнаслăхĕ пĕр килменни несовпадение сочетаемости слов
сăмахсен тулаш пĕрпеклĕхĕ внешнее сходство слов
сăмахсене куçарса лартни перестановка слов
сăмахçемĕн куçару дословный перевод
сăнавлăх куçару экспериментальный перевод
сăнарлăх çухални утрата образности
сăнарлăха улăштарни изменение образности
сегментлав сегментация
семантика саплавĕ (компенсацийĕ) семантическая компенсация
семантика компоненчĕ хушни добавление семантического компонента
семантика компоненчĕсене чакарни сокращение семантических компонентов
семантика трансформацийĕ семантическая трансформация
семантика тӳркилĕвĕ семантическое соответствие
сигнификат пĕлтерĕшĕ сигнификативное значение
синонимла ылмаштарусем синонимические замены
синтаксис буквализмĕ синтаксический буквализм
синтаксис структурин элеменчĕсене ылмаштарни замена структурно-синтаксических элементов
предложени членĕсене ылмаштарни замена членов предложения
синтаксис структурине çĕнĕлле йĕркелени перестройка синтаксической структуры
синтаксис трансформацийĕ синтаксическая трансформация
синхронлă куçару синхронный перевод
словарьти куçару словарный перевод
словарьти тӳркилӳ словарное соответствие

союзлă çыхăнăва союзсăррипе ылмаштарни замена союзной связи бессоюзной
стандартлă сăмах майлашăвĕсем стандратные словосочетания
стиль контрасчĕ стилистический контраст
стиль сĕмĕ çухални утрата стилистической окраски
стиль сĕмĕ тӳр килменни несовпадение стилистической окраски
стиль улшăнăвĕсем стилистическая модификация
стиль хăйевĕрлĕхĕ стилевое своеобразие
суя эквивалентсем ложные эквиваленты
çăмăллатнă куçару адаптированный перевод
çутçанталăкпа географи реалийĕсем природно-географические реалии
çывăх пĕлтерĕшлĕ куçару приблизительный перевод
çын ячĕсене куçарса каласси передача личных имен при переводе
çырулла куçару письменный перевод
танлаштарулла стилистика сопоставительная стилистика
танлаштарулла типологи сопоставительная типология
тăлмач см. куçаруçă
творчествăлла куçару творческий перевод
текст авторĕ автор текста, отправитель
текст сегменчĕ сегмент текста
текст содержанийĕ содержание текста
текст содержанине сăнласа пани воспроизведение смыслового содержания текста
текст содержанийĕпе формин пĕрлĕхĕ единство содержания и формы текста
текст шайĕнчи куçару перевод на уровне текста
текст элеменчĕсене куçарса лартни перестановки элементов текста
текста ирĕклĕ каласа пани вольное переложение текста
текста хĕсни компрессия текста
текстăн илемлĕх хăйевĕрлĕхĕ художественные особенности текста
текстăн сăнарлăх тытăмĕ образная структура текста
терминсене куçарасси передача терминов в переводе
тĕп сăмах ключевое слово
трансформациллĕ куçару трансформационный перевод
тулли мар эквивалентлăх частичная (неполная) эквивалентность
тулли мар эквивалентсем частичные (неполные) эквиваленты
тулли эквивалентлăх полная эквивалентность
тулли эквивалентсем полные эквиваленты
тӳнтерле трансформаци обратная трансформация
тӳрĕ трансформаци прямая трансформация
тӳрккес пуплеве куçарасси передача просторечия в переводе

туртен куçару буквальный перевод
тӳртенлĕх буквализм
фон пĕлӳлĕхĕ çуккине саплани компенсация отсутствия фоновых знаний
фонема (графема) шайĕнчи куçару перевод на уровне фонем (графем)
форма тӳркилĕвĕсем формальные соответствия
формализмла куçару формалистический перевод
фразеологизм пĕлтерĕшне куçарса калани смысловая передача фразеологизма
фразеологизма сăмахçемĕн куçарни дословный перевод фразеологизма
фразеологизма фразеологизмпа куçарни перевод фразеологизма фразеологизмом
функци тӳркилĕвĕ функциональное соответствие
хаçат куçарăвĕ газетно-публицистический перевод
чĕлхе кăлтăкĕсем языковые погрешности
чĕлхе мелĕсен форма танхаклăхĕ формальная равноценность средств языка
чĕлхе мелĕсен функци танхаклăхĕ функциональная равноценность средств языка
чĕлхе çыхăнăвĕсен традицийĕ традиция языковых контактов
чĕлхе тулашĕнчи контекст экстралингвистический контекст
чĕлхе формине сыхласа хăварни копирование языковой формы
чĕлхесем хушшинчи тӳркилӳсем межъязыковые соответствия
чĕлхесен грамматика уйрăмлăхĕсем грамматические расхождения между языками
шухăша пĕтĕмĕшле куçарни целостное переосмысление при переводе
ытлă семантика компоненчĕсене куçарманни опущение семантически избыточных компонентов
эквивалентлă тӳркилӳсем эквивалентные соответствия
эквивалентлă ылмаштарусем эквивалентные замены
эквивалентлăх (танвалентлăх) эквивалентность
эквивалентсăр лексика безэквивалентная лексика
экзотизмсене куçарасси передача экзотизмов в переводе
экспресси тӳр килменни несовпадение экспрессии
экспрессие пайăрлатса куçарни экспрессивная конкретизация при переводе
ют сăмаха ăнлантарса пани пояснение к иноязычному слову
ют сăмаха транскрипцилени передача иноязычного слова транскрипцией
ют сăмаха транслитерацилени передача иноязычного слова транслитерацией
ют синтаксис структурисем чуждые синтаксические структуры

УСА КУРМАЛЛИ ЛИТЕРАТУРА

Тĕп список

Бархударов Л. С. Язык и перевод: Вопросы общей и частной теории перевода. М.: Междунар. отношения, 1975.

Виноградов В. С. Лексические вопросы перевода художественной прозы. М.: Изд-во МГУ, 1978.

Владимиров Е. В. Межнациональные связи чувашской литературы. Чебоксары, 1970, с. 43—131.

Комиссаров В. Н. Слово о переводе: Очерк лингвистического учения о переводе. М.: Междунар. отношения, 1973.

Крупнов В. Н. В творческой лаборатории переводчика: Очерки по профессиональному переводу. М.: Междунар. отношения, 1876.

Петров Н. П. Чăваш литература чĕлхин историйĕ. Яковлевченхи тапхăр: Вĕренӳ пособийĕ. Шупашкар, 1978.

Рецкер Я. И. Теория перевода и переводческая практика: Очерки лингвистической теории перевода. М.: Междунар. отношения, 1974.

Федоров А. В. Основы общей теории перевода: Лингвистические проблемы. М.: Высш. школа, 4-е изд., перер. и доп., 1983.

Чĕлхе культурин ыйтăвĕсем. 3-мĕш кĕнеке: Куçару чĕлхи. Шупашкар, 1974.

Юмарт Г. Ф. Илемлĕ литературăна чăвашла куçарас ĕçĕн паянхи çивĕч ыйтăвĕсем. — Çак кĕн.: Чĕлхе культурин ыйтăвĕсем. Шупашкар, 1981, 3—47 с.

Хушма список

Вопросы теории перевода в зарубежной лингвистике. М.: Междунар. отношения, 1978.

Гачечиладзе, Гиви. Художественный перевод и литературные взаимосвязи. 2-е изд. М.: Сов. писатель, 1980.

Мастерство перевода: Сборники статей. М.: Сов. писатель (издаются с 1958 г.).

Миньяр-Белоручев Р. К. Общая теория перевода и устный перевод. М.: Воениздат, 1980.

Тетради переводчика: Сборники статей. М.: Междунар. отношения (издаются с 1963 г.).

Швейцер А. Д. Перевод и лингвистика: О газетно-информационном и военно-публицистическом переводе. М.: Воениздат, 1973.

Чуковский К. И. Высокое искусство: О принципах художественного перевода. М.: Искусство, 1964.

Юмарт Г. Ф. Революциччен чăвашла куçарнă поэзи. — Çак кĕн.: Чувашский язык, литература и фольклор. Чебоксары, 1974, вып. 4, с. 137—180.

ТУПМАЛЛИ

Умсăмах 3

I СЫПАК. Куçарупа унăн теорийĕн кĕске историйĕ 7
1. Куçару Хĕвеланăç Европăра тата Российăра аталанни . . 7
2. Чăваш çĕршывенче куçару пуçланса аталанни 10
3. Яковлев тапхăрĕнчи куçару аталанăвĕ 16
4. Совет саманинчи куçару ĕçĕ 22

II СЫПАК. Куçарăван петĕмĕшле семантика ыйтăвĕсем . . 25
1. Куçару тупсăмĕ тата унăн тĕсĕсем 25
2. Тăнпаха (адекватлă) куçару тата эквивалентлах ыйтăвĕ . . 29
3. Сăмах пĕлтерĕшĕн тĕсĕсем тата куçару 33

III СЫПАК. Куçарăван лексикăпа фразеологи ыйтăвĕсем . . . 39
1. Эквивалентла сăмахсемпе вариантлă тăркилăсем 39
2. Лексика трансформацийĕсен тĕсĕсем 44
3. Пайăр ятсене куçарассин уйрăмлăхĕсем 52
4. Фразеологи материалне куçарасси 59

Хушса панисем 64
I. Докладсемпе рефератсен темисем 64
II. Пирвайхи чăваш куçарăвĕсен тĕслĕхĕсем 70
III Куçару ĕçĕн терминĕсем 72
Усă курмалли литература 80

Михаил Иванович СКВОРЦОВ

ТЕОРИЯ И ПРАКТИКА ПЕРЕВОДА
С РУССКОГО ЯЗЫКА НА ЧУВАШСКИЙ

Учебное пособие

Ответственный за выпуск *М. М. Федорова*

Сдано в набор 22.11.84. Подписано к печати 14.12.84. Формат 60×90/16. Бумага газетная. Литературная гарнитура. Высокая печать. Усл. п. л. 5. Уч.-изд. л. 5. Заказ № 1407 Тираж 1000 экз. Цена 25 к.

Редакционно-издательский отдел
Чувашского государственного университета им. И. Н. Ульянова.

Типография Чувашского государственного университета им. И. Н. Ульянова,
Чебоксары, Московский пр., 15.

25 шус